

# ЯЛАВ

№ 10 ОКТЯБРЬ 1954

# Ылтăн кĕркунне

«Кĕрпе кĕре танлаштарма çук»,— тенĕ ваттисем. Кăна ĕнтĕ тĕрлĕ çул тĕрлĕ çанталăк килнĕрен, тырпул пĕр пек пулманран каланă. Анчах пирĕн саманари çынсем çав сăмахсене пачах урăхла пĕлтерĕшпе калаççĕ. Пирĕн вăхăтри кĕркуннесем, чăнах та, хамăр вăй хурса, тăрăшса ĕçленипе çулсеренех улшăнса пыраççĕ: пĕлтĕр тулăх пулчĕ пулсан, кăçал унран та тулăхрах, çитес çул тата пуянрах. Мĕншĕн тесен çутçанталăк вăйне эпир хамăра пăхăнтарма вĕренсе пыратпăр.

Республикăра кăçал тĕштырăсемпе ытти культурăсем кăна мар, пахча çимĕçпе улма-çырла та ăнса пулчĕç. Акă, Калинино районĕнчи «Победа» колхоз садĕнчи панулмисене кăна пăхăр-ха (çӳлти ӳкерчĕк). Кашни улми— пĕр ылтăн!





Кĕрхи тулăх кĕрекене кăпăш хăпарту каса-каса хунипех илем кĕртни сахал вăл. Йĕс сăмавар е пăхăр электрочейник сывăхĕнче чашки-чашки тутлă панулми те, çупкăм-çупкăм пылак çырли те, сапакĕ-сапакĕ сиплĕ виноградĕ те пулмаллах! Ăстан ку таврара виноград ӳстĕр?—тейĕç хăшĕсем. Пирĕн республикăра та чылай çĕрте виноград ӳсет. Хăвăрах куратăр (иккĕмĕш ӳкерчĕк), ăна Советски районĕнчи паллă мичуринец Н. С. Усов хăйĕн пахчинче ӳстернĕ. Сапакĕ те шултра, тути те пылак. Ашă кăмăлпа çапла калас килет: «Килĕрех, килĕр, маларах иртĕр, хĕвеллĕ кăнтăр хăнисем. Кашни колхоз садĕнче ӳсе, кашни колхозник кĕрекинче вырăн йышăнма çăмăл пултăр!»

Г. Зиньковпа Ф. Иванов фотоӳкерчĕкĕсем.

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# ЯЛАВ

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ КĂЛАРАКАН
ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ОБЩЕСТВĂЛЛА-ПОЛИТИКĂЛЛА ЖУРНАЛ

№ 10 (106)
ОКТЯБРЬ
1954

# ÇĔНĔ КИТАЙ

Октябрĕн малтанхи кунĕ... Ку вăхăта Китайра «шурă сывлăм» вăхăчĕ теççĕ. Анчах пурнăç календаре улăштарчĕ. Кăçалхи кĕр Китай çĕрĕ çине çурхи савăнăç илсе килчĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче Аслă Китай халăхĕ хăйĕн наци уявне пысăк савăнăçпа уявларĕ.

Китай Халăх Республикине туса хунăранпа пилĕк çул çитрĕ. Çак куна Китай халăхĕпе пĕрле совет çыннисем, халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем, ирĕке юратакан пĕтĕм малта пыракан этемлĕх палăртрĕç.

Китай халăхĕн мухтавлă уявĕ Китайшăн çав тери паллă, историлле кунсенче иртрĕ. Нумаях пулмасть Пĕтĕм Китайри халăх представителĕсен пухăвĕ Китай Халăх Республикин Конституцине йышăнчĕ. Çак Конституци Китай халăхĕн темиçе ĕрăвĕ ĕмĕтленнĕ ĕмĕте çитерчĕ, вăл революцин аслă çĕнтерĕвĕсене, мирлĕ ĕçре тунă малтанхи çитĕнӳсене çирĕплетрĕ, вăл Китайра социализмла общество тумалли çула кăтартса пачĕ.

Халăх революцийĕ çĕнтернине пула Китайра халăх влаçĕ çирĕпленчĕ. Халăх демократи государстви пулса тăчĕ, ăна рабочи класс ертсе пырать, унăн никĕсĕ—рабочисемпе хресченсен союзĕ. Китайăн нумай ĕмĕрхи историйĕнче Китай ĕçсыннисем малтанхи хут хăйсен кун-çулне хăйсен аллине илчĕç, хăйсен çĕршывĕн чăн-чăн хуçисем пулса тăчĕç.

Çĕр реформи тусаирттерни Китайри пысăк демократилле улшăну пулчĕ. Çак реформăна пула çĕр помещиксен аллинче тăнине пĕтернĕ, помещиксен çĕрне чухăн, çĕрсĕр хресченсене валеçсе панă. Ялхуçалăхĕ çĕкленсе пырать. Хресченсем производствăлла кооперативсене пĕрлешеççĕ. Кăçал çĕршывра ялхуçалăхĕнчи производствăлла кооперативсем 100 пине çитнĕ.

«Китай никама пăхăнман, ирĕклĕ, демократиллĕ, пĕрлĕхлĕ çĕршыв пулса тăмасан,—тесе çырнă Мао Цзедун 1945 çулта,—Китайра промышленноçа вăйлатма май çук».

Халĕ ĕнтĕ Китай никама пăхăнман, ирĕклĕ, демократиллĕ, пĕрлĕхлĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Вăл индустриллĕ çĕршыв, социализмла çĕршыв пулса пырать!

Халăх государстви промышленноçăн пысăк предприятийĕсене, транспорта, çыхăну хатĕрĕсене, банксене, çĕр айĕнчи пурлăхсене, вăрмансене тата ытти пуянлăхсене национализацилерĕ, халăх хуçалăхĕнче социализмла сектор никĕсне хыврĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Китай халăхĕ темиçе пилĕкçуллăх хушшинче хăйĕн çĕршывне хăватлă социализмла держава туса хурас задача лартрĕ. Çак аслă программа ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать. Çĕршер пысăк промышленность предприятийĕ тума палăртнă, вăл шутра 141 пысăк предприяти Совет Союзĕ пулăшнипе тăваççĕ; промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсене тума тытăннă. Халех ĕнтĕ промышленность продукцийĕ, акса тăвакан тĕштырăпа техникăла культурăсен хисепĕ Китайра нихçан пулман шая çитрĕ.

Халăх влаçĕ пулнăранпа ĕçсыннисен пурнăçĕ чылай лайăхланчĕ. Сакăр сехетлĕ ĕç кунĕ тунă, рабочисен реальнăй ĕç укçи, хресченсен тупăшĕсем ӳссе пыраççĕ.

Китайра культурăлла революци сарăлса пырать. Коммунистсен партийĕпе Халăх правительстви вĕренме, çутта тухма, культурăна алла илме туртăнакан халăха мĕн кирлине пурне те туса пама тăрăшаççĕ.

«Халĕ пирĕн çĕршывра,— тет писатель Ба Цзинь,— кашни мăшăр алă ĕçлет, кашни пуç шухăшлать, кашни чĕрере тулли савăнăç».

Социализмшăн пыракан кĕрешӳре Китай халăхне нумай йывăрлăхсем çĕнтерме тивет: шалти контрреволюцие путарас пулать, тулашри тăшмансем тапăннине сиресире ярас пулать. Анчах истори çакна кăтартса парать: Китай халăхĕн иксĕлми вăйĕ кирек мĕнле йывăрлăха та, кирек мĕнле тăшмана та çĕнтерет.

Тунă çитĕнӳсемпе савăнса, аслă малашлăхпа хавхаланса Китайри рабочисемпе хресченсем, арçынсемпе хĕрарăмсем, Китайăн паттăр çамрăкĕсем хăйсен тăван çĕршывĕнче социализмла общество туса хурассишĕн çирĕп шанчăкпа çине тăрса кĕрешеççĕ. Çак аслă кĕрешӳре вĕсене Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем пур енĕпе те пысăк пулăшу параççĕ. Совет çыннисем Китай халăхĕ хăйсен шанчăклă тăванĕ тата тусĕ пулнипе савăнаççĕ. Пирĕн аслă халăхсен туслăхĕ мирпе демократи лагерĕн никам çĕнтерейми вăйĕ пулса тăрать.

Китайра ылтăн кĕркунне. Уй-хирте вăйлă тырпул çитĕнет. Çакăнпа пĕрлех унта çĕнĕ çынсем çитĕнеççĕ. Ирĕке тухнă Китай хресченĕсем ирĕк çĕр çинче ĕçлесе тунă вăйлă тырпула пухма кĕреççĕ.

— Халĕ пирĕн килте икĕ савăнăç: Конституци тата вăйлă тырпул,—теççĕ Китай хресченĕсем.



Пĕтĕм Китайри халăх представителĕсен пухăвĕн пĕрремĕш сессине Китай Халăх Республикин Центральнăй Халăх Правительствин Председателĕ Мао Цзэ-дун уçрĕ.

# ПИЛĔК ÇУЛ

Нимĕç халăхĕ Германи Демократилле Республики пилĕк çул тултарнине уявларĕ. Германи историйĕнче малтанхи хут мире юратакан, демократилле государство тунă, вăл Европăри тата пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăç кун-çулĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Германи Демократилле Республикине туни Германире демократилле вăйсем ÿссе пынинчен килчĕ. Совет Çарĕ гитлерла фашизма çĕмĕрсе тăкнă хыççăн Германире мирлĕ ĕçе тытăнма лайăх майсем пулса тăчĕç. Çав майсемпе усă курса, Германи Демократилле Республикинчи ĕçсынниcем фашизма хирĕçле, демократилле государство тăвас ĕçе тытăнчĕç.

Пилĕк çул хушшинче Германи Демократилле Республики пысăк задачăсене татса пама, çĕршывăн сăн-сăпатне тĕпренех улăштарма пултарчĕ. Ĕлĕк вăрçă преступникĕсемпе шултра капитал аллинче тăнă предприятисене пĕтĕм халăх пурлăхĕ туса хунă. Халĕ кунта промышленность предприятийĕсен ытларах пайĕ халăх аллинче тăрать. Республикăра промышленность продукцийĕн чи пысăк пайне социализмла предприятисем кăларса тăраççĕ.

Ĕлĕк помещиксен аллинче пулнă çĕрсене виçĕ миллион гектар ытла çĕрсĕр тата сахал çĕрлĕ хресченсене панă. Юлашки çулсенче хресченсем хăйсен ирĕкĕпе производствăлла кооперативсем тунă, вĕсем темиçе пин шутланаççĕ. Производствăлла кооперативсене тата уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресченсене машина-трактор станцийĕсем пулăшса тăраççĕ.

Республикăра ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пырать. Ĕççĕрлĕхе пĕтернĕ, социалллă страховани тунă, çамрăксем пурте вĕренеççĕ.

Германи Демократилле Республики тĕнчери ытти çĕршывсемпе экономика тĕлĕшпе çыхăну тытас ĕç сарăлсах пырать. Вăл халĕ 54 çĕршывпа суту-илÿ тăвать.

Çак çитĕнÿсене пурне те мирпе демократи лагерĕ, чи малтан Совет Союзĕ, ырă кăмăлпа пулăшса пынипе тунă.

Германи Демократилле Республикинчи ĕççыннисем хăйсен республики пилĕк çул тултарнине Германи историйĕн ответлă тапхăрĕнче кĕтсе илчĕç. Нимĕç халăхĕ умĕнче Германи ыйтăвне мирлĕ, демократилле йĕркепе татса парас задача тăрать. Хĕвеланăç Германире, тĕрлĕ плансем туса, Германи милитаризмне чĕртсе тăратма, Хĕвеланăç Германие вăрçă блокĕсене кĕртме хăтланаççĕ. Нимĕç халăхĕ çак плансене йышăнмасть. Вăл Германи ыйтăвне мирлĕ татса парассишĕн, пĕтĕм Германие демократилле, мире юратакан пĕр государствăна пĕрлештерессишĕн кĕрешет, çак кĕрешÿре ăна мире юратакан пĕтĕм этемлĕх пулăшса пырать.

## Эп Мускав енне пăхатăп

**Тянь Цзянь**

Эп Мускав енне пăхатăп
Аякран,
Юратса ăна мухтатăп
Эп чунтан:
Тĕнчене-çке çутатаççĕ
Аслă Кремль çăлтăрĕсем,
Кĕрешмешкĕн вăй параççĕ,
Çĕнтерме халал яраççĕ,
Чăн телей пире сунаççĕ
Туслă Кремль çăлтăрĕсем.
Мускавран Пекин инçе пит:
Километрсен хисепĕ
Темиçе пинрен иртет.
Пурпĕрех Мускав сассийĕ,

Ун нихçан сÿнми çуттийĕ
Пекина çитет,
Пирĕн халăх кăмăлне вăл,
Ун мĕльюнлă чĕрине вăл
Çĕнĕ вăй кĕртет.
Мускавран Пекин инçе те,
Пурпĕр çул пĕрре вĕçен:
Кăнтăрла та, сĕм-çĕрле те
(Калăн—вичкĕн çĕмĕрен)
Çав çулпа иртсе çÿреççĕ
Поездсем халь кунсерен,
Мускавран телей кÿреççĕ,
Мускава—салам пиртен!

## Ялуцзян çинче—хĕрлĕ ялавсем

**Гао Лань**

Лайăх юханшыв вăл—Ялуцзян!
Унăн ик енче те—çарансем,
Ялкăшаççĕ ирĕклĕн паян
Аслă çĕнтерÿ ялавĕсем.

Лайăх юханшыв вăл—Ялуцзян!
Сылтăм ен—Китайăн çĕрĕсем,

Сулахай енче каяççĕ ян та ян
Тăванла Корея юррисем.

Ким Ир Сен ялавĕ ялкăшать,
Саламлать ăна Китай ялавĕ.
Икĕ туслă халăх тăрăшать—
Сарăлать вĕсен ĕçри мухтавĕ.

## Çĕнĕ Китай хĕвелĕ

**Ван Ши-тянь**

Çулçăсем саралчĕç садсенче,
Куракăсем те сарă ту çинче.
Пас ÿкет ир-кăçăн çул çине,—
Сивĕтет çанталăк кĕр енне.
Кăнтăрла пулсассăн, пурпĕрех
Ăшăтса ярать хĕвел çĕре.
Пирĕн çут хĕвел—коммунистсем,
Çивчĕ куçлă, харсăр паттăрсем:

Вĕсем сирчĕç тĕксĕм тĕтрене,
Çутă çул кăтартрĕç тĕнчене.
Çав хĕвел тухсан, кашни ялтах
Ÿкнĕ пас та ирĕлчĕ йăлтах.
Ку хĕвел нихçан та сÿнес çук!
Кĕр е хĕл çĕре тек шăнтас çук,
Çĕршыва хуплаймĕ тек тĕтре,—
Çĕн Китай хĕвелĕ тÿпере!

## „Доброволецсен маршĕ“

**Тянь Хань**

Ку сăвă Китайра вăрçă пынă чух Китай çарĕн воинĕсен юратнă юрри пулнă. Халĕ вăл Китай Халăх Республикин гимнĕ.

Çĕклен,
Кам кураймасть чуралăха!
Харсăр çынсем çеç çăлĕç халăха.
Тăван çĕршывăн сапăçма,
Китайшăн тăшманпа вăрçма
Çĕклен!
Çĕклен!
Çĕклен!
Ан тив—
Кĕрлетĕр аслати
тавра.
Эпир çĕнтерĕпĕр çапăçура!
Янратăр пирĕн çак йыхрав
куллен:
Çĕклен!

Çĕклен!
Çĕклен!
Эпир—нумай мĕльюнлă вăйхăват,
Пурин те пирĕн—
Пĕр чĕре, пĕр юн.
Пĕр çĕкленсессĕн темĕн те
тăвать.
Хăрушлăхран
Ним хăраман
Мĕльюн.
Вут-çиçĕм витĕр утăмла
Малалла!
Малалла!
Малалла!

## Çĕр—манăн анне

**Го Мо-жо**

*Пĕтĕм тĕнчери Сталинла премии лауреачĕ*

Аннеçĕм—çĕр!
Тул çутăлса килсессĕн
Мана хуллен вăрат та эсĕ
Хавасласх сачĕ тăрăх ертсе кай.

Аннеçĕм—çĕр!
Мана пăхса ÿстертĕн,
Çын турăн эс, телей пиллерĕн,—
Мĕнпе сана халь манăн тав
тăвас?

Аннеçĕм—çĕр!
Эс шавлă тинĕс кĕввине
Салатрăн пĕтĕм тĕнчене,
Ман чĕрене çав юрăпа тултартăн.

Аннеçĕм—çĕр!
Эп лармăп, лармăп ĕçсĕр,—
Эп юрлăп, юрлăп, юрлăп вĕçсĕр
Сана чунтан хам юратни çинчен.

Аннеçĕм—çĕр!
Эп ăмсанап хресченсене.
Вĕсем параççĕ çăкăр тĕнчене,
Çĕр хăй те вĕсене савать ачашшăн.

Аннеçĕм—çĕр!
Эп ăмсанап рабочи-халăха.
Вĕсем чаваççĕ кăмрăк-пурлăха,
Ăна вĕсем пире валли-çке
кăлараççĕ.

Аннеçĕм—çĕр!
Халь лайăх эп пĕлетĕп:
Эс ман анне пулан—сисетĕп.
Эп шыв ĕçни вăл—сан сĕтне
ĕçни.

Аннеçĕм—çĕр!
Тавра хисепсĕр сас-чĕусем,
Йăлтах сан юррусем вĕсем,
Ман чунăма вĕсем лăпкаççĕ
ăшшăн.

Аннеçĕм—çĕр!
Сан илемĕ вăл—санăн кăмăлу,
Ялан çĕмçе сан ывăнми аллу,
Мана хулран вăл ачашлать
йăвашшăн.

Аннеçĕм—çĕр!
Ман чунăм ĕмĕр санпала,
Эп çирĕп пулăп чунпала,
Сан кăмăлна ялан эп тивĕç
пулăп.

Аннеçĕм—çĕр!
Эс маншăн—чун ытарайми.
Вĕренĕп ĕçлеме ырми-канми—
Санран вĕренĕп, ман Тăван
çĕршывăм!

Н. ЕВСТАФЬЕВ куçарнă.

## Улăп вăйĕ

**Макс Циммеринг**

Шур çеçкеллĕ улмуççийĕ
юр пек тăкăнать пулсан,
сенкер тăрă тÿпе çийĕн
кăвакарчăн ярăнсан,
юрăпа тулчĕ пулсассăн
çут хĕвеллĕ çĕн хула,
хĕрлĕ ялав пек хавасллăн
вĕлкĕшсен пирĕн ялав,
туслăх юррине пĕр саслăн
пурнăç ĕнерет пулсан,—
çав хорта эс те мăнаçлăн
вăйлă улăп пек тăран!

Мирпеле чăн ĕç кĕввийĕ,—
вăл пур кĕвĕрен хитре,—
çÿлĕ Бранденбург хапхийĕ
урлă касрĕ те пире
тепĕр хут тусла ал пачĕ,
чĕнчĕ çирĕпрех пулма,
çĕнĕрен хавхалантарчĕ
ирĕк пурнăçшăн тăма!

Пĕрĕнте вăл çут пуласлăх,
Уртăрах ирсĕр тăшман.
Вĕлкĕшет ялав мăнаçлăн,
вăл тек усăнмĕ нихçан.
Ак, туссем, пĕр сас кĕрлерĕ:
Эпир миршĕн яланах!
Мир усал вăя çĕнтерĕ,
Мир парать пире çунат!



# Ачасен туслăхĕ

...Ун чухне Китай ачисем патне çыру çырма кам сĕннине халь никам та астумасть ĕнтĕ. Шупашкарти çамрăк натуралистсен станцинчи ачасем саламлă çырупа пĕрле Пекинри чугун çул работникĕсен шкулĕнчи ачасем патне посылкăпа чечек вăррисем ярса панăччĕ.

Çак ĕç суркунне пулса иртнĕччĕ.

Пĕррехинче республикăри çамрăк натуралистсен станцине çыру пырса пачĕç. Конверт çине «международное» тесе штамп çапнă. Китайри туссенчен килнĕ çыру Шупашкар пионерĕсене питĕ савăнтарчĕ.

«Эсир ярса панă чечексем пирĕн нихçан арканми аслă туслăха татах та çирĕплетеççĕ,—тесе çыраççĕ Пекинри чугун çул работникĕсен шкулĕнче вĕренекенсем.— Сирĕн чечексем, пирĕншĕн тăван çĕршыв евĕр хаклă Совет Союзĕнче ӳснĕ пекех, Китай çĕрĕ çинче те лайăх ешерсе чечекленĕç, пирĕн шкул пахчине илем кӳрĕç. Эпир хамăр шкула çав тери юрататпăр. Пирĕн халь çутă та пысăк шкулсем пур, Халăх правительстви пире спорт площадкисемпе стадионсем туса пачĕ. Вĕрен, тăрăш, çĕршывшăн усăллă çын пул. Эпир пурте шкулта тăрăшса вĕренетпĕр, сирĕн пекех телейлĕ те савăнăçлă ӳсетпĕр.

Совет Союзĕнчи хаклă туссем! Эпир сирĕнпе çыхăну тытма шутлатпăр, пирĕн пата хăвăр шкул пурнăçĕпе хăвăр мĕнле вĕренни çинчен çырса пĕлтерме ыйтатпăр. Лайăх туссем пуласса чунтанах шанатпăр».



Римма Иванова, Галя Молякова, Зоя Егорова çулла çырла пухаççĕ.



Пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулти Тамара Степанова хăй лартса ӳстернĕ чечек тĕмĕ патĕнче.



Иван Васильевич Гладышев çамрăк натуралистсене пыл хурчĕсене хĕле мĕнле хатĕрлемелли çинчен ăнлантарса парать.

Шупашкарти пионерсемпе Пекинри чугун çул работникĕсен шкулĕнче вĕренекенсен туслăхĕ çакăнтан пуçланнă та ĕнтĕ, икĕ аслă çĕршыв ачисем тăтăшах пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретеççĕ.

Китая ярса панă чечек вăрлăхне Шупашкарти пионерсем республикăри çамрăк натуралистсен станцийĕнче лартса ӳстернĕ. Çамрăк натуралистсен станцийĕ хăй ĕçне çулталăк тăршшĕпех туса пырать. Кунта цветоводсем те, пахчаçăсем те, ялхуçалăх механизаторĕсем те пур. Хĕлле ачасем ялхуçалăх ĕçĕсем çинчен лекцисем итлеççĕ, çывăхри колхозсемпе МТС-сене кайса çӳреççĕ, теплица хуçалăхĕпе тĕплĕн паллашаççĕ. Çулла вара çамрăк натуралистсен ĕçĕ татах та нумайланать. Вĕсем сурхи ăшă кунсем çитсенех вĕренӳпе опыт участокне ĕçлеме тухаççĕ. Пионерсем хăйсемех йăран туса хатĕрлеççĕ, улма-çырла йывăççĕсене тасатаççĕ, садри çулсене юсаççĕ.



Нина Никифорова чечек вăрри пухать.

Цветоводсене çамрăк натуралистсен станци директорĕ Серафима Семеновна Федотова ертсе пырать. Вăл пуçарнипе ачасем тĕрлĕрен опытсем иртереççĕ, ӳсентăран пурнăçне сăнаса вĕренеççĕ. Çу кунĕсене çамрăк натуралистсем кĕркуннех хатĕрленме пуçлаççĕ.

Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен Нина Никифорова чечексене çав тери юратса пăхса ӳстерет. Вĕсем Тамара Степановăпа туслă пурăнаççĕ, хăйсен ĕçĕсем çинчен яланах пĕрле сӳтсе яваççĕ. Кăçал çулла вĕсем 6-мĕш номерлĕ вăтам шкулти Надя Корниловăпа, Аля Окуневăпа çывăх туслашрĕç.

Пĕр кунхине Надьăпа Аля çамрăк натуралистсен станцине çав тери савăнса пырса кĕчĕç. Туссем хăйсен савăнăçне пĕр-пĕрне пӳлсех пĕлтерме васкарĕç. Вĕсене Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине кайма çирĕплетнĕ.

Республикăри çамрăк натуралистсен станцийĕнче тăватă секци ĕçлет. Уйрăмах сад секцинче, чечексем лартса ӳстерекен секцинче çамрăк натуралистсем йышлă ĕçлеççĕ.

Кĕрхи çăмăрлă кунсем çитрĕç. Çамрăк натуралистсем кĕрхи ĕçсене тăрăшсах туса пыраççĕ, вĕсем килес çулхи çуллана хатĕрленеççĕ.

Нумаях пулмасть Шупашкарти çамрăк натуралистсем Мускава фотоальбом ярса пачĕç. Унта вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне кăтартса панă.

Ф. Ивановпа А. Припалов фотоӳкерчĕкĕсем.



Пахча çимĕç секцинчи çамрăк натуралистсем çулла кишĕр йăранĕсене çумкурăксенчен тасатаççĕ.



Ираида Щепелева çамрăк натуралистсемпе улмуççи патĕнче заняти ирттерет.

## ӲССЕН ЭСĔ КАМ ПУЛАН?

Василий ДАВЫДОВ

Эпĕ ыйтрăм Лĕньăран:
«Ӳссен эсĕ кам пулан?»
Лĕня: «Летчик пулап,—тет,—
Самолетпа вĕçеп»,—тет.

Эпĕ ыйтрăм Тольăран:
«Ӳссен эсĕ кам пулан?»
Толя: «Токарь пулап,—тет,—
Машинсем юратап»,—тет.

Эпĕ ыйтрăм Павăлран:
«Ӳссен эсĕ кам пулан?»
Павăл: «Пахчаç пулап,—тет,—
Эп арбуз юратап»,—тет.

# КИНО КУРМА КАЙНИ



Чжан Цян-и

Сяо Хун травмай ҫине ларчӗ, вӑл «Пӗчӗк пахчаҫӑ» ятлӑ нумай тӗслӗ кинофильм курма каять.

Унӑн тусӗсем ҫак фильма пурте курнӑ ӗнтӗ—кӑҫал март уйӑхӗнче кӑтартнӑ ӑна. Анчах ҫав вӑхӑтра Сяо Хун сывӑ мар пулнӑ: ангинӑпа чирленӗ. Амӑшӗ, паллах, кино курма яман.

«Пӗчӗк пахчаҫӑ» ҫинчен тусӗсем калаҫнине Сяо Хун час-часах илтнӗ. Унӑн та ҫав фильма питӗ курас килнӗ. Анчах ӑна халь ӑҫта кӑтартни паллӑ мар. Сяо Хун ӗмӗтленнӗ, кӗтнӗ.

Акӑ, пӗррехинче,—шӑматкун—«Пӗчӗк пахчаҫӑ» фильма кӑтартасси ҫинчен хаҫатра пӗлтерӳ тухрӗ: вырсарникун, ирхи сеанс, 9 сехетре. Пӗр сеанс кӑна пулать.

Сяо Хунӑн ӗмӗчӗ ҫитрӗ! Халь ӗнтӗ амӑшӗ ӑна чармарӗ.

Вӑл трамвайра тӑрса пырать. Пичӗ хӗп-хӗрлӗ, тар тапса тухнӑ, хӑй пӑшӑрханса чӳрече витӗр пӑхать. Урамра нихӑҫанхинчен те шавлӑ. Трамвай васкамасӑр чупать. Шӑнкӑрав сасси:

«Ҫул парӑр, эй, ирттерсе ярӑрха!»—тенӗн туйӑнать.

«Тата виҫӗ тӗлте чарӑнмалла»,—шутларӗ Сяо Хун.

Пӗр хӗрарӑм Сяо Хуна аллинчен туртрӗ, юнашар пӗр вырӑн пушаннӑ мӗн. Сяо Хун, хӗрарӑм ҫине пӑхса, савӑнӑҫлӑн кулса илчӗ те ларчӗ. Ҫавӑнтах, хӑй ларнӑ вырӑнта, сӑран хупӑллӑ папка е, кӗнеке евӗрлӗ журнал-и вӑл, выртнине асӑрхарӗ. Ашшӗн те пур ун пекки. Анчах ку шупкасарӑ, хӑмӑр мар.

— Аппа, ку сирӗн пуль?—ыйтрӗ вӑл.

— Ман мар.

Сяо Хун журнала ҫӗклерӗ те кӑшкӑрма тытӑнчӗ:

— Камӑн? Камӑн?

Никам та йышӑнмасть.

— Леш ҫыннӑнах пуль. Вӑл тин ҫеҫ анса юлчӗ,—терӗ пӗри.

Ҫак вӑхӑтра хӑшпӗрисем чӳречерен кӑшкӑрма пуҫларӗҫ:

— Эй, юлташ, эсӗ япала ҫухатнӑ!.. Юлташ!

Сяо Хун та журнала чӳречерен кӑларса суллать.

— Пичче! Пичче!

Лешӗ илтмест. Хул хушшине хура портфель хӗстернӗ ҫын тротуар урлӑ каҫнӑ та ӗнтӗ. Вӑл, тем ҫинчен шухӑшланӑ пек, кӑшт чарӑнса тӑчӗ, вара каллех малалла утрӗ.

— Эпӗ кайса паратӑп!—терӗ Сяо Хун.

Кондуктор алӑка хупса ӗлкӗриччен вӑштик кӑна хӗсӗнсе тухрӗ те трамвай ҫинчен сиксе юлчӗ вӑл.

Трамвай тапранса кайрӗ. Чӳречерен темиҫен Сяо Хун ҫине пӑхса та илейменрӗҫ, трамвай урӑх урамалла пӑрӑнса кӗчӗ.

Сяо Хун, журнал тытса, урам хӗррипче тӑрать, чӗвен тӑрса пӑхкалать. Анчах леш ҫынна курмасть. Сылтӑмалла виҫ-тӑват утӑм чупать те, пӑхма тесе, сиксе илет. Пурпӗрех кураймасть. «Тен, эпӗ ытла васкатӑп пулӗ?» Вӑл татах малалла чупасшӑнччӗ, анчах тем иккӗленсе тӑчӗ.

Чӑн та, васкамасӑр кӑна пур еннелле те лайӑххах пӑхса пырсан, урам леш енче пӗр ҫын, хул хушшине хура портфель хӗстернӗскер, хуллен утса пынине курма пулӗччӗ.

Мӗнле журнал ҫухатни ҫинчен вӑл нимӗн те пӗлмест пулмалла-ха. Ҫав вӑхӑтрах хӗрлӗ галстуклӑ хӗрача хӑваласа ҫитнине сисрӗ. «Пичче, эсир япала ҫухатнӑ!» Вӑл чарӑнчӗ, шалт тӗлӗнсе тӑчӗ.

Сяо Хун папка тытнӑ аллине хыҫалалла пытарчӗ. Хаш! сывласа ячӗ те:

— Эсир мар-и трамвай ҫинчен тин ҫеҫ анни? Тӗрӗслесе пӑхӑр-ха, мӗн ҫухатнӑ эсир?—тесе ыйтрӗ.

Леш пичче хӑй тӑрӑх, унтан йӗритавралла пӑхса илчӗ. Куҫӗсене мӑч-мӑч хупса, тем ҫинчен тавҫӑрса илнӗ пек, пӗр самант шухӑшласа тӑчӗ. Вара каллех Сяо Хун ҫине пӑхса илчӗ. «Юрӗ, эпӗ ҫухатнӑ пултӑр. Кала-ха, мӗн тупрӑн?»—тенӗ пек пӑхаҫҫӗ унӑн куҫӗсем.

— Эсир мӗнле те пулин журнал ҫухатман-и?

Леш пичче сулахай хул хушшине хӗстернӗ портфельне сылтӑма тытрӗ те аллине сулахай кӗсйине чикрӗ.

— Хм, кунтах. Ҫухатман. Акӑ, кур.

— Сирӗн тата урӑх кӗнеке пулман-и?

— Ҫук. Манӑн ҫакӑ анчах.

Сяо Хун пӑшӑрханма пуҫларӗ. «Тем тесен те, урӑх ҫын журналӗ пулӗ ку?!» Сяо Хун аптранипе малалла чупрӗ.

— Эй, пӗчӗк тусӑм!—терӗ леш пичче, сасартӑк темӗскер ҫинчен аса илсе, Сяо Хуна кӑшкӑрса чарчӗ.—Эпӗ сана «тавтапуҫ» теме астуман. Эсӗ илсе килнӗ япала манӑн мар пулсан та, сана тав тумаллах.

Сяо Хун каллех малалла чупрӗ. Аҫталла чупмаллине хӑй те пӗлмест ӗнтӗ.

Хӗрачана ку тарӑхтарчӗ. Вӑл пӗчӗккӗ чухне ӗҫлеме тытӑнсан, чӑнах та, кӑшт аптраса ӳкетчӗ: Чэнь учитель те, амӑшӗ те кун пирки унпа пӗрре кӑна мар калаҫнӑ. Халь-и? Халь ӗнтӗ ҫуллахи каникул иртсе кайрӗ, Сяо Хун пиллӗкмӗш класа ҫитрӗ. Тепӗр май каласан, халь ӗнтӗ вӑл аслӑрах класра вӗренекен хӗрача, ҫитӗннӗ ҫын теме те юрать. Ҫитӗннӗ ҫын тени тӗрӗсех мар-ха, пысӑк ача темелле пуль. Пысӑкрах ачасем пӗр-пӗр ӗҫ тунӑ чухне—ҫав тери васкавлӑ тумалла ӗҫсемсӗр пуҫне, калӑпӑр, питӗ лайӑх кино курма васканисӗр пуҫне,—васкамаҫҫӗ, аптраса ӳкес патнех ҫитмеҫҫӗ.

Халь Сяо Хун Чэнь учитель сӑмахне аса илчӗ: «Сяо Хун, сан шутпа мӗнле тумалла? Эсӗ малтан лайӑх шухӑшласа пӑх!»

Яланах ҫапла пулнӑ: Сяо Хун васканӑҫемӗн Чэнь учителӗн пичӗ тӗксӗмленетчӗ, сасси лӑпкӑланатчӗ. Сяо Хун халь мӗншӗн лӑпкӑланнине, малтанхи пек васкаманнине эпир пӗлместпӗр.

Шухӑшласа пӑх-ха. Трамвай ҫинчен хӑш тӗлте анса юлнӑ-ха журнал ҫухатнӑ пичче? Паллӑ мар. Пӗр сӑмахпа каласан, кунта ӑна шыраса тупма пулмасть. Апла пулсан..

«Эпӗ ку журнала шкула кайса паратӑп...»

Ҫук. Кунти милици уйрӑмне парсан, аванрах. Пит нумай—пилӗк минут кирлӗ. Анчах ан васка. Малтан журналне тӗрӗслесе пӑх, мӗнле япаласем пур унта.

Нумай хут листисем ҫинче туллиех иероглифсем ҫырса тултарнӑ. Ку ӗҫ журналӗ е вӗренӳ журналӗ пулмалла, ашшӗн журналӗ пекех. Пӗр тӗрке укҫа та пур. Сяо Хун, шутласа пӑхас тесе, укҫине кӑларса илчӗ, сасартӑк пӗр кӑвак хут ҫӗре вӗҫсе ӳкрӗ. Таҫта кӗмелли билет иккен.

«Ӑҫта кӗмелли билет?»—ӑнлантарни ҫук. Вырӑнне те кӑтартман. Кӑвак тӗслӗ ҫаврака пичет пуснӑ, иероглифӗсене ӑнланма ҫук. Кунӗ—паян, вӑхӑчӗ—вунӑ сехет ирхине. Пӗр ҫын валли анчах. Никама та пама юрамасть. Хут кӗтессинче ручкӑпа ҫырнӑ... «Ван Фэн юлташ».

«Ха, пӗлтӗм камне!»

Апла пулсан: «Чжунго шаонйень»[1] хаҫат ҫинче Ван Фэн юлташа шыраса пӗлтерӳ ҫырма юрать. Ван Фэн юлташ хаҫат вуласан, хӑй журналне илме кунти милици уйрӑмне килме пултарать, тата билет та пур-ха...



Анчах паян ирхине вунӑ сехетре ҫав билетпа мӗнле пухӑва каймалла-ши Ван Фэн юлташӑн—калама ҫук кирлӗ пуху пулӗ ку!

«Мӗн тумалла-ши?»

Вӑхӑт секунд хыҫҫӑн секунд, минут хыҫҫӑн минут иртсе пырать.

Чӑн та ӗнтӗ, питӗ йывӑр ыйту ку. Тӗрӗс пултӑр тесен, пурне те пӗлтермелле кун ҫинчен: «Юлташсем, хӑвӑр шухӑшӑрсене каласа парӑр-ха!» Вара тӗрлӗрен канаш илтме пулать. Сяо Хуна икӗ ача тавлашса тӑнӑ пек туйӑнса кайрӗ. Пӗри калать пек:

— Ҫав журнала трамвай ҫинчен илсе кайма Сяо Хуна кам хушнӑ? Вӑл илсе кайман пулсан...

Иккӗмӗш ачи ҫавӑнтах хирӗҫлерӗ пек:

— Сан шутпа: ҫын япали ҫухалтӑрах темелле пулнӑ-и Сяо Хунӑн? «Манӑн мӗн ӗҫ пур? Эпӗ кэланцюпа[2] вылями каятӑп, вӑл лайӑххрах»,—темелле пулнӑ-и? Путсӗр ҫын илсен, калама та юрӗччӗ. Ҫапла-и? Анчах Сяо Хун ун пек хӗрача мар. Вӑл ҫамрӑк гварди членӗ.

— Мӗн!—кӑшкӑрма пуҫларӗ пӗрремӗш ачи.—Ҫын япалине ҫав маях пӑрахса хӑварас та кэланцюпа выляма каяс-и? Ун пек, паллах ӗнтӗ, тӗрӗс мар. Мӗнех лайӑххи пур ӗнтӗ ҫав кэланцюн? Анчах Сяо Хунӑн кэланцюпа выляма каймалла мар. Унӑн кино курма каймалла. Вӑл тахҫантанпах ӗмӗтленет ӗнтӗ. Калама ҫук лайӑх кино. Шутсӑр лайӑх. Пӗр сеанс кӑна пулать. Ӗҫ акӑ мӗнре.

— Апла пулсан, кала-ха, хӑшӗ кирлӗрех? Ван Фэн юлташӑн пухӑва каяссипе Сяо Хунӑн тӗрлӗ тӗслӗ кино курма каясси хаклӑрах-и?

Пӗрремӗш ачи ответлерӗ:

— Паллах ӗнтӗ, пурте кирлӗ. Тӗрӗссипе, Сяо Хун юлташӗсем патне кайса, вӗсенчен ыйтма пултарать: «Эсир «Пӗчӗк пахчаҫӑ» фильма курнӑ-и?». «Пурте курнӑ! Ах, ҫав тери лайӑх!» «Апла пулсан, ман вырӑна пӗр ӗҫ тӑвӑр-ха. Ку ӗҫ халӑхшӑн». Ҫав журнала юлташӗсене пама юрать, хӑй вара кино курма кайма пултарать.




— Апла пулсан, Сяо Хунӑн чи малтан сан патна килмелле пулнӑ.

— Э-э, ун пек юрамасть. Манӑн пиччепе сада каймалла. Мӗншӗн уйрӑмах ман патӑма килмелле-ха, юлташсем сахал-и-мӗн? Пӗрле вӗренекенсем патне кайтӑр, вӗсемпе лайӑххӑн калаҫтӑр,

Иккӗмӗш ачи хӑвӑрттӑн калама пуҫларӗ:

— Урӑхла каласан: «Юлташсем! Манӑн паян сада каймалла, кино курмалла, ҫавӑнпа манӑн халӑхшӑн ӗҫлеме вӑхӑт ҫук. Маншӑн пӗрре ӗҫлӗр-ха. Сирӗн нимӗнле майпа та кино курма е пиччусемпе сада кайма юрамасть. Ман вырӑна ӗҫе вӗҫне ҫитиччечех сирӗн тӑвас пулать». Санӑн шухӑш чӑн та ҫакӑн пек.

«Ой-ой, сире каласа ҫӗнтерейместӗн. Мӗнле тӑвас тенӗ, ҫапла тӑвӑрах. Хуть те кирек мӗнле пулсан та Сяо Хун кунта пӗр-пӗчченех, вӑл мӗнле ӗҫ тунине никам та курмасть. Ӗҫне начар тусан та поведенишӗн отметка чакарас ҫук, лайӑх тусан та парне парас ҫук».

Кун пирки нумай ачасем шавлама пултараҫҫӗ: «Ха, эсӗ чӑн-чӑн гварди членӗ мар! Чэнь учитель калатчӗ вӗт пире: «Эсӗ пӗр-пӗччenex чухне те сан ҫине вуншар мӑшӑр куҫ пӑхнӑ пек, вуншар мӑшӑр алӑ кӑтартса пынӑ пек, гварди членӗ тумалли ӗҫсене ху ирӗкӳпех ту, вӗҫне ҫитиччченех лайӑх ту». Пирӗн Сяо Хун ҫакӑн пек ӗнтӗ».

Сяо Хун шухӑшлать: «Тӗрӗс, чӑн та ҫавӑн пек. Вунӑ сехетчен Ван Фэн юлташа шыраса тупмаллах!»

Ҫапла вара, Сяо Хун ку хутӗнче «Пӗчӗк пахчаҫӑ» ятлӑ кино курма кайнӑччӗ, анчах кураймарӗ.

Апла пулин те, Сяо Хун питӗ хаваслӑ, мӗншӗн тесен, вӑл ҫапах та Ван Фэн юлташа шыраса тупрӗ—пӗр хӗрарӑм пулнӑ иккен, ҫулӗсемпе Сяо Хун амӑшӗнчен те аслӑрах.

Ак ҫапла пулнӑ: Сяо Хун хуллен кӑна журнала пӑхкаласа тӑнӑ чухне хӑшпӗр ятсен адресӗсем пуррине асӑрханӑ. Вӑл ҫавӑнтах чи ҫывӑх ҫурта шырама кайнӑ, анчах ҫыннине тупайман. Унтан тепӗр вырӑна чупнӑ, унти ҫынсем пур ҫӗре те телефон тӑрӑх калаҫса, Ван Фэн аппана шыраса тупнӑ.

Ван Фэн аппа пырса ҫитрӗ. Сяо Хуна икӗ аллинчен те ӑшшӑн тытрӗ, ним тума аптӑрарӗ.

— Пӗчӗк тусӑм, эсӗ мана хӑвӑн ятна каламарӑн-ха.

— Ҫамрӑк гварди членӗ!—терӗ Сяо Хун.

*Китай чӗлхинчен*
*А. Андреев куҫарнӑ.*



[1] Чжунго шаонйень—Китай ҫамрӑкӗ.
[2] Кэланцю—Китай биллиарчӗ.

# ҪӖРУЛМИ КОМБАЙНӖ

Ҫирӗм—ҫирӗмпилӗк ҫул каялла, хирте пирвайхи трактор суха тума тытӑнсан, пӗтӗм Вӑрманкас хире тухнӑ. Ваттисем, трактор ӗҫне ӗненмесӗр, тӗлӗнсе пӑхнӑ, ҫамрӑксем трактор хыҫҫӑн кӗшӗлтетсе чупнӑ. Пурте хурҫӑ утпа суха тунине курасшӑн ҫуннӑ.

Халӗ Вӑрманкасри Крупская ячӗпе хисепленекен колхоз хирӗсенче ун чухнехи У-2 тракторсем кӑна мар, хӑватлӑ КД-35, ДТ-54, ХТЗ, СТЗ тракторсемпе пӗрле тырпул пухса кӗртмелли темиҫе тӗрлӗ комбайнсем те ӗҫлеҫҫӗ. Нумаях пулмасть Кӳкеҫ МТС-чи 8-мӗш номерлӗ трактор бригади ҫӗрулмине те комбайнпа пухса кӗртме тытӑнчӗ.

Кӑҫал Шупашкар районӗнчи Крупская ячӗпе хисепленекен колхозра ҫӗрулмине комбайнпа пухса кӗртрӗҫ.

Ӳкерчӗкре: Павел Никифорович Никифоровӑн комбайн агрегачӗ колхозра ҫӗрулми кӑларать.



**А. Припалов** фотоӳкерчӗкӗ.



# ТАВРĂНСАН

Ф. Иванов фотоÿкерчĕкĕсем.

— Секрет шыратăп,—тет Владимир Михайлович, умĕнчи тетрадьне хупса хурса. Выставкăра курнисене вăл йăлтах çырса пынă. Çырнисем шăрçа пекех пĕр тикĕс мар та, çапах тирпейлĕ.

— Секретне тупрăн-и?—каллех чăрăнмаççĕ хĕрсем.

— Тупрăм.

— Мĕнре-ши вăл «секречĕ»? Пысăк-ши, пĕчĕк-ши?

— Пысăк та, пĕчĕк те мар. Чунтан тăрăшса, лайăх пĕлсе ĕçлениче вăл.

— Анчах выльăх апачĕ, тĕрлĕрен условисем?..—çаплах парăнмаççĕ хĕрсем

— Апачĕ те, условийĕ те хамăртанах килет пулĕ, ачамккăсем,—тет Владимир Михайлович, ним кулмасăр.

— Вăл пирĕн пултарать,—тессĕ те «ачамккăсем», хăйсем те кулма пăрахаççĕ.

— Кашкăр лапаменче, стрелецсен кордонĕ пулнă вырăнта, пирĕн слобода пуçланса кайнăранпа...—малалла калать Лаптев.

— Ну! пуçланчĕ истори çинчен лекци,—тет, тутине тăсса тахăшĕ.

— Итле, итле, усăллă пулĕ. Пирĕн слобода пуçланса кайнăранпа миçе çул тетĕр?

— Пугачев вăхăтĕнче...

— Çапла тейĕпĕр... Унтанпа миçе çул иртнĕ? Анчах çав вăхăтри çынсем хăйсен ĕмĕрĕнче пирĕнни пек сыснасем ÿстерсе курнă-ши? Курман та, пултарайман та. Ак сире истори çинчен лекци! Лекцисем пире сахалрах лекĕççĕ-ха çав...

Сыснасем кунта чăнах та шултра, самăр, таса. 250—300 килограмм таякан сысна вăтамми шутланать. Кашни сысна аминчен пĕтĕмĕшпе вунсакăршар çура илнĕ пулсан, Лаптев юлташ пăхаканнисенчен, вăтам шутпа, вунтăхăршар çура илнĕ, вилнисем пачах та пулман.



Буденный ячĕпе хисепленекен колхозăн ĕне кĕтĕвĕ уйра.



Тата икçĕр ĕне валли тума пуçланă çĕнĕ вите.

Кашни 100 гектар акмалли çĕр лаптăкĕ пуçне государствăна 15 центнер сысна какайĕ памалла пулсан, Буденный ячĕпе хисепленекен колхоз кăçал çирĕмшер центнер панă. Кунта ĕнтĕ, Павел Иванович Юхтанов сăмахĕсемпе килĕшсе, çапла калас килет: сысна ĕрчетни—государствăна та тем пекех пысăк усă парать.

Буденный ячĕпе хисепленекен колхозра ытти выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе те çитĕнÿсем сахал мар. Сăмахран, кунта выльăх витисене пурне те хĕле хатĕрлесе çитернĕ, икçĕр ĕне валли çĕнĕ вите туса пĕтереççĕ, фермăри пур йывăр ĕçсене те механизацилеме тăрăшаççĕ. Уйрăмах выльăх апачĕ кирлĕ таран туса илессине пысăка хаклаççĕ колхоз ĕçченĕсем. Колхозăн пĕр силос башни, виççĕр тонна кĕрекен силос лакăмĕ пур; курăк çулса, хĕвелçаврăнăшĕ тата çĕрулми аври тураса, тăватçĕр тонна силос хывнă, икçĕр тоннăна яхăн çĕрулми силосĕ хывса пĕтермелле. Выльăх апачĕлĕх 10 гектар кăшман, ултă гектар турнепс акса ÿстернĕ, викăпа хутăш сĕлĕ, клевер нумай пухса илнĕ. Çуллахи вăхăтра выльăхсене лагерь режимĕпе усраççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем юлашки çулсенче уйрăмах тĕрĕс рационпа усă курассишĕн, пĕтĕм ĕçе наука кăтартса панă пек туса пырассишĕн тăрăшаççĕ, пурте агрозоотехкружокра вĕренеççĕ. Вĕсем, парти организацийĕ ертсе пынипе, мĕнпур колхоз ĕçченĕсемпе пĕрле ÿсĕм çулĕ çинчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе парти лартнă тĕп задачăсене чыслăн пурнăçлас тесе кĕрешеççĕ. Куллен тăрăшса ĕçлени—куç умĕнче, пуласси—татах та ăнăçлăрах, тата савăнăçлăрах.

Кĕрхи хĕвел тахçанах анăçа кайса пытанчĕ. Сăр шывĕ çийĕн шурă тĕтре йăсăрланать. Çутă уйăх та тÿпене шуса тухнă та, пин-пин çăлтăрсемпе ăмăртса, ял урамне сивĕ çутă сапать. Буденный ячĕпе хисепленекен колхозра курмалли пайтах, калаçмалли тата нумайтарах.

— Çапла, çыннисем лайăх пирĕн, ĕçчен,—тет колхоз председателĕ Федор Петрович.—Мускава кайса килнĕренпе пушшех улшăнчĕç: ĕç çине те, пурнăç çине те, уйрăмах ÿсĕмсем çине урăхлараx пăха пуçларĕç, савăнăçĕ те пур вĕсенче, шухăш-ĕмĕчĕ те. Калаçасса—пирĕн çинчен калаçаççĕ, час-часах мухтаççĕ те, анчах... анчах мухтама ĕçне сахал тунă-ха! Халĕ вĕт, ак мĕнле, малта пыракансем сахал мар, кăшт кăна лăплансанах, сиссе те юлаймăн, хÿрене пăрахса хăвараççĕ...

Мускавран таврăннăранпа Федор Петрович хăй те канăçне çухатнă, шухăшлă çÿрет, тунă çитĕнÿсемпе лăпланса ларасшăн мар, малаллах, малаллах каяссшăн вăл. Совет çыннисен йăли çапла. Пит лайăх йăла!

Ст. ПАВЛОВ.



Ĕне фермисен заведующийĕ Б. И. Скрепков дояркăсемпе калаçу иртгерет.



— Выльăх кăшманĕ шултра пулчĕ!—тет Скрепков юлташ.

# ЫТ-ТЁКЕЛ



Петĕр Хусанкай

Петĕр Хусанкай пирĕн Тăван çĕршыври халăхсен Аслă Отечественнăй вăрçăри патриотизмĕпе туслăхĕ çинчен «Аптраман тавраш» ятлă пысăк поэма çырса пĕтерчĕ. Поэма уйрăм кĕнекен пичетленсе тухмалла.

Ку номерте эпир «Аптраман тавраш» поэмăн пĕр сыпăкне пичетлетпĕр.

Инçетрен вăрман кати пек
Ешерсе ларать хăмла.
Пĕлĕт янкăр, сывлăш типĕ,
Вăхăт çитнĕ: татмалла.

Ши те пи кайса ĕрченĕ
«Маттясем» пур анипех
Чăмăртаннă пит чечеленĕ—
Виноград çупкăнĕ пек.

Шерепеленсе лараççĕ
Пралуксем çинче вĕсем,
Антараççĕ те татаççĕ
Хĕрлĕ питлĕ хĕрĕсем.

Хĕрĕсем те, арăмсем те,
Ачисем те пур, куран.
«Туй тумалăх пулчĕ ĕнтĕ,—
Шӳт тăваççĕ хушăран.—

Каччисем килех тăраççĕ,
Хĕр пасарĕ—шăп çур ял.
Ахăрнех, çавна кура çав
Ăнчĕ пуль хăмла кăçал.»

— Тепле-ха... чипер кĕртмесĕр
Каламашкăн хĕнтерех.—
«Гектартан вуникĕ центнер
Тухмаллах, илетпĕрех...»

Шалчасем чиксе кăшт-каштăн
Лаç хыçне, лупас хыçне,
Нумаях хăмла тăваймăн,—
Аслăлатнă ун ĕçне.

Халь хăмла пахчи, плантаци
Илтĕнет калаçура.
Юпасем айне хупланчĕ
Темиçе гектар уйра.

**

Энтрипе Иван Исайчă,
Ярăнса утса çитсе,
Вăрман çумĕн сывăхарчĕç,
Тăчĕç чĕлĕм тивертсе.

Хăрах алăллă Самаев
Хăй çумне чикарккине
Сăтăрса чĕркенĕ майăн
Каччă пăхрĕ ун çине.

— Хамăнне туртса ярсам-и...—
Сĕнчĕ вăл шултра «Казбек».
«Пăрахма хушать те амăш,—
Терĕ леш,—тем катăк пек.

Ну, пирус, пирус вăл—тулă,
Эп ыраш çăкришĕнех...»
«Казбекне» вăл хăлхи урлă
Хучĕ, чĕртрĕ хăйĕннех.

«...Хăмлапа чăваш çĕршывĕ—
Федерацире малта.
Малашне унпа, тен, сывлăш
Çавăрăпăр хамăр та...»

Калаçать Иван Исайчă
Хăй хуçалăхĕ çинчен.
Тинкерсе итлет яш каччă,
Паллашмах вăл тухнă, тен.

Кутăрусăн «председатель
Улшăнать» текен хыпар
Ял çинче пит сарăлсаччĕ,
Тепле-ха... пăртак тăхтар.

Пухусем пулни кутемĕн
Илтĕнсех каймарĕ-ха.
Демократи-çке! Мĕн тейĕн?
Юрама пĕл халăха.

Уншăн марччĕ, куншăн марччĕ,—
Çыннине хурлама çук...
Шалалла кĕрсе уттарчĕç,
Хирĕçех—килет Верук.

Ашшĕ чĕнчĕ:—Эсĕ мар-и?—
«Эпĕ»—Мĕн эс? Кам патне?—
«Сармантей Çерукĕн Клари
Çӳпĕ кĕртнĕччĕ куçне.

Куршанак çӳппи пеккиччĕ,
Енерех кăлартăм та,
Мĕнлине пĕлессĕм килчĕ,—
Çӳпĕ çеç те мар кунта...

Чĕлхепе вăл çулаттарнă
Хăй куçне иккен малтан.
Леш, Крахъян çуласа ларнă,
Çав-çавах кăларайман.

Тĕшмĕш амăшĕн, Крахъянăн,
Хăйĕн те трахома-çке!

Тен, хĕре ертсе те янă...»
— Ах, касать-ха çав инкек!—

Тарăхса илет Самаев.
Аптраман ытахальтен
«Ну, хăмла мĕнле?» тет.—Лайăх!
Хӳхĕм!—тет Верук чеен.

Энтрипе Верукăн туйĕ
Çывăхрах, тесе ялта
Калаçатчĕç те,—ним çуйĕ
Илтĕнмерĕ-ха тата.

«Ĕç пĕтсен ĕнтĕ... Октябрь
Уявне хăварнă тем?..»
Текелерĕç те, пĕр тапхăр
Шарламарĕç-ха çынсем.

«Мĕн эпир яратпăр юмăç?
Кĕр мăнтăрĕпе часах
Майлаштарĕç, çынран юлмĕç»
Терĕç хăшĕ савăнсах.

Мотоциклне утланнă
Вĕçкĕнрех пĕр бригадир
Вĕçрĕ çитрĕ, вут вутланнăн,
Çав хăмла патне çав ир.

— Телефон патне чĕнеççĕ,—
Терĕ вăл Самаева,—
Килте çук теп—срочно!—теççĕ,—
Райкомран! Шыра, тавай!..

Итеме кайма тухсаччĕ,
Çитерем эппин калле...—
Аллине Иван Исайчă
Сулчĕ çеç ял еннелле.

«Эс, юлташ, пăртак мĕнту-ха,
Куркала ăна-кăна,
Мĕнех мар пулсан, эп тухăп»
Терĕ вăл Аптрамана.

Мотоциклĕ пытанайрĕ —
Аптраманĕ Верукпа
Вăрмана кĕрсе те кайрĕ
Ăсатса ярас шутпа.

Кĕр енне-çке, кĕр енне!
Кĕренленнĕ вĕрене.
Сархаять чечен çăка,
Кăштăр-кăштăр кăштăркка
Шĕшкĕсем кĕшĕлтетсе
Ларкалаççĕ тĕмĕпе,
Măйăрне шĕкĕлчесе
Илеймен-ха пĕтĕмпех
Вичкĕн çил те, вăхăт та,
Çын та йăлт асăрхайман,—
Йывăççи çинчех паян
Куркалать, татать Верук,
Чăмăртать ывăçине:
«Ытă-и, тĕкел-и?» тет.
— Ытă,—тет Энтрийĕ. «Çук!»
Кăтартать хĕр аллине:
Мăшăр майăр йĕкĕлтет.

«Пĕлеймерĕн те, сана
Тӳлеттермĕп ĕнтĕ эп,—
Эс татман та пуль-ха теп...»
Тет Верук Аптрамана.
Янăрать чее кулли.
Мăшăр майăр юнашар —
Тутă, сарă, туп-тулли:
«Кил, çиетпĕр çурмашар...»

Çурмашар çав, çурмашар,
Урăхла пулмалла мар.
Аптраман вăрманалла
Пĕчченех кĕрет шала.
Сас тумасть Верукĕ те,
Хăй кĕтет, кĕтет, кĕтет...
Ак Энтри те майăр тупрĕ,
Вĕтлĕхрен кулса вăл тухрĕ,
Чăмăртать ывăçине:
— Ытă-и, тĕкел-и?—тет,
Чăр пăхать Верук çине.
Леш, кăшт шухăшларĕ те,
«Ытă пулĕ те... ыйтар
Тĕкелнех» тет, ывăçа
Хăй уçасшăн явăçать:
«Ну, кăтарт-ха, ан пытар!»

Ах, тĕкел çав, мăшăр çав,
Мĕн тăвайăн пурнăçа!
Чĕрене ăçтан улталăн?..
Майăрне Энтри шутлать,
Кĕç манать те пур шута вăл—
Йĕкĕр майăр пек туталлă
Верукне чап чуптăвать.

Темле кайăк пĕр пĕччен
«Ыт-тĕкел» те «ыт-тĕкел»
Тенĕ пек йăслать темччен.
Çывăхри юман çинчен
Патлатса ӳкет икел...

# САЛАМПИ

*Повесть**

Александр АРТЕМЬЕВ

## „МАМА!“

Пӗр вырсарникун центральнӑй библиотекӑри вулав залӗнче Салампипе Муза тӗл пулчӗҫ.

— Ой, Салампи!—терӗ Муза савӑнса,—хӑҫантанпа сана курманччӗ!

Саспа калаҫнӑшӑн вӗсем ҫине вулакансем кӑмӑлсӑррӑн пӑхма пуҫласан:

— Атя, Атӑл хӗррине тухса уҫӑлар, эпӗ паян кунта ларса пӑчӑхрӑм,—терӗ Салампи. Иккӗшӗ те вара хаваслӑн калаҫкаласа Атӑл хӗррине тухрӗҫ.

— Питӗ йывӑр музучилищӗре вӗренме, институтринчен те йывӑртарах,—терӗ сӑмах майӗн Любимова.—Сольфеджио, гармони тата ҫавӑн йышши тӗрлӗрен кӑткӑс япаласене пӗлсе тӑма питӗ йывӑр, вӗренсе тинке тухать, тӳррипе каласан, йӑлӑхтарса ҫитерчӗ ӗнтӗ, чӑнах та.

— Сана питӗ пултаруллӑ теҫҫӗ, Муза. Алмазов та ҫапла калать.

— Ман сасса пурте ырлаҫҫӗ, чӑнах та. Анчах музучилище пӗтерме талант пулнипех ҫитмест, ачам, хытӑ тӑрӑшас пулать.

— Ман талант пулас пулсан, эпӗ мӗнле тӑрӑшаттӑмччӗ!—терӗ Саламли.

Муза илтмӗш пулчӗ.

Студенткӑсем лаштра тирек айне пырса, йывӑҫ карлӑк ҫумне сӗвенсе тӑчӗҫ. Ҫил ҫинче ларакан тирекӗн ҫулҫисем тӑкӑнса пӗтнӗпе пӗрех ӗнтӗ, юлашки сарӑ ҫулҫисем тӑлӑххӑн вӗлтӗртеткелесе лараҫҫӗ. Каҫ еннелле сулӑннӑ хӗвел ӑшӑтмасӑр пӑхать. Йӑлӑмри вӑрман ылтӑнӑн-пӑхӑрӑн куранса ларать. Атӑл тӑрӑх, юхӑма хирӗҫ, вӗтӗ-вӗтӗ кӑтра хумсем ирteҫҫӗ: нӳрӗ ама ҫил тухӑҫран вӗрет.

— Атя, сада каяр, халӗ унта питӗ илемлӗ,—терӗ Муза.

Вӗсем ачасен садне кӗчӗҫ. Ҫӑкасем, вӗренесем ҫулҫӑ тӑкнӑ — ура айӗнче типӗ ҫулҫӑ чӑштӑртатать. Садра лӑпкӑ та илемлӗ, кунта ирӗксӗрех кӗрхи вӑрман аса килет.

Студенткӑсем хаваслӑн калаҫса пынӑ вӑхӑтра аллейӑна пӗчӗк ачасем шавласа тухрӗҫ. Вӗсем пурте хӗрлӗ пиншакпа, шӗвӗр тӑрӑллӑ хӗрлӗ ҫӗлӗкпе; аякран пӑхсан, пурте пӗр ҫӳлӗш, пурте пӗр сӑнлӑ пекех туйӑнаҫҫӗ.

— Ача ҫуртӗнче ӳсекенскерсем вӗсем,—терӗ Муза, Саламли ачасем ҫине сӑнаса пӑхнине асӑрхасан.—Питӗ шел вӗсене, ашшӗ-амӑшӗсем ҫак вӑрҫӑра ҫухалнӑ. Хушӑран хӗрсем пырса пӑрахни те пулкалать, теҫҫӗ. Вӑл ачасен хӑшин-пӗрин ячӗ те, хушамачӗ те ҫук пулмалла.

Студенткӑсем ачасем тӗлӗнчен иртнӗ чух пӗри ҫулҫӑ пуҫтарма чарӑнчӗ те Саламли ҫине чӑрр! пӑхрӗ, унтан чуна пырса тивекен сасӑпа:

— Мама!—тесе кӑшкӑрса ячӗ.

— Атя часрах!—терӗ хӑраса ӳкнӗ Муза, Салампие хултан туртса. Анчах вӗсем нумай та каяймарӗҫ, пӗчӗк ача, аллисене кӑнтарса, «мама! мама!» тесе хыҫран чупма пуҫларӗ. Саламли Муза аллинчен вӗҫерӗнчӗ те тӑпах чарӑнса тӑчӗ. Ача чупса ҫитсе, унӑн пальти аркинчен ҫатӑрласа тытрӗ те, ун ҫумне пӑчӑртанса, макӑрса ячӗ.

— Мама! Мама! Мама!

Саламли ним калайми пулса тӑчӗ.

— Валерик! Валерик!—илтӗнчӗ йывӑҫсем хушшинчен сестра сасси, ҫав самантрах аллейӑна ҫамрӑк хӗрарӑм тухрӗ. Вӑл Валерика Саламли ҫумӗнчен уйӑрасшӑн пулчӗ, анчах лешӗ, хӗр ҫумне тата хытӑрах пӑчӑртанса, пушшех макӑрма тытӑнчӗ.

— Мама! Мама! Мама!

Аптранӑ Саламли ачана хӗрхенсе алӑ ҫине ҫӗклерӗ.

— Ан макӑр, Валерик! Валерик!—терӗ ачашшӑн.

Ача тӳрех макӑрма чарӑнчӗ те пӗчӗк аллисемпе Салампие мӑйран ытаса илчӗ.

— Мама...

Сестра ун аллисене аран ҫеҫ хӗр мӑйӗнчен вӗҫертрӗ, ачана вӑйпах аякалла илсе кайрӗ.

Саламли садран питӗ васкаса, чунчӗрипе хыпса-ҫунса тухрӗ. «Мама! Мама!» тени ун хӑлхинчех янӑраса тӑчӗ, кӑмӑлне хуҫрӗ.

Муза Салампие кӗтсе тӑмасӑрах кайнӑ иккен. Ку мӗне пӗлтернине хӗр халӗ шутласшӑн та пулмарӗ, тӑлӑх ача макӑрни ун асӗнчен пӗрре те кайма пӗлмерӗ.

Сад кӗтессинче Музӑпа Ласкин арӑмӗ, пӗркун театрта курни, калаҫса тӑнине Саламли аякранах асӑрхарӗ: Муза хӗрсе кайсах тем каласа кӑтартать; лешӗ, питӗ тӗлӗннӗ пек, икӗ пӗҫҫине шарт ҫапать. Саламли, вӗсем патне пымасӑр, урам урлӑ каҫрӗ те хваттерелле утрӗ.

Ҫӗрле вӑл канлӗ ҫывӑраймарӗ, тӗлӗкре те Валерика курса, хурланса вӑрана-вӑрана кайрӗ. Тепӗр кунне, института кайнӑ чухне, вӑл урамра ӑнсӑртран ӗнерхи сестрана курчӗ. Лешӗ ӑна сывлӑх сунчӗ те тӳрех калаҫма пуҫларӗ.

— Пӗлетӗр-и, Валерик ҫӗркаҫ ҫывӑрмарӗ. Ҫӗрӗпех «мама!» тесе кӑшкӑрчӗ. Ни апат ҫимест, ни шыв ӗҫмест, пӗрмай «мама» тесе макӑрать. Пурне те аптратса ҫитерчӗ ӗнтӗ, ачасене те ҫывӑрма памарӗ.

Лекцире Саламли тӗлӗрекен ҫын пекех ларчӗ. Профессор мичуринла генетика ҫинчен каласа ӑнлантарать, анчах Саламли хӑйӗннех шухӑшлать. «Мама! Мама!» янӑрать ун хӑлхинче. Куҫӗ умӗнчех пӗчӗк Валерик аллисене кӑнтарса, йӑлӑнса чупать. «Мама! Мӗншӗн пӑрахса таратӑн манран!» теҫҫӗ унӑн пысӑк кӑвак куҫӗсем. Ҫав куҫсенчен Саламли ниепле те хӑтӑлма пултараймасть.

Каҫхине Леон Саламписен хваттерне килмерӗ. Хӗр хӑйне сивленӗ хыҫҫӑн та вӑл кашни каҫах килсе лараканччӗ, Пӗчӗк Нина патне конспектсем е учебниксем илме тесе килсе ларкалатчӗ, ҫапах пурте вӑл мӗншӗн, камшӑн килнине куратчӗҫ. Кӗҫӗр килмерӗ. Саламли ку мӗне пӗлтернине сисмерӗ, вӑл хӑйне ҫак вӑхӑтра Вирьялов йӗрӗнтерменшӗн савӑнчӗ.

Нина институт библиотекинчен ҫӗрлене юлса таврӑнчӗ. Вӑл темшӗн тусӗпе ытлашши калаҫмасӑр апат ҫикелерӗ те ҫывӑрма выртсан тин, тӗттӗмре, сӑмах хушрӗ.

— Саламли, эпӗ сан ҫинчен усал хыпар илтрӗм.

Саламли чӗри теме сиссе кӑрт! сикрӗ.

— Мӗнле хыпар?

— Эсӗ ача тунӑ, теҫҫӗ, ачине детдомра вӑрттӑн усрать, теҫҫӗ. Вирьялов манран ыйтрӗ: эсӗ пӗлме кирлӗ, чӑнах ҫапла-и? терӗ.

«Акӑ мӗншӗн килмест иккен Леон!» тӳрех шутласа илчӗ Саламли, вара ӗнер садра мӗн пулнине йӑлтах каласа пачӗ.

— Кам элеклеме пултарнӑ-ха ҫав териех, манпа пӗрле садра Муза кӑначчӗ-ҫке?

— Эпӗ Музӑна шанмастӑп,—терӗ Нина,—ун сӑмаххи, сулчӑ ҫип пекех, ҫирӗп мар. Чӗлхи те чараксӑртарах. Эсӗ ытлашши ӗненетӗн, Саламли, ун йышшисене.

Саламлин кӗҫӗр та ыйхӑ килмерӗ. Ирхине института кайнӑ чухне вӑл каллех хайхи сестрана тӗл пулчӗ.

— Валерик ҫӗркаҫ та ҫывӑрмарӗ, пӗрмай сире курасшӑн аптратать. Начарлансах кайрӗ ача,—терӗ сестра. Саламли унран ача ҫуртӗн адресне ыйтса пӗлчӗ.

Институтра профессор яровизаци теорилле никӗсӗсем ҫинчен лекци вуларӗ—Саламли тӗлӗкри пек ҫеҫ итлесе ларчӗ. Усал хыпар ялхуҫалӑх институтне ҫитеймен пулас: студентсем нимех те шарламаҫҫӗ. Хваттере таврӑннӑ чух Саламли ӑнсӑртран пӗр магазинта Музӑна тӗл пулчӗ. Вӗсем урама пӗрле тухрӗҫ.

— Муза, эпӗ хайхи ачана усрава илес тетӗп,—сасартӑк пӗлтерчӗ Саламли.

Любимова тӗлӗнсе кайрӗ, унӑн сенкер куҫӗсем чарӑлчӗҫ.

— Ҫын ачине-и?

— Хам ача пулать.

— Эх, Саламли! Калаҫатӑн шутламасӑр, чӑнах та. Эсӗ питӗ чаплӑ хӗр, сана темле хӳхӗм каччӑ та юратмалла. Ин-

---

* *Малалли. Пуҫламӑшӗ 5—9 №-сенче.*

ститут пĕтерсен, хăвна ху ирĕклĕ çын пулатăн, ăçта каяс килет—кай, кама юратас килет—юрат. Хĕрлех ача усрава илсен, хăвăн яш ĕмĕрне ахалех пĕтерсе хурасса пĕлместĕн-им?

— Юратакан çынна ача чăрмантармасть, ман шутпа, чăн-чăн юратăва мĕн чарса тăма пултартăр?

— Вирьялов юратмастчĕ-им сана? Ирĕн-каçăн сан хыççăн чупса çÿретчĕ вĕт?

— Хăйпе мăшăрланма та ыйтрĕ вăл манран.

— Халĕ вăл ав мĕнле калать: мана ачаллă хĕр кирлĕ мар, тет.

— Мана та ун юратăвĕ кирлĕ мар!—терĕ Саламппи хыттăн.—Юрату та мар вăл!

— Курăпăр-ха эппин, кам юратĕ,—терĕ Муза йĕкĕлтесе.

Саламппи вăл çапла калаçасса шутламанччĕ. Мĕншĕн улшăнчĕ-ха Муза?

Тус-хĕрсем кăмăлсăр пулса уйрăлчĕç.

— Анна Ивановна, эпĕ ача усрава илетĕп,—терĕ Саламппи хваттерте.

Карчăкăн тĕлĕннипе çăварĕ карăлса кайрĕ.

— Шÿтлесе калатăн-и эсĕ, Саламппи?—терĕ вăл, кăшт тăхтасан.

— Чăннипе калатăп.

— Вĕренме пăрахас тетĕн-им апла?

— Çук, пăрахмастăп! Çемьеллĕ, ачапăчаллă студенткăсем те вĕренеççĕ-çке?

— Вĕсем çемьеллĕ, сан çемйӳ ăçта? Хваттерте те тăвăр пулать. Эпĕ ача сассине юратмастăп.

— Урăх хваттер тупатăп, Анна Ивановна, тăвăрласа пурăнмăп.

Карчăк хĕр кусĕнчен тÿрĕ пăхрĕ.

— Эпĕ хăвна хĕрхенсе каларăм, Саламппи. Маншăн пулсан мĕн? Качча каймалли хĕр-çке эсĕ?

— Юратакан çын çавах илет, Анна Ивановна. Юратманнине эпĕ нихçан та каяс çук. Пĕлместĕр эсир ман кăмăла,—терĕ Саламппи хуллен.

Каçхине вăл урама капăр тумланса тухрĕ: иртнĕ пасарта туяннă хром атта тăхăнчĕ, шурă пурçăн тутăр çÿçисене çÿхе пальто çиййĕн кăларса ячĕ. Кĕçĕр Алмазов ялтан таврăнма кирлĕ, ыран вăл ирех Хусана тухса каять. Хулара унăн хваттер çук, çул майĕн вăл яланах музучилище студенчĕсен общежитине кĕрет. Кĕçĕр унпа курса калаçмаллах—вăл мĕн калĕ-ши тата? Е вăл та Саламппирен аякналла пăрăнĕ-ши? Çук, вăл ун пек тăвас çын мар! Саламппи ăна пĕтĕм чĕререн ĕненет.

Атăл хĕрринчи сад умĕнче Саламппи ĕнсăртран Музăпа Ласкин арăмне тĕл пулчĕ. Муза Саламппие, кулас килмесĕр кулкаласа, алă пачĕ, Ласкин арăмĕ, çурхи йăптăх тăкнă йытă пек вĕшлескер, сывлăх сунмасăр, Саламппи çине темле йĕрĕнчĕклĕн пăхса иртрĕ.

— Муза, эсĕ училищĕне каятăн-и?

— Çавăнта,—терĕ хĕр тем шутласа илнĕ хыççăн, ирĕксĕртереххĕн.

— Паян унта Алмазов пулма кирлĕ.

— Вăл унта, эпĕ ăна куртăм.

— Муза, тархасшăн ăна çакăнта, сад патне, тухма кала. Тархасшăн, Муза!

— Юрĕ,—терĕ Муза, Саламппи çине пăхма хăймасăр. Варт! çаврăнчĕ те Ласкин арăмне хуса çитме васкаса утрĕ, пальти çиййĕн кăларса янă шурă шарф вĕçĕсем кайăк çунаттисем пекех варкăшса пычĕç.

Сад умĕпе çынсем нумай çÿрекенрен Саламппи Атăл хĕрринелле утрĕ: Анатолий ăна аякранах палласа илме тивĕç.

Çур сехет те иртрĕ, çаплах Алмазов тухмарĕ-ха. Тен, вăл, ялтан ĕшенсе таврăннăскер, çул хыççăн кăшт канать пуль? Тен, тухиччен пĕр-пĕр ĕç туса пĕтерес тет пуль?..

Саламппи кăштах çÿçенне пек пулчĕ, ăшăнмалла утса çÿреме пуçларĕ. Ун пекех пăлханса, Атăл хĕрринче шур тутăрлă хĕр уткалать, час-часах аллинчи сехечĕ çине пăхса илет. Саламппин сехет çук, çавăнпа вăхăт мĕн чухлĕ иртнине тĕрĕс чухлаймасть. Тен, пĕр сехет те иртрĕ пуль... Акă анатран пĕр каччă васкаса килни курăнчĕ. Çук, Анатолий мар! Шур тутăрлă хĕр ун патнелле савăнăçлăн ыткăнчĕ, вĕсем пĕр-пĕрине ыталарĕç те каллех анаталла анса кайрĕç. Пĕр самант Саламппи çав хĕре, унăн телейне кĕвĕçсе илчĕ. Вăл хăйĕн савнине ун пек кăна мар кĕтсе илĕччĕ! Анчах мĕншĕн çаплах тухмасть-ха Алмазов? Театрта Муза юрлани аса килчĕ:

Сывлăм ÿкет садсем çине,
Каç сулхăнĕ çапать çĕре.
Ăçта-ши эс çак каçхине?
Сана кĕтсе çунать чĕре.

Анаталла анса кайнă телейлĕ мăшăр каллех Атăл хĕррипе тăвалла хăпарчĕ. Хĕрĕ каччи çумнех йăпшăннă, тем çинчен питĕ тăрăшса калать. Саламппи тĕлĕнче телейлĕ мăшăр шăпланчĕ, унтан иртсен каллех савăнса-кулса калаçма пуçларĕ.

Йывăç карлăк çумне сĕвенсе тăракан Саламппи вĕсем çине халĕ пĕтĕм чунтан ăмсанса пăхса юлчĕ. Ун шухăшĕсем пăтранса кайрĕç. Ăна йăлтах: çак кунсенче е малтанрах пулса иртнĕ ĕçсем те, пĕчĕк Валерика тĕл пулни те, кĕçĕр Атăл хĕрринче пĕччен шăнса савнине кĕтни те, çак телейлĕ мăшăр та—йăлтах тахçан тĕлĕкре курнă мĕлкесем пек çеç туйăнчĕç.

Ун умĕпе каллех шур тутăрлă хĕрпе каччă утса иртрĕç. «Акă-çке, шăпах

# ÇĔНĔ ГЭС



Укерчĕксенче: В. Ксенофонтов прорабпа строительсен бригадирĕ А. Петров юлташсем (çÿлти). Ринка ГЭС пĕви (аялти).

**А. Припалов**
фотоÿкерчĕкĕ.

**Кăçал Çавал çинче Ринка гидроэлектростанцине туса пĕтереççĕ. Ринка ГЭС-ĕ «Новая жизнь», Мичурин ячĕпе хисепленекен, «Красный Октябрь», Сталин тата Калинин ячĕпе хисепленекен колхозсене—пурĕ 14 яла—электроэнерги пама пуçлать.**

**Электростанцинче юлашки ĕçсем пыраççĕ. 124 киловатлă генератора вырнаçтарса лартнă ĕнтĕ, электростанци çуртне те майлаштарса çитернĕ. Аслă Октябрь уявĕ тĕлне колхозниксене электричество çути парасшăн строительсем тăрăшса ĕçлеççĕ.**



тӗлӗкре курни,—тесе шутларӗ Саламппи, вӗсем ҫине пӑхса.—Хӗрӗ шӑпах ҫапла тумланнӑччӗ: пальтопа, шурӑ тутӑрпа; каччи плащпа, кепкӑпа... Ун чухне те хӗрӗ шӑпах ҫапла савнийӗ ҫумне йӑпшӑнса, ӑна юратса тем калатчӗ... Эпӗ те шӑпах ҫапла карлӑк ҫумне сӗвенсе, вӗсем ҫине кӗвӗҫсе пӑхаттӑм...»

Шавласа калаҫни Салампи шухӑшне сирет. Ун патнелле виҫҫӗн янӑраса килеҫҫӗ. Хӗр вӗсен ҫулӗ ҫинчен аяккалла, сад мӗлкинерех кайса тӑчӗ. Ласкин, Чушков, Вирьялов ун ҫывӑхӗнченех кафе еннелле васкаса иртрӗҫ. Ласкинӗ аллисене сулса литература ҫинчен шавлать, Чушковӗ хушӑран ҫеҫ сӑмсапа нӗрлесе тем калать, Вирьяловӗ, вӗсем умӗнче йӑпӑлтатса, ним шарламасӑр пырать. Тем самантра Салампи ӑна чӗнсе илме те, ҫав сӗтӗрӗнчӗксемпе ӗҫме ерсе каясран тытса чарма та хатӗрччӗ, анчах хӑй кунта мӗншӗн тухнине аса илчӗ те хӑйне хӑй ытла ҫемҫе чунлӑ пулнӑшӑн ятларӗ.

Кинотеатртан халӑх кӗрлесе тухрӗ. «Икӗ сехет кӗтетӗп иккен,—шутларӗ Салампи.—Тен, вӑл Музӑна куриччен кино курма кӗнӗ пулӗ. Халӗ, киноран тухсан, вӑл ман патӑма килме кирлех. Тен, эпир виҫҫӗмӗш сеанса пӗрле кӗрсе курма ӗлкӗрӗпӗр».

Киноран тухнӑ халӑх та саланса пӗтрӗ, Атӑл хӗррине пынӑ хаваслӑ мӑшӑрсем те кайса пӗтрӗҫ. Салампи каллех пӗччен тӑрса юлчӗ.

— Килсем, тусӑм!—терӗ хӗр саспах, тӗттӗм Атӑл ҫинелле пӑхса.—Иксӗмӗрӗн кӗҫӗр питӗ нумай калаҫмалла. Эпӗ санран юлашки канаш ыйтасшӑн: килӗшӗн-ши эсӗ манпа, «ачаллӑ хӗрпе» пурӑнма, килӗшмӗн-ши? Эпӗ сана йӑлтах каласа парӑп, хам юрату ҫинчен те пытармӑп! Килсем, тусӑм! Кӗҫӗр—вырсарни каҫ, санпа ирччен ҫӳреме те хатӗр эпӗ...

Каферен каллех виҫҫӗн янраса тухрӗҫ те хула варринелле утрӗҫ. Вӗсене тӗл пулас мар тесе, Салампи каллех сад мӗлкине кайса тӑчӗ. «Кӗрхи шӑнасем», питӗ хытӑ шавласа, ун тӗлӗнченех тайкаланса иртрӗҫ.

«Ҫук! Анатолий нихҫан та вӗсем пек пулас ҫук!—терӗ хӑй ӑшӗнче Салампи.—Вӑл мана юратать, пирӗн юратӑва Валерик чӑрмантарас ҫук! Акӑ килет те—йӑлтах калаҫса татӑлатпӑр. Чӑн юратать пулсан, ача чӑрмантарма кирлӗ мар. Ик-виҫӗ ачаллӑ арӑмсене те качча илеҫҫӗ-ҫке! Эпӗ арӑм та мар?!.

— Араукари!—терӗ кулса Салампи.—Леон каларӗш, араукари эпӗ, тусӑм!

Пӗччен ытла кичем мана,
Сансӑр мӗнле ҫӗр иртерес?
Мӗн пулчӗ-ши, тусӑм, сана?
Ӑҫта-ши эс? Кампа-ши эс?—

Тем самантра ӑна ҫак юрӑ та, ҫак тунсӑх та, ҫак кӗрхи сулхӑн каҫ та тахҫанах ӑшӑ ыйхӑра курнӑ тӗлӗк евӗр ҫеҫ туйӑнчӗ. Шухӑшсем каллех пӑтранса кайрӗҫ.

Кинотеатртан халӑх тухрӗ: ҫурҫӗр ҫитрӗ иккен! «Текех кӗтес мар ӗнтӗ, халь тин килеймӗ, тем чӑрмантарчӗ пулӗ, е Муза ӑна эп кӗтни ҫинчен пӗлтереймен», тесе, чунтан пӑшӑрханса, Салампи кинотеатр патнелле утма пикеннӗччӗ, анчах сад карти ҫумӗнчех хытса тӑчӗ. Кинотеатр умӗнчи ҫутӑра, халӑх хушшинче, вӑл Музӑпа Алмазова лайӑх палласа илчӗ. Алмазов Музӑна хултан ҫавӑтса пырать. Акӑ вӑл хӗре тем кулӑшла сӑмах каларӗ пулас—Муза хӑйӗн уҫӑ сассипе урама янратса кулса ячӗ. Ҫав кулӑ Салампи чӗринче вӑрманта тиха кӗҫеннӗ пекех янраса кайрӗ, кӳтсе ҫитнӗ чун-чӗрене вӑйлӑ ток евӗр пырса ҫапрӗ...

— Мӗн пулчӗ сана, хӗрӗм, эсӗ кӗл пекех кӑвакарса кайнӑ?—терӗ Анна Ивановна шикленсе, хирӗҫ алӑк уҫма тухнӑскер.

Салампи калаҫмасӑр хывӑнчӗ, пальтине астумасӑр ҫанӑран ҫакса ячӗ, хӑй малти пӳлӗме кӗрсе кайрӗ. Карчӑк ун пальтине майласа ҫакрӗ те хӗрсем патне кӗчӗ.

Пӗчӗк Нина, тусне кӗтсе, хальччен ҫывӑрман, кӗнеке вуласа ларать.

— Курса калаҫрӑн-и?—ыйтрӗ вӑл тӳрех.

— Ҫук, калаҫаймарӑм... курасса куртӑм,—терӗ Салампи, лӑпкӑн калама тӑрӑшса, хӑй ҫавӑнтах тута хӗррине ҫыртрӗ.

— Эпӗ те куртӑм,—терӗ Нина.—Хамӑр группӑри студенткӑсемпе кинона иккӗмӗш сеанса кайрӑмӑр та тухнӑ чухне вӗсене иккӗшне тӗл пултӑмӑр... Муза, йытпулли пекех, авкаланса кӑна пырать...

Салампи апат ҫиме те, чей ӗҫме те лармарӗ, аттине хыврӗ те тӳрех вырӑн ҫине кӗрсе выртрӗ, пуҫ ҫинченех утиялпа витӗнчӗ.

Нина пӗтӗм чунтан тарӑхса каларӗ:

— Каларӑм сана тахҫанах, ҫав Музӑпа ан ҫӳре, тесе! Ун йышшине ӑна куҫпа кур та—урапа тар! Палан пек вӑл: юнӗ пур унӑн, чунӗ ҫук.

Анна Ивановна ним чӗнмесӗр сӗнкксе ларчӗ-ларчӗ те кухньӑна тухас умӗн тин ҫӑвар уҫрӗ:

— Хӗрӗ пӑхма хӗвел пек, ӑшӗ-чикки чикан пек, тесе юрлатчӗҫ ӗлӗк ун йышшисем пирки,—терӗ.

Тепӗр ик кунтан Салампи пӗчӗк Валерика хваттере илсе килчӗ. Ача малтанлӑха палламан ҫынсенчен ютшӑннӑ пек пулчӗ, унтан часах пурне те хӑнӑхса ҫитрӗ. Салампипе Нина ӑна аларан ями юратрӗҫ, Анна Ивановна кухньӑран кӑларми ҫитерме тӑрӑшрӗ. Каҫсерен вӗсем патне студентсем нумайӑн ҫӳрерӗҫ, пурте Салампипе Валерик валли парнесем илсе пычӗҫ, ҫӗнӗ хваттер тупма пулӑшасси ҫинчен те калаҫкаларӗҫ, анчах Анна Ивановна куҫҫульпе тархасласан Салампие хӑй патӗнче юлма ыйтрӗ.

Эрне иртрӗ. Салампи яланхи пекех института пӗр лекци сиктермесӗр ҫӳрерӗ, тӑрӑшса вӗренчӗ. Ӑнсӑртран Музӑпа тӗл пулас марччӗ тесе, вӑл урамра та, кинотеатрсем, магазинсем таврашӗнче те сахалтарах пулма тӑрӑшрӗ, лешӗ те ҫак кунсенче ытлашши тухсах ҫӳремерӗ пулас. Вирьялов тек Саламписен хваттерӗ еннелле ура та ярса пусмарӗ. Алмазов ҫав ылханлӑ каҫ хыҫҫӑнах, тепӗр ирхине, Хусана тухса кайнӑ, тесе пӗлтерчӗ Нина.

Салампи халӗ ӗнтӗ «ӗлӗкхи хуйхӑсуйхӑсене» пӗтӗмпех манма шутларӗ: «Каснӑ чӗлле каялла ҫыпӑҫтараймӑн»,—терӗ.

Анна Ивановна, кӑнтӑрла килте пӗччен ытла кичем тесе, Валерика детсада нимпе те ятармарӗ. Вӑл, халиччен ача ӳстерсе курманскер, Валерика пӗтӗм чунтан юратса пӑхма пуҫларӗ.

«Салампин ача пур» тенӗ хыпара ун амӑшӗ патне ялти кӑтӑклӑ чӗлхеллӗ Маруҫ инкӗшӗ илсе ҫитернӗ. Вӑл иртнӗ вырсарникун, пасара килсен, Ласкин арӑмӗпе курса калаҫнӑ иккен. Пӗр шакалӗ сас парсан, тепри ӳлесех ярать мар-и? Маруҫ инкӗшне те пӗр-пӗр ҫӗнӗ хыпар пӗлтер кӑна—ун пек чухне вӑл йӗпрен пӗрене тума та пултарать. Салампи амӑшӗ, яланах чӗрепе чирлекелесе пурӑнаканскер, усал хыпара илтсен хытах чирлесе ӳкнӗ, хӗрӗ патне вилетӗп тесе хут янӑ.

Амӑшӗн ҫырӑвне илсен, Салампи тепӗр куннех япалисене пуҫтарчӗ те каллех пасара лавпа килнӗ Маруҫ инкӗшӗпе яла таврӑнчӗ. Анна Ивановна тем пек йӑлӑнса ыйтсан та, Салампи Валерика хӑйӗнчен хӑвармарӗ.

— Ывӑлне амӑшӗнчен уйӑрма юрамасть. Эпӗ Валерикшӑн тӑван амӑшӗ пулатӑп. Текех ӗнтӗ ӑна никама та парассӑм ҫук, такам темле йӑлӑнса е хӑратса ыйтсан та!—терӗ ҫирӗппӗн.—Ан пӑшӑрханӑр тӳрӗ сӑмахшӑн, пӗлетӗр ман кӑмӑла... Сывӑ пулӑр, Анна Ивановна, Нина. Эпӗ каллех таврӑнатӑп кунта... тавӑн института!..

## ВИҪҪӖМӖШ ПАЙӖ

# ЯЛЙЫШ

Усал сӑмах утпа ҫӳрет, ҫилпе вӗҫет, чӳречерен кӗрет.

«Салампи хӗр халлӗн ача ҫуратнӑ» тенӗ хыпар питӗ хӑвӑрт саланчӗ, ун ятне ҫывӑхри ялсенче те асӑнчӗҫ: тахҫан институтра куркаланӑ студентсем те, пурнӑҫра ӑнсӑртран тӗл пулса пӗр-ик сӑмах хушнӑ каччӑсемпе хӗрсем те Салампие ҫывӑх пӗлсе тӑнӑ пекех калаҫрӗҫ, ӑна нихҫан курман-илтмен ппкесем те ирсерен ҫӑл умне пухӑнса ун пирки шавларӗҫ; аманнӑ ҫынна чулпа перекенни те, арасланса тӑракан сурана тӑвар сапаканни те пулчӗ,—халӑх сӑмахӗ ай-ай тӑварлӑ!

Хӗрхенсе хута кӗрекенни те, юратаканни те тупӑнчӗ. Ҫак хыпара илтсенех Казаков районтан телефонпа калаҫрӗ, Саланов ҫул майӗн Саламписем патне кӗрсе тухрӗ, часах Пысӑк Нинӑран та ҫыру килчӗ — туссем пурте пӑшӑрханса ӳкнӗ-мӗн. Салампи вара вӗсене пӗчӗк Валерик ҫинчен тӗрӗссине йӑлтах пӗлтерчӗ. Унтан, ял Советне кайса, ача ятне хӑйсен ҫемйине ҫыртарчӗ.

Малтанхи кунсенче Валерика, ӑна тӑван ывӑл вырӑнне хурса, «хамӑн ачам» тени Салампие халӗ айванла, кулӑшла хӑтланнӑ пекрех туйӑнчӗ. Тӗрӗслӗхе ҫынсенчен мӗнле пытарса усрӑн-ха; юханшыва алапа мӗнле картласа чарӑн? Тата мӗншӗн пытарса усрамалла-ха ӑна? «Ача тунӑ хӗр» ҫине ҫынсем мӗнле куҫпа пӑхнине пӗлесшӗн пулнипе-и? Пурин кӑмӑлне пурпӗрех пӗлсе ҫитеймӗн, пӗлес тенисене пӗлнӗ ӗнтӗ... Чӑн, тӗрӗслӗхе пӗр-пӗччен пӗлсе тӑрасси питӗ йывӑр иккен.

Ял советӗнче ачана регистрациленӗ чух ҫын нумайччӗ, Коля та пурччӗ. Пӗчӗк Валерикӑн чӑн историне пӗлсен, вӑл калама ҫук савӑнчӗ, «Салампи! Эпӗ сана яланах ӗненсе, юратса пурӑнатӑп! Сан тӗрӗслӗхӳ пирки эпӗ пӗрре те иккӗленмен. Эпӗ сана пӗтӗм чунтан юрататӑп!» терӗҫ унӑн хӑмӑр куҫӗсем, Салампие ытарайми сӑнаса. Ял советӗнче илтнине вӑл каярахпа нумай ҫынна пӗлтерчӗ:

— Саламли инҫетри вырӑс хӗрарӑмӗн ачине усрава илнӗ! Ачин амӑшӗ вӑрҫӑра вилнӗ, тет, ашшӗ ӑҫти паллӑ мар, фронтра хыпарсӑр ҫухалнӑ, тет.

Ку хыпара илтсен, ун амӑшӗ те савӑннӑ пек пулчӗ, кантӑк умӗнче кивӗ хачча йӗппе сӑтӑрса ҫивӗчлетекенскер, ӗҫне пӑрахсах калаҫма пуҫларӗ:

— Малтанах чун сисрӗ ман, вӑл ача ҫуратнӑ тенине пӗртте ӗненес килмерӗ. Япӑх хӗре ман Валери ма юраттӑр? Хӗрне хам та ӗнтӗ тахҫантанпах куҫ хывса пурӑнатӑп, Валери таврӑнсан ҫавнах кин тӑвасчӗ ӗнтӗ, тетӗп. Таврӑнать пуль те-ха Валери Ҫӗнӗ ҫулсем тӗлнелле, тӗлӗкне те таврӑнас пекех куртӑм: колхоза кӗриччен ҫӳрен лаша пурччӗ пирӗн, ҫав хамӑр урама килнӗ пек те йӑмра айӗнче тӑрать пек, пуҫӗнче нӑхти пур, чӗлпӗрӗ ҫук пек (чӗлпӗр ҫукки ырра мар-та-ха вӑл), такки вара ҫав ута ҫилхинчен тытса, хамӑр килкартине ҫавӑтса кӗтӗм...

Пӗр-икӗ кун ялйыш Саламли ҫинчен сӑмах вакларӗ, ҫӑл умӗнчи хыпарҫӑсем киленсех калаҫрӗҫ.

— Эс пӗлместӗн-и, Саламли ют ачана усрава илнӗ вӗт? Ачи чӑвашла чухламасть, тит, вырӑс ачи, тит.

— Мӗнле пӗлмесп пулать? Ӗнер хам куҫпа хам куртӑм, ара, сӗт пама кайрӑм та. Ах, ачи хитре-ҫке, сарӑ кӑтраскер ҫав, пит ӑсторови!

— Эп хам та паян, ҫу пама кайсан, куртӑм: хӗвел пек сап-сар ача, ну-у мӑнттай куҫлӑскер-ҫке, Салампипе пит веҫолӑй калаҫать, пӗрмай «мама», тит. Кӑшт ҫу пухсаттӑм та, ҫавна кайса патӑм. Ӗнги сӗт хӑварнӑ вӗсен, пӗр стакан та памасть, тит. Верӑмран илмесен, сӗт-ҫуран типех вӗсем.

— Мӗнле хӗр ҫав Саламли: хӑйсем, ҫынсемпе танлаштарсан, пуян та пурӑнмаҫҫӗ, ҫапах ют ачана усрава илнӗ!

— Ара, ҫавна калани мар-и, качча каясскерех ача усрава илнӗ вӗт! Сами хорошши яш ҫынна каймалласкерччӗ вӗт!

— Ун пек хӗршӗн качча каясси кая юлмӗ-ха: шӑтӑклӑ шӑрҫа ҫӗрте выртмӗ, теҫҫӗ. Ҫав тери хӗр те килтех ватӑлсан—каччӑсене куҫран сур вара! Унашкал хӗрсене пирӗн вӑхӑтра, ӗлӗксенче, ҫу кунӗнче ҫунапа катаччи чуптарнӑ—вӑт сана ҫӑварни! Унашкал хӗр ют яла качча каяс пулсан, туйӗнче пӗтӗм ял каччи ҫапӑҫма тухатчӗ, ҫич ютран килнисене вара уй хапхи хупсах, ялтан кӑларса ямасӑр хӗнетчӗҫ, кӳмисене ӳпӗнтеретчӗҫ, хӑмӑт пӑявӗсене касса тататчӗҫ. Ҫаплаччӗ... Эс мӗн-ха... Саламли каяйманшӑн ытла ан хуйхӑрха, ачам, хӑварӑн та килте Маруҫ пур-ха. Хай, тем тесе каламасп та, ҫын куҫӗнчи ҫӳппе курма ҫӑмӑл вӑл...

— Ан тавлашӑр-ха эсир кунта... Виҫӗмкун арманта тавлашни ҫитмен!.. Эх, кӑмӑлӗ те ҫав Салампин! Тахӑшне хунӑ вӑл хӗр: амӑшӗ те хытӑ, усал карчӑк, ашшӗ те ытла мӗнех марччӗ... Шел, хамӑн авлантармалли ывӑл ҫук...

Ялйыш хӑйне ырӑпа асӑннӑ кунсенче Салампин татах чуна ыраттармалли тупӑнчӗ. Пӗчӗк Нина ҫырса пӗлтерчӗ: вӑл Алмазовпа Муза пӗрле ҫӳренине каллех темиҫе хут курнӑ иккен.

Саламли, хӑйӗн хуйхине никама пӗлтермесӗр, вӑрттӑн асапланчӗ, ҫынсемпе пурпӗрех ӑшшӑн кулкаласа калаҫма тӑрӑшрӗ, ачипе нихҫанхинчен ачашрах пулчӗ. Пӗччен хуйхӑрма питех те йывӑр, ун пек чухне хуйхӑ этем чӗрине тимӗре тутӑх ҫинӗ евӗрлех ҫиет; пӗччен ҫын, ним тума пӗлеймесӗр, иртнӗ ҫутӑ кунсене аса илсе кӑшт та пулин йӑпанма тӑрӑшать.

Саламли умне иртнӗ кун мӗлкисем яр-уҫҫӑн тухса тӑчӗҫ. Институтри хаваслӑ та шавлӑ кунсем, хавхалантаруллӑ лекцисем, тавлашусем, собранисем, тӗрлӗрен кружок занятийӗсем, кроссем, практикӑллӑ занятисем, театра, концертсене кайнисем, асран кайми туссем... Алмазовпа иккӗшӗ тӗл пулнисем, каҫсерен ҫумӑра е ҫил-тӑмана пӑхмасӑр калаҫса ҫӳренисем, пӗрле ӗмӗтленнӗ ӗмӗтсем, пӗрле шухӑшланӑ шухӑшсем... Анатолий хӗрсе кайса, чунтан хавхаланса Константин Иванов, Ҫеҫпӗл Мишши, Геннадий Воробьев пек пултаруллӑ чӑваш ҫамрӑкӗсем ҫинчен сехечӗ-сехечӗпе калаҫма пултаратчӗ. Ӑна итлесе, Саламли хӑйте чунӗпе хӑпартланса, хастарланса каятчӗ. Алмазов хӑй ӗҫӗнчи, вӗренӗвӗнчи йывӑрлӑхсем ҫинчен ытлашши нумай каламастчӗ пулин те, ҫав йывӑрлӑхсем мӗн тери пысӑккине Саламли питӗ лайӑх туятчӗ, ҫавӑнпа унӑн май килнӗ таран, вӑй ҫитнӗ таран тусне пулӑшас килетчӗ. Хӑйне нумай каччӑ куҫ хывнине, юратнине, ҫывӑхрах пулма тӑрӑшнине Саламли лайӑхах сисетчӗ, анчах темшӗн ҫав каччӑсем унпа пурнӑҫ ҫинчен мар, ним тӗшне тӑман япаласем ҫинчен ҫеҫ кулкаласа та выляркаласа калаҫни, хӑйсен шучӗпе «чиперкке пикене» ҫӑмӑлттай сӑмахсемпех юрама тӑрӑшни пурнӑҫ шухӑшлӑ хӗре питӗ кӳрентеретчӗ. Алмазов, Саламли илемне асӑрхаман пекех, унпа юлташла калаҫатчӗ, ӑна хӑйпе пӗртан ҫын вырӑнне хисеплетчӗ. Ҫакӑ илӗртрӗ-ши Салампие? Ҫамрӑксем шавланӑ хушӑра вӑл сасартӑк тем шухӑша кайса ларатчӗ, ун пек чухне куҫхаршийӗсем хушшипе выртакан йӗрӗ пушшех тарӑнланатчӗ, хӑй такама тарӑхнӑ сӑнлӑ курӑнатчӗ. Тен, ҫакнашкал самантра асӑрхаса, яланлӑхах астуса юлман-ши ҫав сӑна Саламли? Питӗ ҫирӗп ҫын пек, вӑйлӑ та тӳрӗ чунлӑ пек туйӑнатчӗ ӑна Алмазов. «Я схвачу судьбу за горло!» терӗ вӑл пӗррехинче вырӑсла, Бетховен сӑмахӗсене аса илсе, хӑйӗн йывӑр пурнӑҫӗ ҫинчен асӑннӑ май. Вӑл консерваторирен лайӑх вӗренсе тухасса, пур йывӑрлӑха-чӑрмава, пур «кӗрхи шӑнасене» ҫӗнтерессе Саламли чун-чӗререн ӗненсе, шанса тӑратчӗ. Тен, ҫакӑншӑн юратрӗ вӑл Тольӑна? Яланах ӗҫлекен, вӗренекен, кӗрешекен ҫын пек туйӑнатчӗ ӑна Алмазов. Анчах мӗншӗн вӑл, пурнӑҫра вут чулӗ пек ҫирӗпскер, юратура ҫапла пулмарӗ, мӗншӗн хӑвартах Муза майлӑ ҫаврӑнса ӳкрӗ? Муза йышши ӑс вылятакан, ҫӑмӑл шухӑшлӑ хӗрсене нихҫан та ӑмсанмастчӗ-ҫке вӑл?

Саламли ҫакнашкал шухӑшсемпе асапланнӑ кунсенче Алмазовран хӑйӗнчен ҫыру килчӗ.

Пӗтӗм иккӗленӳллӗ шухӑшсене ҫак ҫыру татса парас пек, Саламли хаклӑ канверта чӗтрекен аллисемпе чылайччен ҫавӑркаларӗ, адрес ҫинчи кашни саспаллинех тинкерсе сӑнарӗ, почтӑра ларакан темле тирпейсӗр хӗр Алмазов ячӗ ҫинех штамп шаплаттарнӑшӑн та кӳренчӗ вӑл, вара канверта пӗр пусӗнчен хачӑпа касса уҫрӗ те... пысӑк хут листи ҫине вӗтӗ саспаллисемпе кӑшт ҫеҫ ҫырнине курсан, чӗри ыратса кайрӗ. Вӑл хӑйне хӑй ӗненмен ҫын пек, ҫырӑва темиҫе хут вуласа тухрӗ:

«Саламли! Хамӑр тӗл пулайманшӑн питӗ хытӑ пӑшӑрханатӑп. Эсӗ мана Атӑл хӗрринче кӗтнине халь тин ӑнсӑртран пӗлтӗм: Пӗчӗк Нина каласа кӑтартрӗ. Вӑлах мана эсӗ институтран мӗншӗн пӑрахса кайнине пӗлтерчӗ. Леш каҫхине Муза мана кинотеатр патӗнче ӑнсӑртран тӗл пулчӗ те ҫӗнӗ фильм курма чӗнчӗ. Вӑл мана эсӗ кӗтсе тӑни ҫинчен пӗр сӑмах та шарламарӗ, сана Вирьялов ҫураҫнӑ, тесе ҫеҫ каларӗ тата сан темле ача пур, теҫҫӗ, терӗ. Ку хыпарсем мана калама ҫук хуйхӑртрӗҫ, эпӗ ҫапах, куҫран ӳксе ҫӳрес мар тесе, никамран та ыйтса пӗлме шутламарӑм, тепӗр куннех Хусана тухса кайрӑм. Халӗ ҫавӑншӑн хама хам ятлатӑп. Муза мана улталанине халь тин, Нинӑпа калаҫнӑ хыҫҫӑн, ӑнлантӑм. Анна Ивановна мана кӑштах ӳпкелесе те илчӗ. Ҫапла пулса тухнишӗн кама айӑплас ӗнтӗ? Йӑлтах кӗтмен ҫӗртен пулса тухрӗ. Питӗ курса калаҫас килет санпа. Эсӗ хирӗҫ ҫырасса кӗтсех пурӑнатӑп.

Сана чунтан хисеплекен—А. А.»

Темиҫе хут вуласан та, Саламли ҫак кӗске ҫырура хӑй мӗн шыранине тупаймарӗ. Алмазов хӑйӗн ятне пӗтӗмпех ҫырманни те кӳрентерчӗ ӑна, сахал ҫырни те ҫырлахтармарӗ; «сана чунтан хисеплекен» тени вара питӗ сивӗн, темле официальнӑй ҫырури сӑмах ҫаврӑнӑҫӗ евӗр туйӑнчӗ. «Хисеплекен», пӑшӑлтатса илчӗ вӑл кӑмӑлсӑрланса. Ҫавӑнтах ӑна хӑйӗн дневникӗнчи сӑмахсем аса килчӗҫ: «Уважение выдумали для того, чтобы скрывать пустое место, где должна быть любовь». (Кӑна Анна Каренина хӑйӗнчен Вронский сивӗннине пӗлсен калатчӗ пулас?..) «Ҫук, юратман вӑл мана; хам суккӑр

пулнă пирки вăл манпа ытахальтен çÿренине те сисмен,—шухăшларĕ хĕр.— Эпĕ ача усрава илни çинчен вăл пĕрре те асăнмасть, Валерик ăна кирлĕ те мар пулас, анчах эпĕ Валериксăр мĕнле пурăнам халĕ? Ырлать-и вăл мана тăлăх ачана усрава илнĕшĕн, хурлать-и? Кирлĕ-и эпĕ ăна халь, çук-и? Вăл, мăнкăмăллăскер, хăйне нихçан та айăплас çук, каçару ыйтас çук. «Çапла пулса тухнишĕн кам айăплă ĕнтĕ? Йăлтах кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ», тет. Кĕтмен çĕртен-ши? Ан тив, эпир пĕр-пĕрине кĕтмен çĕртен тĕл пулнă, тейĕпĕр, анчах эпĕ ăнсăртран юратрăм-и? Эсĕ Музăпа кино курма ăнсăртран кайнă, тейĕпĕр, анчах кайран мана ăнсăртран пĕр хушă манса пурăнтăн-им? Эпĕ те Валерика кĕтмен çĕртен тĕл пултăм, анчах Муза ун чухне садран тухса тарчĕ, эпĕ тăрса юлтăм, тăлăх ачана тытса ачашларăм — ку каллех ăнсăртран-и? Çавăн хыççăн Валерик асăмран кайма пĕлмерĕ, пĕрмай унăн телейсĕр шăпи çинчен шухăшларăм, ăна хам ывăл тума шут тытрăм—ăнсăртран-и? Çук, Анатолий, ку пĕрре те ăнсăртран мар, эс калашле кĕтмен çĕртен мар,— йăлтах хам шутласа хунă пек пулса тухрĕ; çапла пулмалла та вăл, урăхла пулма та пултараймĕччĕ! Уйрăлтăмăр эпир санпа тахçанах. Акă, эсĕ çырăву айне хушаматна та çырмастăн, инициалсем çеç лартатăн, каллех çын умĕнче кусăран ÿкмелле пуласран шикленетĕн пуль. Анчах эпĕ апла мар, юрататăп пулсан — хам юратуран вăтанассăм çук, ăна çынсенчен пытарассăм та çук... Пĕлместĕн, Толя, ман кăмăла...»

Саламппи çыру вуланă чух Валерик шалти пÿлĕмре çывăратчĕ, «кукамăшĕ» тĕпелте ун валли çăм чăлха çыхса ларатчĕ. Саламппи çырăва Валерикăн картинкăллă кĕнеки хушшине хучĕ те, пальто тăхăнса, сада тухрĕ.

Кĕрхи сад ăна кичеммĕн, йăлтах çаралса юлнăн туйăнчĕ. Ура айĕнче çумăрпа çĕрнĕ çулçăсем кĕççеленсе выртаççĕ, сукмак çинче пылчăк çăрăлать, карта çинче халĕ çеç хутса кăларнă, çĕрĕк шăршăллă кантăр çурăмĕсем çакăнса тăраççĕ. Улмуççисем çумăрпа шапарса, сивĕпе кÿтсе лараççĕ; çанталăк тĕксĕм, ниçта пĕлĕт уççи курăнмасть, йĕпхÿ пĕрĕхет.

Алмазов çырăвĕ халĕ Саламппие çак çанталăк евĕр салхуллă туйăнчĕ...

Саламппи пÿрт алăкне уçсанах, ăна хирĕç Валерик чупса пычĕ, хаваслăн калаçса-кулса, платье аркинчен çакăнчĕ:

— Мама! Пăх-ха, эпĕ мĕнле карттинсем сăрларăм, мама,—тесе Саламппие хăйĕн кĕнекине кăтартрĕ.

Валерика итлесе хаваслannă Саламппи сасартăках хăй пасăр çак кĕнеке варрине çыру хурса хăварнине аса илчĕ.

— Валерик, кунта хут татки пурччĕ, ăçта хутăн эс ăна?—ыйтрĕ вăл вырăсла.

Вучах умĕнче тĕрмешекен карчăк шикленсе ÿкрĕ.

— Кирлĕскерччĕ-и хучĕ?

— Мама, эпĕ вăл хута кукама хуран айне хума патăм, вут чĕртме,—терĕ сăмаха ялан тÿрĕ калама вĕреннĕ ача.

— Кирлĕскерччĕ-и хучĕ, Саламппи, ах, чĕре çурăлсах кайрĕ, хам та пăхмарăм, пит кирлĕскерччĕ пуль?—хытах пăшăрханса каларĕ карчăк.

Хĕрĕ пĕр хушă ним калаймасăр тăчĕ, унтан хавасла Валерика çĕклесе хăй çумне пăчăртарĕ те питĕнчен виçĕ хут чуптурĕ.

— Çук, кирлĕскерех марччĕ,—терĕ вара хуллен.

Тепĕр кунне Саламппие колхоз правленине чĕнтерчĕç.

— Ларăр, Акрамова юлташ,—терĕ ăна парторганизаци секретарĕ Борисов, пукан сĕнсе; хăй лармарĕ, чÿрече янаххи çумне таянса тăчĕ те, пысăк хура куçĕсене пĕр сиктерми, Саламппи çине тинкерсе пăхрĕ, кивелнĕ кителĕ çинчи аялти тÿмине вăраххăн тÿмелерĕ, темшĕн каллех вĕçертрĕ, унтан председатель еннелле çаврăнчĕ.

Колхоз председателĕ Федор Иванович Яшманов, хĕр пек хĕрлĕ сăнлă, шап-шурă çÿçлĕ, сухалсăр старик, Саламппи умне пырса ыйту палли пек кукăрăлса, курпунне кăларса тăчĕ те калас тенĕ сăмахне каласа пĕтерейместен хăранă евĕр, питĕ васкаса, тытăнчăклăнрах калаçма пуçларĕ.

— Санпа-санпа калаçса пăхас, терĕмĕр, Саламппи. Халĕ-халĕ мĕнле эсĕ, института каймастăн-каймастăн, терĕç-и çав?

— Анне питĕ вăйсăрланчĕ, пÿртре те аран çÿрекелет,—терĕ Саламппи, ун çине аялтан çÿлелле пăхса, Борисов еннелле çаврăнчĕ те хуллен хушса хучĕ:—йывăр пулать кăçал вĕренме, Валерик та...

«Кăшт чăрмантарать», тесшĕнччĕ вăл, анчах тем шухăшласа илчĕ те—шарламарĕ. Вăл мĕн каласса сиснĕ пекех, Борисов сăмах хушрĕ:

— Ну, мĕнле ÿсет сирĕн Валерик?

— Чиперех.

— Апат-çимĕç енчен мĕнле? Сирĕн ĕне сĕт типĕтнĕ, теççĕ мар-и?

— Халлĕхе сĕт-çуне хамăр кÿршĕсем паркаларĕç, малашне хамăнах йÿнеçтеркелес пулать.

— Фермăран парса тăмалла, — терĕ Борисов, председателĕ кусран пăхса.

— Паратпăр-паратпăр. Ун пирки халех счетовода калатпăр — распоряжени çыртăр. Сĕт-турăххан чару пулмасть-пулмасть, — терĕ васкаса Федор Иванович, унтан кăвак пуçне хуллен шăлса илчĕ те, юрлаnă пекрех, сăмах вĕçĕсене тăсса каларĕ:—Апла эсĕ, Саламппи, кăçал ялтах хĕл каçас тетĕн-и?

— Тепĕр кĕркуннеччен ялтах пурăнмалла ĕнтĕ. Çитес кĕркунне каллех института вара. Унччен колхозрах ĕçлес тетĕп.

Федор Иванович кăшкăру палли пек тÿрленсе тăчĕ те Борисов çинелле хаваслăн пăхрĕ.

— Çавăн пирки калаçса пăхас терĕмĕр сирĕнпе,—терĕ Борисов, хура куçĕсене вылятмасăр, Саламппи çине тинкерсе.—Хăвăр ăçта ĕçлесшĕн эсир?

— Мана пурпĕрех, кирек мĕнле ĕç хушсан та — ачаран колхозра ÿснĕ, пур ĕçе те чухлатăп.

— Кирек мĕнле ĕç мар-ха, эпир сана фермăна-фермăна ярасшăнччĕ... пăрусем-пăрусем пăхма,—пÿлĕне-пÿлĕне каларĕ Федор Иванович.—Мĕнле шутлатăн, кÿренмелле пулмĕ-и?

Хăй каллех ыйту палли пек кукăрăлса, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

— Мĕншĕн кÿренес-ха, эпĕ института зоотехнически отделенире вĕренетĕп-çке,—терĕ Саламппи, председателĕн кашни хусканăвне сăнаса.

Федор Иванович тÿрленсе ларчĕ, Борисов еннелле кăвак куçĕсемпе çеç кулкаласа пăхрĕ.

— Çавăнпа сире фермăра ĕçлеме хушас терĕмĕр. Унта пирĕн ĕçсем чаплах мар-ха, пăру пăхакансем япăх ĕçле пуçларĕç,—терĕ Борисов.

# Шыв транспорчĕ валли

**Сĕнтĕрвăрринчи пăрахутсем юсакан заводра нумаях пулмасть юханшыв тăрăх таварсем турттармалли контейнерсем туса кăларма пуçларĕç. Халиччен Атăл çинче ун пек контейнерсем çителĕксĕр пулнă, вак-тĕвек таварсене ытларах юри тунă тавар турттармалли е пассажирсем лартса çÿремелли пăрахутсемпе турттарнă.**

**Контейнер вак-тĕвек япала турттарма питех те ансат. Ăна кирек мĕнле баржа çине те тиеме пулать, кирек-мĕнле тавара та кирлĕ çĕре вăхăтра ăсатма май парать. Пăрахутсем юсакан заводра халĕ контейнер цехĕ ĕçлет. Цеха заводри ватă рабочи Петр Иванович Çолчин ертсе пырать.**



Ÿкерчĕкре: Юханшыв тăрăх тавар турттармалли контейнера баржа çине тиеççĕ.

**И. Никифоров** фотоÿкерчĕкĕ.

— Степанова Мария выраннe яратпăр сана, Маруç выраннe.

— Вăл ĕçрен тухать-им?

— Тухма тухмасть, питĕ кахалланса-кахалланса çитрĕ, ан тив, ĕçлетĕр кăшт сан помошница-помошница пулса,—терĕ Яшманов, вĕриленме пуçласа. Ăна Борисов пÿлчĕ.

— Еçлеме эсир, Акрамова, çак кунсенчех тытăнсан аванччĕ, анчах эпир сире хушса каламастпăр, хăвăр ирĕкпе тытăнăр,—терĕ Борисов, кительне тÿмелесе, вара пукан çине хунă пальтоне алла илчĕ, кайма хатĕрленчĕ.

— Эпĕ ыранах ĕçе тухма хатĕр,—пĕлтерчĕ Салампи.

— Вăт-вăт, Акрамовсен йăхне палласа илетĕп, аçу-аçу çаплаччĕ, ĕçсĕр пĕр сехет-пĕр сехет лараймастчĕ,—куçĕсемпе кăна кулса каларĕ Яшманов, унтан хĕрĕнни пек хĕрлĕ пичĕ те хавас кулăпа йăлкăшма пуçларĕ. Вăл чунĕпе питĕ ырă çын иккенне Салампи ачаранпах пĕлсе ÿснĕ. Федор Иванович ун ашшĕпе питĕ туслă пурăннă, иккĕшĕ пĕрле вăрçа кайнă, вăрçăран таврăнсан ялта совет влаçĕшĕн кĕрешнĕ, колхоз тунă. Салампи ашшĕ вилнĕренпех Федор Иванович колхоз председателĕнче ĕçлет. Салампи ăна хăйĕн ашшĕ выраннe хума хăнăхрĕ: Яшманов вĕсене вăрçă вăхăтĕнче сахал мар пулăшса тăчĕ.

— Эс унта Маруçсене-Маруçсене мах ан пар. Кун каçа пур çĕре те çитсе ĕлкĕрейместпĕр. Ферма заведующийĕ те юлашки вăхăтра ĕçкелеме пуçларĕ пулмалла. Халĕ-халĕ эсĕ, Салампи, ферма кайса кур, ак, Борисов та унта каять, пĕрле кайса кур, паллаш-паллаш унти ĕçсемпе. Сĕт-çу пирки ан пăшăрхан, паратпăр-паратпăр...

Салампи правленирен Борисовпа пĕрле тухрĕ те, иккĕшĕ фермăналла утрĕç.

Григорий Петрович Борисов вăрçăччене ялта чи ĕçчен колхозник шутланатчĕ, лайăх ĕçленĕшĕн ăна кашни уяврах премисем паратчĕç. Ун чухне ăна пурте Кĕркури тесе кăна чĕнетчĕç; вăл, çăмăл кĕлеткеллĕ хура каччă, пуринпе те кăмăллă калаçатчĕ, çурхи вăйăсенче ăна никам хăваласа çитейместчĕ, акатуйсенче ют ял каччисем ташласа ун çине тухаймастчĕç; хастар комсомолецчĕ, пур спектакльсенче те чи кулăшла рольсене вылятчĕ, стена хаçачĕ кăларатчĕ, таврара пĕртен-пĕр пултаруллă ялкор шутланатчĕ. Вăрçăччене кадровăй çарта службăра тăчĕ, хĕрĕх иккĕмĕш çулта Сталинград патĕнче йывăр аманса таврăнчĕ те авланчĕ, тĕплĕ çын тесе, ăна кладовщика лартрĕç, улттăмăш çул ĕнтĕ çав ĕçре çÿрет. Анчахрах ăна колхозри пуçламăш парторганизаци секретарьне суйларĕç.

Салампи Борисова ачаранпах пĕлет, анчах халиччен унпа ытла çывăх курса калаçманччĕ-ха, ĕçре те пĕрле пулманччĕ. Акă малашне пĕрле ĕçлемелле пулать ĕнтĕ; йывăр чухне те унран пулăшу ыйтмалла, пултараймасан та унран канаш ыйтмалла. Юрать-ха, çынни вăл кăмăллă. Авă, ним каличчен малтан Валерик çинчен ыйтса пĕлчĕ, ĕçлеме тытăниччен ĕç çăмăл пулас çуккине систерчĕ. Пĕркун, Валерик çинчен ялта никам та ним пĕлмен чухне, ача çинчен сăмах хускатмарĕ вăл, Салампие клубра лекци вулама хушрĕ — Салампи савăнсах килĕшрĕ. Хăй çавăн чухнех Борисова Валерик çинчен тĕрĕссине каласа паманшăн халĕ питĕ вăтанчĕ вăл.

— Выльăх-чĕрлĕх енĕпе пирĕн колхозăн мухтанмаллиех çук-ха, пăрусем ÿстерес тĕлĕшпе те питĕ кайра пыратпăр,—терĕ Борисов, васкаса утнă май. Унăн пальто аркине пылчăк сирпĕнсе сыпăçнă, хăрах атă кĕли кăштах уйрăлса кайнă; Григорий Петрович аманнă урине хуçлатмасăр, сĕтĕрсе утать.

«Нумай утать пулас, йывăр ăна», хĕрхенсе шухăшларĕ Салампи, унпа юнашар утма тăрăшса.

— Кăçал пăрусем валли çĕнĕ вите туса лартрăмăр ĕнтĕ, лайăх, темелле. Анчах телятницăсем малтанхи пекех япăх ĕçлеççĕ. Лена çеç тăрăшать, Маруçпа Таруç япăхланса кайрĕç. Эсир комсомолка, Акрамова, сирĕн фермăри çамрăксене хăвăр тавра пĕтĕçтерес пулать. Пĕлÿ те, культура та çителĕклĕ сирĕн—ыттисене те вĕрентес пулать. Акă, кăçал телятницăсене лайăх ĕçленĕшĕн, нумай пăру пăхса ÿстернĕшĕн ĕçкунĕ хушса памалли постановлени тухрĕ, фермăра ĕçлекенсене çавна лайăхрах ăнлантарса памалла. Клубра агрокружок занятийĕсем йĕркеллех иртеççĕ, зоокружок ĕçне халь те йĕркелесе çитерейместпĕр-ха. Кун пирки сирĕн те тăрăшмалла пулать, пире пулăшмалла пулать, Акрамова.

Салампи итлесе, килĕшсе кăна пычĕ, ним те хирĕçлемерĕ, ним те ыйтмарĕ.

— Мĕн пултарнă таран ĕçлес пулать ĕнтĕ,—терĕ вăл хăй пирки.

— Хăвăр çеç пултарнă таран ĕçлени çителĕксĕр, ыттисем те мĕн пултарнă таран ĕçлеччĕр,—хирĕçлерĕ Борисов, унтан шÿтлерех хушса хучĕ: — Эсир ĕнтĕ халь — хăвăр евĕр начальница, ытти телятницăсем сире итлеме тивĕç,—унтан кулмасăр каларĕ:—Вĕсем темиçе çул фермăра ĕçлеççĕ, эсир халь кăна пуçăнатăр, вĕсене итлеттерме çăмăлах пулмасть, астăвăр!

— Пĕлетĕп, çăмăлах пулмасть...

Фермăпа яла тарăн çырма уйăрса тăрать, çĕнĕ витесем лаштра йăмрасем айĕнче лараççĕ. Çырмари çăл умĕнче темиçе ĕне пылчăк çăрса тăрать, унтах пушмак пăрусем уткаласа çÿреççĕ, вĕсене паян никам та шăварман пулас.

— Водопровод çукки хуплать, анчахрах тума пуçăнтăмăр — хура кĕр çитсе чăрмантарчĕ, часах çĕр шăнать, çуркуннесĕр каллех тытăнмалли çук,—терĕ Борисов пăшăрханса. — Чи малтанах фермăсене шыв кĕртес тетпĕр. Ĕнесене витере усранă чух, пĕлетĕр, кашни пуçнех талăкне пилĕк-ултă витре шыв кирлĕ: шăварма та, çума та, инвентарь тасатма та. Ун чухлĕ шыв йăтса çитер-ха, хулсем хускалми пулаççĕ. Çапах та йăтмаллах. Çавăнпа калатăп та: çăмăлах пулмасть кунта ĕçлесси.

— Пĕлетĕп,—терĕ çеç Салампи.

Ферма картишĕнче вĕсем витерен тислĕк хырса кăларакан Ленăна тĕл пулчĕç.

— Здравствуйте! — тесе йăлкăшса кулчĕ те вăл, кĕреçе хăлхи çине хăрах урипе пусса тăчĕ, фуфайка çийĕн çыхнă сарлака чĕн пиçиххине туртса хытарчĕ, тутăр айĕнчен тухса кайнă сарă çÿç пайăркине тÿрлетрĕ.

— Салам, Михайлова! Пĕччен ĕçлетĕр-и? Маруçпа Таруç ăçта?—ыйтрĕ Борисов.

— Кăнтăрлахи апата кайрĕç те—таврăнман-ха.

— Ик-виçĕ сехет хушши апатланаç çĕ эппин. Шамбулкин кунтах-и? Ăçта вăл?

— Павăл анчахрах таçтан сулланса килчĕ те халĕ пÿртре: «Кончал!» тесе выртать.

— Ӳсĕр-и?

— Пĕлмелли çук унăнне. «Маруç инкĕшĕ хăй хăваланине икĕ стакан тыттарчĕ те — хăрнлаттартăм турă пулăшнипе», тесе выртать. Чĕнсе тухас-и?

— Ан чăрман, хамăрах кĕрсе куратпăр. Ну, Лена, паянтан сирĕн çĕнĕ работница пулать.

— Чăнах-и?—терĕ те хĕр, кĕреçине пăрахса, Салампие ыталаса илчĕ.—Кăçар, Салампи, вараларăм сана, хĕпĕртенипе пулчĕ. Эпĕ саншăн питĕ хавас. Мĕн ĕçе, Павăл выраннe-и, старши доярка выраннe-и?

— Çук, пăрусем пăхма,—терĕ Салампи кулмасăр.

Лена, пĕр хушă ăна ĕненмесĕр пăхса тăчĕ, вара каллех ыталарĕ.—Пĕрле ĕçлĕпĕр, Салампи! Эпĕ тем пек хавас!

Алăк патĕнче «хуп турттаракан» Павăл Борисов сассине илтсенех хăрлаттарма чарăнчĕ, салтакла хăвăрт сиксе тăчĕ те гимнастеркине турткаласа тÿрлетрĕ.

— Здрасте, Григорий Петрович! Салам, Салампи! Çумăра кура пулас, ыйхă пусса килчĕ. Çанталăкĕ те ав мĕнле: паян кунĕпех тăкать, те турри ÿсĕр, «хăй хăваланине» пĕр алтăр хăрнлаттарнă пулмалла. Иртсе ларăр.

— Таса мар сан кунта, Шамбулкин, ларма та шикленмелле,—тĕртсе илчĕ Борисов.

— Каларăм паян хĕрсене, штоп порядок пултăр, как в танковых частях, терĕм. Таçта кайса пĕтнĕ, пĕр Лена кăна тислĕк хырать; пыл хурчĕ пек, пĕрмай ĕçлет вăл.

— Ун пирки кайран калаçăпăр, каçхине, пурте пухăнсан. Халь акă, йышăн, çĕнĕ работница килчĕ. Паллаштарĕçпе.

Павăл сăнĕ сасартăках салхуланчĕ, кĕске кастарнă хĕрлĕ çÿçĕ шăртланнă пекех туйăнчĕ.

— Ман вырăна-и?

— Çук, Маруç выраннe.

— А-а-а... Эпĕ хавас! Мĕн паллаштармалли? Çирĕм пилĕк пăру пулать сан алăра. Хăçан апат памалли, шăвармалли, тасатмалли, уçăлтармалли—акă, распорядок дня пур пирĕн, акă, çырса çапнă, паллашма пултаратăр.

— Эсĕ малтан хуçалăхупа паллаштар, витене илсе тухса кăтарт,—астутарчĕ Борисов.

— Витене? Пожалстă, тархасшăн...

Шамбулкин малтан Лена пăхакан пăрусем патне ертсе кĕчĕ.

— Атя пĕрле, Михайлова, санне тĕрĕслетпĕр... Порядок в танковых частях!—мухтанса илчĕ вăл, таса кори-

дорпа утнӑ май, тирпейлӗ пӗчӗк пӳлӗмсене кӑтартса. Маруҫ пӑхакан пӑрусем патне ҫывхарнӑҫемӗн Павӑл самаях салхуланчӗ: кунта пӑрусен пӳлӗмӗсенче те, коридор урайӗнче те таса мар, ура пусма ҫук — тислӗкпе пылчӑк ҫӑрӑлса выртать. Кашни пӳлӗмре икшер ҫамрӑк пӑру, пӳлӗм алӑкӗсем ҫинче ят хӑмисем—пӑру ятне ҫырнӑ хӑма таткисем. Акӑ пӗр ят хӑми тислӗк ҫинех хӑйпӑнса ӳкнӗ, Павӑл ӑна хӑвӑрт пӗшкӗнсе илчӗ те малтанхи вырӑна майлаштарса ҫакрӗ.

— Танковӑй чаҫри йӗркесене ытла хӑвӑрт мантӑн пулас, Шамбулкин?—тӑрӑхласа илчӗ Борисов.

— Каларӑм эп вӗсене, Григорий Петрович, уборка тумасӑр апата ан кайӑр, терӗм. Итлеми пулчӗҫ...

— Танкист, танкист!.. «Кончал!» тесе выртатӑн эппин?

Павӑл вӗретнӗ рак пекех хӗрелсе кайрӗ, ним калаймасӑр шӑлне ҫыртрӗ — хӑлха айӗнче янах шӑмми выляса илчӗ; вӑл, тӗкме хатӗрленнӗ вӑкӑр пек, таканлӑ атӑ кӗлипе кукалесе, тислӗк купинчен шыв кӑларчӗ, пуҫне пӗксе тӑчӗ. «Тарӑхать,—шухӑшларӗ Саламп, ун ҫине куҫ хӳрипе пӑхса,—анчах мӗншӗн вӑл пӑру витине тасаттарман-ха? Калаҫма ытла ҫивчӗ калаҫатьҫке?»

Вӗсем вите пуҫӗнчи алӑкпа картишне тухрӗҫ те тислӗк купи умӗнче чарӑнса тӑчӗҫ.

— Мӗншӗн куна халиччен уя кӑлармарӑн, Шамбулкин?—ыйтрӗ Борисов, тислӗк купи ҫинелле кӑтартса.—Эсӗ, ферма пуҫлӑхӗ, ҫакна тума та колхоз председателӗ е парторганизаци секретарӗ асӑрхаттарасса кӗтсе пурӑнтӑн-и? Е эсӗ ху кунта заведующи пулнине асӑнтармалӑх Хеопс пирамиди ҫӳлӗш тислӗк купи тӑвас терӗн-и?

— Ун пекех ан калӑр-ха, Григорий Петрович. Мӗскер пирамиди пултӑр. Нимпе те алӑ ҫитмерӗ. Ыранах йӑлт тасататпӑр,—терӗ Павӑл, Саламп ҫине именчӗклӗн пӑхса илсе.

— Танкист, танкист... Куратӑр, Акрамова, сирӗн ӗҫ ҫӑмӑлах пулмасть.

— Тислӗкне ӑна, пурте харӑс тытӑнсан, пӗр виҫӗ кунтанах тасатса пӗтерме пулӗччӗ,—сӑмах хушрӗ Саламп.—Фермӑри ӗҫсене мӗнлерех механизациленине пӗлес килет манӑн.

Павӑл ун еннелле кӑмӑлсӑррӑн пӑхса илчӗ.

— Мӗн механизацийӗ? Хӑвӑрах куратӑр: водопровод ҫук, ытти колхозсенчи пек рельсӑллӑ ҫулсем ҫук, вылькӑх апат-ҫимӗҫне витене тачкӑпа е лӑпӑпа йӑтмалла.

— Кормозапарник пур-и?

— Пур,—ирӗксӗртереххӗн, кормозапарник пуршӑн тарӑхнӑ пекрех каларӗ Павӑл.—Вӑл та пулмасан вара—тух та тар фермунтан! Корнерезка пур, жмыходробилка пур, тачкӑсем пур, терӗм, тата мӗн пур? Силосорезка ҫук, картофелемялка ҫук, корнеклубнемойка ҫук тата тем те пӗр ҫук — вӑт сана механизаци! Ӗне ферми, теҫҫӗ. А пуриншӗн те завфермой отвечай!—хӗрсе кайсах каларӗ Шамбулкин.—Тӑрӑшман мар эп, ял пӗлет...

— Тислӗк тасатма та силосорезка е картофелемялка кирлӗ-и? Колхоз кӑҫал мӗн чухлӗ ҫӗнӗ стройка тунине ху пӗлетӗн. Пурне те пӗр харӑс туянмашкӑн пирӗн колхоз халлӗхе миллионер мар-ха,—хирӗҫлерӗ Борисов.—Пултарнӑ таран тӑрӑшса ӗҫлеместпӗр, ака мӗн, ҫавӑнпа картишӗнче Египетри пирамидӑсем ҫӳлӗш тислӗк купаланса выртать, ав, карта урлах курӑнать, аякранах...

— Ыранах тасатма тытӑнатпӑр, Григорий Петрович.

— Ыранхи кунӑн вӗҫӗ-хӗрри ҫук, теҫҫӗ выраҫсем... Кӗҫӗр фермӑра ӗҫлекенсене пурне те пухӑнма хуш—калаҫу ирттерӗпӗр. Акрамова, эсир те вӑхӑт тупса килме тӑрӑшӑр... Ну, мӗнле, фермӑри ӗҫсем хӑратмаҫҫӗ-и ӗнтӗ халӗ? Пӗрре те эсир вӗреннӗ кӗнекесем ҫинчи пек мар вӗт?

**Тунсӑх**

**Николай АЛЕКСАНДРОВ**

**Хушӑмӑрта халь—темиҫе пин ҫухрӑм,**  
**Хушӑмӑрта халь—темиҫе эрне.**  
**Шухӑшӑмпа сана ҫитсе чуптурӑм,**  
**Асран кайман хитре чӑваш хӗрне.**

**Кашни кунах санпа эп тӗл пулатӑп,—**  
**Кичем мана, салху мана пӗччен.**  
**Сан ҫырӑвна ҫӗр хут та пуль вулатӑп**  
**Хӗр-почтальон тепре йӑл куличчен.**

**Асатнӑ чух эп пӗртте шутламанччӗ**  
**Чӗре кун пек туртса ыратасса.**  
**Вӑл, ачашскер, аманмаллах аманчӗ,**  
**Анчах вӑл пулӗ ӗмӗрех таса.**

**Эс ҫук тесе тӗлпулусем шырамӑп,**  
**Туйӑмсене таҫта сапаласа.**  
**Сана виҫ ҫул курман пек**  
**тунсӑхлатӑп,**  
**Ҫунса кӗтетӗп эс таврӑнасса...**

— Ыран ӗҫе тухатӑп,—терӗ Саламп кӗскен.

Каҫхине вӑл Ленӑпа пӗрле фермӑна кайрӗ. Ҫынсем пухӑнса ҫитиччен Павӑл ӑна ӗнесене хӑҫан чуптарнине тата вӗсем хӑҫан пӑруламаллине ҫырса пынӑ календарьпе паллаштарчӗ. Маруҫпа Таруҫ Салампие сӑмах та чӗнмерӗҫ, сывлӑх та сунмарӗҫ, Маруҫӗ ун ҫине пӗрмай шурӑ куҫпа пӑхса ларчӗ. Пуху виҫӗ сехете яхӑн пычӗ. Борисов, Яшманов, Шамбулкин калаҫрӗҫ, хастар чӗреллӗ Лена та Маруҫпа Таруҫ ӗҫӗсене тиркесе, ҫивӗч сӑмах каларӗ.

Ҫак каҫранпа вара пӗрле ӳснӗ хӗрсем хушшинчи ҫула хура кушак татса кайрӗ...

Саламп фермӑран час таврӑнаймарӗ пулин те, амӑшӗ ҫывӑрман, лампа сӳнтермен.

— Ҫанталӑк шӑнтать-и?—ыйтрӗ кӑмака ҫумӗнчи сак ҫинче выртакан карчӑк, хӗрӗ хывӑнса ҫиме ларсан. Амӑшӗ темшӗн пӑшӑрханса калаҫнине Саламп тӳрех сисрӗ.

— Ҫук-ха, тепӗр эрнесӗр шӑнтас пек мар. Тем пулмарӗ пуль-ҫке, анне, эсӗ питӗ салхуллӑ?

Амӑшӗ пӗр хушӑ чӗнмесӗр выртрӗ те йынӑшса каларӗ.

— Кӳршӗсемпе хирӗҫтеретӗн-ҫке, хӗрӗм. Пуринпе те хирӗҫӗве кӗрсен—мӗнле пурӑнӑпӑр? Ырӑ кӳршӗ—ҫур пурнӑҫ, теҫҫӗ. Кӳршӗ усал пулсан, пурнӑҫ саланасси инҫех мар, хӗрӗм.

— Мӗн пулчӗ, анне?

— Каҫхине Маруҫ инкӗшӗ килчӗ те тем те пӗр каласа, ылханса хӑварчӗ. Мӗншӗн ҫын ҫине тӑрсах ҫав ӗҫе кӗме килӗшрӗн, хӗрӗм, урӑх ӗҫ ҫукчӗ-им сан валли — хут пӗлмен ҫын мар вӗт эсӗ?

— Хушрӗҫ мана, анне, итлемесен юрамасть. Ман пирки ан пӑшӑрхан пӗрре те. Маруҫ инкӗшӗ вӑрҫни никамшӑн та темех мар-ха; пӗлместӗн-им, ҫирӗк ҫулҫи ҫилсӗрех вӗлтӗртетет...

Тепӗр кунне ирех Саламп кивӗ фуфайка, ҫӑран атӑ тӑхӑнчӗ, вӑрӑм ҫивӗтне пуҫ тавра кӑшӑлласа, хулӑн тутӑр ҫыхрӗ те фермӑна тухса кайрӗ...

... Пурнӑҫ — театр мар. Этем ӗмӗрӗ мӗнле иртнине хӑшпӗр спектакльре виҫ-тӑватӑ сехетрех куратӑн, унта кашни минутрах кулӑшла е хӑрушӑ ӗҫ пулса иртет, кашни минутрах актерсем савӑнаҫҫӗ, хуйхӑраҫҫӗ, тавлашаҫҫӗ, юратаҫҫӗ, пӗр-пӗрине вӗлереҫҫӗ, ҫӑлаҫҫӗ, ылханаҫҫӗ... Анчах этем ӗмӗрӗ виҫтӑватӑ сехетре вӗҫленмест. Никама ылханмасӑр, ҫӑлмасӑр, юратмасӑр унӑн пурнӑҫӗнче кунсем, эрнесем, уйӑхсем е хӑш-пӗр чухне ҫулсем те майӗпен иртсе пыраҫҫӗ.

Виҫӗ уйӑх ир те каҫ Саламп фермӑра иртгерчӗ. Мӗнле паллӑ ӗҫ, ӗмӗр асра юлмалли ӗҫ пулса иртрӗ-ши унӑн пурнӑҫӗнче ҫак вӑхӑтра? Нимех те. Ҫанталӑк шӑнтсан, Валерика ӑшӑ пальто илсе парас тесе, Саламп хӑйӗн чосӑнкине, икӗ платьине сутрӗ; пӗчӗк ҫунашкапа йӗлтӗр илме, тӗрлӗрен ача япалисем илме тесе, хӑй валли икӗ ҫул пухнӑ ҫӑма сутса ячӗ. Колхоз ӑна аванс шучӗпе тырӑ, сӗт-ҫу пачӗ. Ҫапах пӗр тайӑлнӑ пурнӑҫа ура ҫине тӑратасси—ҫӑмӑл ӗҫ мар.

Фермӑра тӑрӑшса, пӑлханса, юлташсемпе тавлашса, хирӗҫсе, ӑмӑртса ӗҫлени ӗмӗрлӗх асра юлас ҫук: кирек ӑҫта пулсан та, пурпӗрех ҫапла тӑрӑшса, пӑлханса, ӑмӑртса ӗҫлес пулать. Пурнӑҫ пӗр пек шӑвӑнса пырать: кашни кунах фермӑра—ӗҫ, килте—кӗнекесем, Валерик...

Ҫук, пурнӑҫра та асран кайми самантсем пулаҫҫех, анчах вӗсем сцена ҫинчи пек хӑвӑрт мар, питӗ вӑраххӑн ҫывхараҫҫӗ; ҫуллахи ҫанталӑк темиҫе эрне уяр, шӑрӑх тӑнӑ хыҫҫӑн аякри ҫумӑр пӗлӗчӗ ҫапла вӑраххӑн ҫывхарать...

*(Малалли пулать.)*

# ИÇĔМ ÇЫРЛИ ПАХЧИ

*Лирикăлла поэма*

Илья ТУКТАШ

Пирĕн Совет çĕршывĕн чи пуян та илемлĕ кĕтесĕсенчен пĕри Крым шутланать. Ана тивĕçлипех «Хĕвеллĕ çĕршыв», «Чечек пахчи», «Телей утравĕ» тесе ят панă.

Анчах та Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çав «Чечек пахчи» нумай уйăхсем хушши тăшман мăшкăлне тӳссе пурăннă. Ана тыткăнран хăтарасси мухтавлă Совет Çарĕпе совет çыннисен хĕрӳллĕ ĕмĕчĕ пулнă.

Крыма нимĕç фашисчĕсенчен тасатас çапăçусенче пирĕн чăваш халăхĕн шанчăклă ывăл-хĕрĕсем те паттăрла кĕрешнĕ. Вĕсем уйрăмах партизансен отрячĕсенче хĕрӳллĕн çапăçнă...

Ку поэмăна автор архив материалĕсем тата уйрăм партизансен калавĕсем тăрăх çырнă. Эпир ăна Крыма тăшмансенчен тасатнăранпа кăçал вунă çул тултарнă май кĕскетсе пичетлетпĕр.

——— о ———

## ТЫТКĂНРИ ЮРĂ

Бахчисарайăн айлăмĕ
Асап утравĕ майлă мĕн...

Пахчи-пахчи, улма пахчи,
Пахчисерен шăлан çырли.
Суранлă-çке чĕри кашнин —
Хур турĕ çичĕ ют çынни.

Вĕрсем, вĕрӳçĕ çил, вĕрсем,
Асапăма сирсе эс яр!
Тăван çĕршывăн хĕрĕсем
Тăшман кулли пуласшăн мар.

Бахчисарайăн айлăмĕ
Асап утравĕ майлă мĕн...

## ВĂРМАН КАШЛАТЬ

Ентĕ вăрман кашлать,
Вăрман кашлать,—
Турат çумне турат
Хушас тет пуль...
(Халăх юрри).

Пĕр капланчĕ, пĕр çĕкленчĕ
Вутлă тăвăл иксĕлми.
Тинĕс хумĕ пек кисренчĕ
Хура халăхăн çилли.

Асатте хĕçне хăйрарĕ,
Сенĕк тытрĕ асанне.
— Сĕм вăрманăм, хӳтлĕх пар эс,
Хуйха сир эс пирĕнне!

Эй, çĕкленĕр, ут йĕнерлĕр,
Вут чĕреллĕ йĕкĕтсем!
Аслати çунтарнă евĕр
Пĕтчĕр ирсĕр фашистсем.

Кар пуçтарăнчĕç, вĕçтерчĕç
Юланутлă йĕкĕтсем;
Тапрĕç-сикрĕç, çĕр чĕтретрĕç
Йĕс таканлă учĕсем...

## ХАН КЕРМЕНĔНЧЕ

Леш енчен пăхсан—
Тăсăлать шур çут,
Виноград пахчи—
Ку енчен пăхсан.
Пахчара кĕçĕр
Никамах та çук,
Урама яшсем
Усăлма тухман.
Ав, лере кăна,
Хан керменĕнче ,
Хăлхана çурать
Айхашуллă сас;
Брудер-шафт ĕçме
Такама сĕнсе
Çухрашать пĕр май:
«Битте! Вас ист дас?!»
Чăсланка кăна
Усĕр офицер
Чăмăртать шыçмак
Пĕр хĕрарăма;
Тĕтĕмпе пĕрех
Ĕçсе супнăскер,
Чуптăвать ăна,
Юратма хушса...

## ИК ÇИВĔТЛĔ ХĔР

— Господин офицер,
Господин офицер!
Виноград пахчинче
Вырăс йăхĕ иккен...
Алла лекрĕ пĕри,
Мăшăр çивĕтлĕскер;
Допрос тăвăр халех,—
Партизанка-и, тен?
Юпа пек хытса тăчĕ деньщик:
«Мĕншĕн ку самантра çитрĕм-ши?»
Шарламарĕ офицер
нимĕскер;
Сиввĕн тĕртрĕ кăна
юххана,
Кăшт хускалчĕ унтан
вырăнтан:
— Илсе килĕр кунта!..

## ДОПРОС

Çивĕтрен сĕтĕрсе туртса тухрĕç ăна;
Аллине хыçала туртса çыхнă иккен.
Ак пуçланчĕ допрос. Тĕлĕрен пахчана
Çамрăк хĕр йынăшни вăратать ерипен.

— Партизанка, кала:
Сирĕн пуçлăхăр кам?
Хăш тĕлте пытанса
Пурăнаççĕ вĕсем?

Çамрăк хĕр ответлет:
— Эп пĕлместĕп, такам...
Тăшмана сутăнмаççĕ
Совет хĕрĕсем!—

— Партизанка, кала:
Эс пĕлен пулĕ, тен,—

Вырăс çарĕн хăвачĕ
Çитет хăçанччен?
Çамрăк хĕр ответлет:
— Тăшмана тĕппипе
Аркатса тăкиччен!

Сиксе ӳкрĕ офицер,
Шăртланса çитнĕскер;
Ярса тытрĕ хĕре
çивĕтрен,
Туртса çапрĕ питрен...

## ПАРТИЗАН КУЧЧЕНЕÇĔ

Нумайччен муритлерĕç хĕре,
Анчах вăл пĕр сăмах та чĕнмерĕ.
Ăшра çеç кураймалăх вĕрет
Çичĕ ют мăшкăлне лекнĕскерĕн.
Кобурне хыпашлать офицер:
— Илсе кайăр йытта! Çыхса хурăр!
Адъютант хуравлать:
— Анланап, майн герр...
Юнпала вараланмĕ кобурăр...—
Акă çыхрĕç хĕре кĕмĕл тополь çумне.
Ерипен çĕкленет пистолет...
Шăлне çыртрĕ пике, çирĕплетрĕ чунне.
Офицер куçне хĕсрĕ. Тĕллет...
Кĕреслетрĕ залп.
Персе ӳкрĕ çĕре,
Анчах ӳкрĕ хĕр мар,
Ӳкрĕ ирсĕр палач,—
Каçхи пуля шырать ютсене çеç...
Тăшманпа урăхла халĕ ан та калаç!
Акă вăл партизан кучченеçĕ.

## САЛТАКСЕМ ИРТЕÇÇĔ

Пулкки-пулкки, салтак пулкки!
Пулккисерен маттур каччи.
Чĕре тулли, вунçич çулхи
Чун пек савнийĕ пур кашнин.
Пулкки-пулкки, салтак пулкки
Утса иртеççĕ васкаса,
Асран кайми хĕрсем çинчен
Мухтавлă юрă юрласа:
«Тух-ха, тусăм, шăнкăравлă айлăма!
Каçĕ пĕртте вăрçă каçĕ майлă мар.
Сенкер пĕлĕт çут чаршав пек уçăлать.
Шурăмпуç те куçне усрĕ. Çутăлать.
Тавракурăм шупкалать те хĕрелет,
Алтăр çăлтăр пуçне усрĕ çĕрелле;
Пин-пин ылтăн тăкса ячĕ çĕр çине
Илĕртмешкĕн ыйхи вĕçнĕ хĕрсене.
Сывлăм ӳкрĕ, шăрçаларĕ пахчана...
Савнă тусăм тунсăхлать пуль тахçанах.
Пĕр подсумка çăлтăр пухрăм кĕçĕр эп,—
Парнелес теп чун юратнă сар хĕре»...

## ХĔР ТУНСĂХĔ

Юрă татăлчĕ. Уйăх катăлчĕ.
Сарă хĕр чĕри лăпланмасть çапах.
Тунсăх иртĕччĕ—анлă Атăл çеç
Пит инçе кунтан, çитме çук часах.
Унта пурччĕ ун теветкел пĕр чун,
Шав кулатчĕ хăй хĕвел пек йăл-йăл.
Куçĕнчен пăхсан, хусканатчĕ юн...
Хăш çĕрте-шывра халь çӳрет-ши вăл?
Çук! Сар хĕр сисет, лайăхах пĕлет:
Кĕреш пек салтак тӳнес çук ахаль!
Мухтава кĕрен çĕнтерӳпелен
Тăшмана куллен тустарать вăл халь.

## ХĔРПЕ КАЧЧĂ ТĔЛ ПУЛАÇÇĔ

Сăрталла улăхать такăр утма çул.
Сарă хĕр ирпе каç такăрлатнă ăна.
Кунсерен çар иртет. Савăнăç мĕн чул!
Хурçă çар тустарать кураймин тăшмана.
Ик корзинка йăтса, кӳлĕ хĕррипе
Хĕр тухать кашни ир аслă çул кукрине;
Хăналать те сăйлать иçĕм çырлипе
Канăçне манса кайнă çĕршыв ачине.
Ак тăратрĕ утне çамрăк командир;
Çӳç хĕрри пĕрчисем вĕлкĕшеç кĕмĕл пек.
Саламларĕ хĕре, янкăс çутă ир
Шевли пек ялтăран ăшă кăмăлĕпе.
— Эх, пикеçĕм, пике, мăшăр хура куç,
Пĕр курка тăрă шыв ĕçтерсемччĕ мана!
Вăрăм пулчĕç çулсем—Аслă Арапуç
Чиккинчен пуçласа çутă Крым таранах.—
Кăн-н пăхать те пике, кăрт тăвать чĕри:
— Мĕн тери ăраскал! Тусăм, эсĕ-им ку?
Çак кĕтмен саманта юрă-кĕвĕри
Кăмăлне халаллать тантăшу-йăмăку.
Ыталарĕ хĕре çамрăк командир.
Икĕ çивĕт кăтри çĕкленет çилпеле.
Тусанпа витĕнет аслă çеçенхир,—
Салтак çулĕ выртать хĕвеланăçнелле.

## ИРĔКРИ ЮРĂ

Бахчисарайăн айлăмĕ
Шăнкравлă юрă майлă мĕн!
Пахчи-пахчи, улма пахчи,
Лимонпала айва шăрши.
Куçне хĕсет маттур каччи,—
Мĕншĕн пуса таймастăр-ши?

Ларсамччĕ, тусăм, ман çумма!
Пĕр çупăрлам та ыталам.
Калас сăмах пĕтменччĕ ман,
Анчах паян мĕнех калам?
Бахчисарайăн айлăмĕ
Телей утравĕ майлă мĕн.



# Çухалнă СУКМАК

Кузьма ПАЙРАШ

*Калав*

I

Июль уйăхĕн пĕр шăрăх кунĕнче район центрĕн аслă урамĕ тăрăх аналла пĕр çын ерипен утса анчĕ. Çине вăл çÿхе шурă костюм тăхăннă. Шăрăх пирки пуль ĕнтĕ, пиншак тÿмисене вĕçертсе янă, рис уламĕнчен тунă шурă шĕлепкине те пуçĕнчен хывса хăрах аллине тытнă. Сăнран пăхсан, ăна никам та хăй çулне парас çук. Пÿ-сийĕ тăп-тăп, сăн-сăпачĕ тулли, çамки çинче те, икĕ куçĕ айĕнче те пĕрĕнчĕксем палăрмаççĕ. Çапах та, хура çÿç хушшинче тĕл-тĕл курăнакан кĕмĕл пĕрчĕсем унăн яш чухнехи вăхăчĕсем тахçанах иртни çинчен калаççĕ. Çук, вăл текех çамрăк мар ĕнтĕ.

Вăхăчĕ-вăхăчĕпе чарăнса тăрса, вăл ик енĕпе ларакан çуртсем çине пăхапăха илет. Паллакансем çук-ши тенĕ пек, кашни хирĕç пулакан çыннах тинкерсе пăхать. Анчах паллакансем тĕл пулман пирки каллех малалла утать. Акă, вăл пушă выртакан пĕр картиш тĕлне çитрĕ те чарăнсах пăхса тăчĕ. Чăшт çитĕнсе ларнă хĕрлĕ пуçлă клевер çинче пыл хурчĕсем нăрлатаççĕ; хушăран ула-чăла лĕпĕшсем те вĕçсе иртеççĕ.

— Ăçта куçарса кайнă-ши?—хыттăнах каларĕ вăл, хăй те сисмен çĕртен.

— Мĕне?—çывăхрах илтĕнчĕ пĕр уçă сасă.

Хайхи, шурă костюмлă çын каялла çаврăнса пăхрĕ те хăйне хирĕç пĕр çамрăк çын тăнине курчĕ. Самантлăха вăл хирĕç тавăрса нимĕн те калаймарĕ, хăйне кăна пырса тивекен ăшĕнчи шухăшне çын илтмеллех каланăшăн именчĕ пулас. Анчах, хăй умĕнче тăракан çамрăк çыннăн хĕвелпе пиçĕхнĕ сăнĕнче темĕнле кăмăллă уçăмлăх пуррине асăрхасан, тек именсе тăмарĕ.

— Ара, çакăнта ĕлĕк халăх çурчĕ пулнăччĕ, çамрăк чухне эпир унта Хумма Çеменĕн пьесисене лартаттăмăр.

— Халăх çурчĕ?—ыйтрĕ çамрăк çын кударах, шупкалнă салтак гимнастеркине тÿрлетсе.—Эпĕ ăна кăшт çеç астăватăп, çĕрсе кайнăран сÿтсе вутă тунă пуль. Пирĕн тахçанах ĕнтĕ çĕнĕ клуб лартнă.

«Ĕлĕк», «çамрăк чухне»... Мĕнле персе ячĕ-ха вăл çак сăмахсене? Çамрăк çын та ав: «Кăшт çеç астăватăп», терĕ. «Пит нумай вăхăт иртрĕ-ши унтанпа?»—çиçĕм пек шухăш вĕçрĕ ун пуçĕнче. Çамрăк çын çакна асăрхамарĕ пулас, уçă сасăпа пĕлтерчĕ:

— Паян та клубра спектакль пулать, колхоз театрĕ килнĕ. Васкамастăр пулсан...—хушса хучĕ вăл.—Ĕлĕкхипе хальхине танлаштарни мĕне тăрать! Чим-ха, эсир кунтисемех пулатăр-и?

— Инçетрисемех мар,—терĕ вăл, темĕнле иккĕленсе.

Анчах вăл уçă кăмăллă çамрăк çынпа çапла калаçни выръăнсăр иккенне туйса илчĕ пулас та, хăй те хăюллăнах каларĕ:

— Паллашар! Симонов, Николай Иванч.

— Илтмен,—терĕ çамрăк çын.—Пурпĕрех мар-им, паллашни паха: Владимир Якимов, ку ялти колхоз председателĕ.

— Ну-у!—йăл кулăпа çиçрĕ Симонов сăн-пичĕ. Анчах çамрăк çыннăн хушаматне илтсен, вăл ун çине тинкерсех пăхрĕ. Якимов пĕр çирĕмрен иртнĕ кăна-ха, çаврака сăн-питлĕ; калаçнă чух, хутран-ситрен, сулахай питçăмартинче çавра путăк палăрать. «Хушамачĕ, сулахай питçăмартинчи тахçан хăйне илĕртнĕ çавра путăк... Анчах çÿçĕ? Çÿçĕ хура, сулахай енчен сылтăмалла туранă та, лăп выртать. Мĕншĕн—анчах?»—шухăш вĕçет Симонов пуçĕнче. «Çук, çук, пулма пултараймасть. Сахал-и ун пек хушамат? Пăт! путакан питлĕ çынсем те».

— Хавас, хавас паллашма,—терĕ вăл малалла, ăшри пăлханăвне пусарса. Унтан Якимов аллине тытса чăмăртарĕ те:

— Колхозне хамăр пуçласа янă,—терĕ Симонов,—1929-мĕш çулта...

Якимов пушшех те хавхаланса кайрĕ.

— Паянхи телейлĕ пурнăçăн пуçламăшне пире эсир панă эппин?! Пысăк тав сире çакнашкал кун-çул курма пире халалланăшăн!

Якимов та хыттăн чăмăртарĕ Симонов аллине.

— Апла, сирĕн кунта паллакансем те, тен, тăвансем те пур пулĕ-ха?

— Тăвансем...—терĕ те Симонов, урăх нимĕн те калаймарĕ, çăвар типнĕн туйăнчĕ.

— Чăнах, чăнах, касхине спектакле пырăр-ха, кама та пулин паллаканнине тĕл пулатăрах.

— Çук çав, эпĕ унччен тăраймастăп.

— Шел, шел. Тен, хăвăр пуçарса янă колхозпа паллашас кăмăл пур?

— Çук, çук, васкатăп,—терĕ Симонов, аллинчи сехечĕ çине пăхса.

Хăй кунта темиçе сехетлĕхе кăна йывăр операци тума килни çинчен каламарĕ вăл. Якимов та вăл кам тата мĕн ĕçпе килнине ыйтса тĕпчесшĕн пулмарĕ.

— Мана илме часах самолет килмелле,—шĕлепкине тăхăнчĕ Симонов.

— Эппин пит аван, çула май. Самолетсем лармалли площадка унтан инçех мар,—терĕ хавассăн Якимов, малалла утса.

Çак çамрăк çыннăн кăмăлне Симонов та парăнчĕ пулас, вара вĕсем аналла утрĕç.

Часах кĕпер çине çитрĕç. Кĕперĕ çав-çавах, юписене чултан тунăскер, кивелни те палăрмасть, анчах ун айĕпе юхакан шывĕ ĕлĕкхинчен сарлакарах пек туйăнать.

— Тахçан эпĕ те шыва кĕнĕччĕ пулас çакăнта,—астуса илсе чарăнса тăчĕ Симонов.

— Кĕнĕ те пулĕ, анчах ун чухне пĕве пулнă-и?

— Пĕве, мĕнле пĕве?

— Авă çуталса выртать, ве-еç!—аллипе тĕллесе кăтартрĕ Якимов,—çавăнта, çÿлĕ йăмрасем ÿсекен çĕрте.

— Унта йăмрасем анчах мар-ха,—уйăрса илчĕ Симонов,—татах темскерсем курăнаççĕ.

— Темскерсем мар, вăл—пирĕн гидростанци, ытла вăйлă мар та...

— Аван, аван!

— Ара, хамăра май.

Кĕпер урлă каçсан, улăх пуçланчĕ. Уттине тин çеç çулса пăрахнă, капансем тума та ĕлкĕреймен-ха. Сывлăшĕ кунта уçă.

— Юрататăп эпĕ çак сывлăша,—терĕ Симонов, уççăн сывласа илсе,—темĕнле, ача чухнехи аса килет.

— Килĕшет пулсан, пăртак улăх тăрăх утар мар-и?—сĕнчĕ Якимов.—Лерехре пирĕн пахча çимĕçсем ÿсеççĕ.

Николай Иванч малтан аллинчи сехечĕ çине, кайран çÿлелле, пĕлĕт çинелле, пăхса илчĕ. Çÿлте тăп-тăрах, инçетре-инçетре шурă пĕлĕт таткисем пăлăраççĕ. Анчах вĕсем кунталла шумаççĕ, пĕр вырăнтах тăнă пек туйăнать. Çап-çутă хĕвелĕ, вăхăт каçала енне сулăннă пулин те, çав-çавах пĕçертет.

— Çук-ха, курăнмасть самолет,—терĕ Николай Иванч.

— Курăнмасть-ха, ĕлкĕретпĕр, çитер мар-и çав пахча çимĕçсем патне?—сĕнчĕ татах Якимов.—Çухрăм ытларах кăна.

— Çук, ĕлкĕрейместпĕр.

— Шел, эпĕ сире пурне те мар, пĕр йышши çимĕçе кăна—ир пиçекен помидора—кăтартасшăнччĕ. Пĕркунне хам виçсе пăхрăм, пĕриех кило çурă туртрĕ.

— Чăнах-и?

— Чăн, кило çурă, тути те пит лайăх. Хулана пĕрмаях тăрататпăр, хапăл тусах илеççĕ.

— Апла, тупăш та нумай парать пулĕ?

— Нумай, пĕлтĕр те çĕр пине яхăн илнĕ.

— Помидортанах-и?

— Помидор анчах мар, унта пирĕн çарăк та, сухан та, купăста та лайăх пулать.

— Апла, маçтăрĕ те аван пулĕ сирĕн?

— Аванне-мĕнне хăйсах калаймастăп та... Тен, кайса курар, халĕ хăй те унтах пулма кирлĕ вăл.

Николай Иванч татах сехечĕ çине пăхса илчĕ.

— Вăхăт нумай юлмасть.

— Апла пулсан, тен, фермăна çитме ĕлкĕретпĕр? Кунтах, улăхран хăпарсан.

Кăшт улăхсан, выльăх витисем курăнчĕç. Хĕрринчи витинчен пĕр пысăк сысна утса тухрĕ.

— Кăна ĕнтĕ эпир чăнах та çитĕнÿ тесе шутлатпăр,—терĕ Якимов, ун çинелле кăтартса.—Çак сысна,—пырса ачашлама тытăнчĕ Якимов,—ку ами-ха, аçине пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине ятăмăр,—пилĕкçĕр кило ытла туртать, пирĕн таврара ĕмĕр пулман япала.

— Ух, мĕнле!—чăтаймасăр хăй те хырăмĕнчен кăтăкласа илчĕ Николай Иванч йăванса кайнă сыснана,—бегемот пек! Пурте çакăн пек-и?

— Çук-ха, вĕттисем ытларах халĕ, анчах çитес çулсенчех пĕтеретпĕр вĕсене.

Сасартăк машина кĕрлени илтĕнчĕ. Малтан инçетре, каярахпа çывăхах çитсе килчĕ:

— Самолет!

Николай Иванч васкаса алă тытма тăчĕ.

— Çук, самолет мар-ха,—чарчĕ Якимов,—комбайн вăл.

Фермăран инçех мар ыраш уйĕ пуçланать. Çанталăк шăрăх тăнипе тырри кăçал иртерех пиçме ĕлкĕрнĕ, сап-сарă тинĕс пек хумханса выртать. Уй хĕррипе комбайн çывхарса килет, акă часах çÿле улăхса ларнă çыннин сăнĕ те уçăнах палăрма пуçларĕ.

— Гриша вăл,—паллаштарчĕ Якимов,—Лебедев ывăлĕ, пĕр вăхăтра колхозран хулана кайса çÿрерĕ.

— Мĕншĕн тата?

— Тупăш сахал лекнипе... Вăл анчах мар, çирĕм-вăтăр çын çавăн пек çÿрерĕç.

— Халĕ таврăнчĕç эппин?

—Партипе правительство решенийĕсем хыççăн пурте таврăнчĕç, лайăх ĕçлеççĕ.

— Тĕрĕс тунă.

— Тĕрĕс çав, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесен, колхозра та лайăх пурнăç тума пулать.

— Куратăп, сирĕн вăл пур та ĕнтĕ, хам пурăннă чухнехипе танлаштарсан, чăнах та тĕлĕнмелле çитĕнÿсем тунă.

— Унпа танлаштарсан... чăн,—килĕшрĕ Якимов,—анчах хальхи вăхăтпа илсен... Çук-ха, хăшпĕр енĕпе кая юлса пыратпăр.

Сасартăк тÿпере пĕр тикĕс кĕрленĕ сасă илтĕнчĕ. Нумай та иртмерĕ, самолет курăнчĕ.

— Çитрĕ. Ну, сывă пулăр ĕнтĕ,—алă тытрĕ Николай Иванч,—тавтапуç кăтартса çÿренĕшĕн, питĕ савăнтăм.

— Пурне те кураймарăр çав.

— Тепĕр чух килетĕп, ятарласа курма килетĕп.

— Нимрен ытла—сада çитсе курмаллаччĕ, кăçал çырла нумай пулчĕ. Ав, лере вăл пирĕн,—кăнтăр еннелле тĕллесе кăтартрĕ Якимов.

Пĕр-пĕрне алă тытнă чух Симонов каллех Якимов пичĕ çине тинкерсе пăхрĕ, татах калаçас, çывăхрах паллашас кăмăл пуррине туйрĕ. «Кама аса илтерет-ха сулахай питĕнчи çавра путăк?»

## II.

Ял тĕлне çитсен, самолет лариччен малтан пĕр-ик хут çаврăнса илекенччĕ. Ку тÿрех хĕвеланăçнелле вĕçсе кайрĕ. Самолечĕ—çавах, фюзеляжĕ çинче хĕрлĕ хĕреспе хĕрлĕ çур уйăх, хăй аялтанах вĕçет.

— Ял хыçне лармарĕ-ши?—шухăшларĕ Николай Иванч.

Самолет вĕçсе кайнă еннелле утма кăна пуçланăччĕ, Симонова пĕр çамрăк сестра хăваласа çитрĕ.

— Сире телеграмма,—терĕ вăл, хут татăкĕ тыттарса.

Николай Иванч, телеграммăна вуласа тухсан, самолет тепĕр района васкавлă ĕçпе кайни çинчен пĕлчĕ. Çав телеграммăрах хăйнеăна самолет каялла таврăннă чух тин кĕрсе илесси çинчен пĕлтернĕ.

— Унччен, тен, эсир кăшт канма килĕшетĕр?—сĕнчĕ сестра.—Вырăн хатĕрленĕ.

— Тавтапуç, эпĕ ывăнман,—терĕ Симонов.

Анчах хăй çавах ял еннелле утрĕ. Ватă йăмрасем хушшипе пĕр сукмак тăсăлать. Лапамран иртсен, вăл хыçалти урама пырса кĕрет. Тахçан ĕлĕк вăл сукмакпа Николай Иванч час-часах, кашни каç тенĕ пек, çав хыçалти урамалла утнă. Хăш чухне пĕччен, нумай чух иккĕн. Халĕ те ĕнтĕ ку çул ăна темĕнле, çав тери çывăх пек туйăнса кайрĕ. Пулаççĕ ĕмĕрте çавăн пек вырăнсем, вăхăтсем... вĕсене астумасăр иртсе кайма ниепле те чун чăтаймасть. Кăшт пăхса тăрса аса илнĕ хыççăн, Николай Иванч хăй те асăрхаймарĕ, хăй мĕн шухăш тытнине те чухлаймарĕ, теме сĕмленсе çав çулпа утара пачĕ.

Халь ĕнтĕ вăл шухăшпа пĕтĕмпех çамрăк вăхăта куçрĕ. Асаилÿсем кашни утăм пусмассеренех сарăлса, çĕнелсе пычĕç. Ма вăл унталла пит васкать-ха? Мĕн кĕтет ăна унта? Тен, каймасан авантарах мар-и? Анчах урисем ăна итлемеççĕ, малаллах, малаллах илсе каяççĕ. Акă, урам хушшине çитсен, ик-виç килĕ урлă икĕ чÿречеллĕ хăма витнĕ пÿрт курăнса кайрĕ. Манман ăна вăл, нумай çулсем хушши татах та манас çук. Çавах, çавах! Чÿречисене, ĕлĕкхи пекех, кăвак сăрпа сăрланă, умĕнче—сирень лартнă палисадник. Чечекĕсем ĕнтĕ çук, хура кĕркуннеччен тытăнса тăракан çулçисем кăна сип-симĕс çуталса лараççĕ. «Сирень çулçисем пит çирĕп пулаççĕ», такам каланине аса илчĕ Симонов.

— А-у!—сасартăк çинçе сасă илтĕнсе кайрĕ килхушшинчен.

Николай Иванч чарăнса тăрсах итлерĕ. Сасă татах тепĕр хут илтĕнчĕ: а-у!..

— Маруç!—чĕнчĕ Николай Иванч.

— Халех!—илтĕнчĕ килхушшинчен.

Николай Иванч чĕри хăвăрт-хăвăрт тапма тытăнчĕ. Халех ун патне Маруç йăл! кулса тухать. Пĕлет вăл мĕнле тумпа тухассине те. Çине, яланхи пекех, тĕрленĕ кĕпе тăхăннă, шурă пиçихи çыхнă. Уринче, ăшă чухне, сандали кăна. Урăх нимĕнле капăр тавраш та çук. Çапах, çийĕнче мĕн пуррипе те вăл хитре, ытармалла мар. Кăвак куçĕсем яланах йăваш тата кăшт вăтанарах пăхаççĕ, кăкăрĕсем тăп-тăп хăпарса тăраççĕ. Пурçăн пек çемçе çÿçĕсене Маруç, икĕ çивĕт туса, хыçала ярса çÿрет.

Симонов, вăл тухасса кĕтсе, кăшт аяккарахра, çырма хĕрринче ÿсекен çĕмĕрт айне кайса тăчĕ. Тахçан кунта сак пурччĕ, каçхине яш-кĕрĕмсем çакăнта пуçтарăнса ларма юрататчĕç. Халĕ çук, йывăçĕ те ĕнтĕ ватăлса кайса, туратланса ларнă тата хăрах еннелле чылаях тайăлса кайнă. Çапах та вăл Николай Иванчшăн нимрен те çывăх. Çакăнта, çак çĕмĕрт айĕнче, унăн малтанхи юратăвĕ пуçланнă. Çуркуннеччĕха пулас вăл. Çĕмĕрт çеçки шап-шурă

çурăлса ларнăччĕ, ырă шăрши таçта çитиех сарăлнăччĕ. Пĕр каçхине, халăх çуртĕнче спектакль пĕтнĕ хыççăн, çамрăк Николай Иванч Маруçа киле ăсатса яма сĕнчĕ. Маруç ун чух ним калама та пĕлмерĕ, вăтанчĕ пулĕ, пуçне пĕкрĕ те уттара пачĕ. Вара çак утма çулпах утнăччĕ вĕсем, малтан уйрăммăн, каярахпа—алла алăн тытса. Мĕн тери аванччĕ юнашар утма! Кăшт çуммарах хĕсĕнсенех, пĕрин ăшши теприн çине куçнă пек туйăнатчĕ. Кил тĕлне çитсен, йăпăртлăха кăна тесе, çак çĕмĕрт айĕнчи сак çине килсе ларнăччĕ.

Çав çулхине пур çĕрте те уйрăм хуçалăхсене пĕрлештерсе колхоз тăвасси çинчен нумай калаçатчĕç, хăшпĕр ялсенче колхоз туса хунă тенĕ хыпарсем те илтĕнетчĕç. Хăйпе паллаштарнă май, Николай Иванч та колхоз тăвас пирки час та часах асăнатчĕ, мĕншĕн тесен ăна ку яла комсомол обкомĕ ятарласа колхоз тума пулăшас шутпа янă пулнă. Ку хыпара Маруç питех те пысăк кăмălпа йышăннă, унăн хăйĕн те колхоз тăвас тĕлĕшпе хĕр тантăшĕсемпе хĕрарăмсем хушшинче ĕçлес кăмăл уçăлнă.

Уйрăлсан вара вĕсем каç-каç иккĕшĕ те чылайччен çывăрса каяймасăр выртнă. Николай ытти йĕкĕтсем пек мар, вĕсенчен ăраснах уйрăм, çӳлерех тăнă пек туйăннă Маруçа. Вăл çеç те мар, Николай ăна çынсен пурнăçĕшĕн, вĕсен телейĕшĕн тăрăшнă пек курăннă. Çакăнта ĕнтĕ унăн ĕмĕчĕ пĕтĕмпех Николай шухăшĕпе пĕрлешнĕ. Çавна май вара ирĕксĕрех ун çумнерех пулас кăмăл туртнă. Маруç çĕнĕ ĕçе чунтан парăнма хатĕр пулни Николая та кăмăла кайнă, унăн хитре сăн-сăпачĕ те питĕ килĕшнĕ.

Çак туртăмсем ĕнтĕ пĕр-пĕрне часчасах тĕл пулма илĕртнĕ. Тепĕр чухне, сайра хутра, тĕл пулса калаçма май килмесен, иккĕшĕн те чĕре патĕнче темĕн çитмен пек, пушă пек туйăннă.

Кашни тĕл пулмассеренех юрату кăварĕ ытларах та ытларах хĕрсе пынă, пĕрне-пĕри çывăхрах та çывăхрах туйма пуçланă вĕсем. Каярахпа вара чĕрери шухăшĕсене те, çунатлă ĕмĕчĕсене те пĕр пытармасăрах, уççăнах кала-кала панă. Мĕнле кăна ачаш сăмахсем каламан-ши вĕсем пĕрне-пĕри, мĕнле кăна тупа туман-ши?.. Куçран пăхсах, сăмах каламасăрах пĕрне-пĕри ăнланакан пулнă вĕсем.

Вĕсен хĕрӳ юратăвне пĕр вата çĕмĕрт кăна курнă. Курнă та—никама та шарламан, тен, варкăш çилпе хыпар сарăлнă та-и, кам пĕлет? Ахаль мар пуль:

— Ах, лайăх мăшăр пулать-çке! Туйне хăçан кĕтсе илĕпĕр-ши?—тетчĕç йĕплĕ чĕлхесем, вĕсем пĕрле иртсе пынине курсан. Анчах пур каçсем те çавăн пек телейлĕ иртмен. Пĕррехинче, сĕм тĕттĕм çĕрле, вăрн-н! та вăрн-н! туса çумранах иртсе кайрĕç чул муклашкисем. Маруçа çамкинчен тивсе кассах кайрĕ. Вара Маруç пĕр уйăха яхăн больницăра выртрĕ.

— Кĕвĕçекен каччисем пенĕ пуль,—тетчĕç ун пирки ял çинче. Анчах хăйсем вĕсем пĕлнĕ: чула тăшмансем хăшне те пулин вĕлерес шутпа пенĕ. Тăшманĕсем вăл вăхăтра чăнах та нумайччĕ. Колхоз организациленсе çитнĕ, çав майпа кулаксене те пĕтерме тытăннă. Çак ĕçре ĕнтĕ вĕсен иккĕшин те тӳпе пулнă.

Мĕншĕн-ха ĕнтĕ Маруç халĕ те тухмасть?

Симонов, ăна кĕтсе, сехет çине темиçе хутчен пăха-пăха илчĕ. Çук. курăнмасть. Çитменнине тата килхушшинчи сасă та çухалчĕ.

— Эх, айван!—терĕ Симонов хăйне хăй, сасартăк тăна кĕнĕ пек.—Тепĕр тесен. чипер ăслă-пуçлă хĕр мĕнле халиччен качча тухмасăр пурăнтăр? Апла пулсан, мĕн кĕтсе тăратăп-ха?

Николай Иванч, хăйĕн айванлăхĕнчен хăй вăтанса, каялла çаврăнса утрĕ. Инçех мар çул юпленсе кайрĕ. Пĕри уялла тухса çухалать, тепри ял çумĕпе сăрт тӳпинелле илсе каять. Симонов, нимĕн тĕлсĕрех, сăрт тӳпинелле улăхса кайрĕ. Кунтан ял, пуринчен ытла хыçалти урам, ывăç тупанĕ çинчи пекех курăнать. Кунтанах, хĕсĕк тăкăрлăк витĕр тухсан, ял тавра тепĕр хут çаврăнма пулать. Ку вырăн ĕнтĕ Николай Иванчшăн питĕ паллă, манман вăл: çакăн пек ăшă та лăпкă каçсенче, хĕвел анас умĕн, кунта сахал мар вăйăсем пулса иртнĕ. Тĕттĕмленсен, яш-кĕрĕмсем хăшĕсем пĕрле, хăшĕсем мăшăрланса килĕсене саланатчĕç, анчах Николайпа Маруç, калаçса пĕтмен сăмахĕсем юлнипе, киле кĕриччен малтан кăшт та пулин, паллах, хăйсем юратнă вырăна—çĕмĕрт айне кайса ларатчĕç. Час-часах вара автансем авăтиччен ларнă. Çапла-çке ĕнтĕ вăл юратсан!

Ку асаилӳ Николай Иванча ирĕксĕрех çаврăнса пăхма хистерĕ. Ун куçĕ умне каллех аялти урамри икĕ чӳречеллĕ çурт тухса тăчĕ. Ах, мĕншĕн пит хаклă-ши вăл уншăн?

— Ухмах эпĕ, авланмалла пулнă,—терĕ вăл хăй ăшĕнче.

Анчах ун чухне Маруç, хăй çав тери хытă юратнă пулин те, качча тухма килĕшмен. Сăлтавĕ те пулнах çав.

Колхоз тунă хыççăн ялти ĕç условийĕсем пĕтĕмпех урăхланчĕç, çĕнелчĕç. Çавна май, унчен çичĕ çул кăна вĕреннĕ Николайăн пĕлӳ çитменни уйрăмах палăрма пуçланă, ăна вăл хăех сиснĕ. Çакăн çинчен вăл Маруçа каласа панă.

— Хамран уйăрас килмест те, анчах кай, вĕрен,—тенĕ Маруç.

— Пĕр-пĕринчен инçе пурăнмалла пулать-çке!

— Юрату инçине пĕлмест, — тенĕ Маруç,—эпĕ хам панă сăмаха ĕмĕрех чĕре патĕнче усрăп.

Çапла калаçса татăлнă хыççăн, Николай часах хулана вĕренме тухса кайнă. Вĕренсе тухсан çак ялах таврăнма сăмах панă. Чăнах ĕнтĕ, малтанхи çулсенче вăл хăй сăмахне çирĕп тытнă: ик-виç кунтах çыру çырса тăнă, каникул вăхăтĕнче, тепĕр чух вырсарни кунсенче те, Маруç патне таврăннă. Тепĕр тесен, ун пек пулмасăр май та килмен. Юратнисĕр пуçне, Маруç ăна тăтăшах пулăшса тăнă. Акă, пĕр шартлама сивĕ кун, Николайăн çиме те укçа юлманччĕ. Пĕр кун вăл, урока каймасăр, вĕренме пăрахасси çинчен шутласа ларнăччĕ. Çав вăхăтра, таçтан пĕлнĕ пекех, ун патне куçарнă укçа пырса çитнĕ. Калас пулать, Николай чăнах та лайăх вĕреннĕ, чылай предметсемпе юлташĕсенчен малта пынă. Анчах вăл вăхăтра Маруç та ахаль ларман. Вĕренсен кăна Николая тивĕçлĕ мăшăр пуласса лайăх пĕлнĕ вăл. Унăн та ĕнтĕ хăй ăшĕнче Николай хыççăн каяс кăмăл пысăк пулнă, анчах хăй сахал вĕреннĕ пирки хулана каяйман, вырăнти шкултах сахал вĕреннĕ çынсем валли уçăлнă курса çӳренĕ. Кунта вăл, Николай пекех, хăйне хăй кунтан-кун ӳссе пынă пек туйнă. Çапах та, уйрăмлăх пĕтмен, хулара вĕренекен Николай малалла хăвăрт кайса пынă. Ăна ĕнтĕ, Николай юлашки каникула килсен, Маруç хăй те сиссе илнĕ. Николай чăвашла калаçнă çĕртенех вырăсла, хушăран тата ăнланмалла мар сăмахсем те калала-кала хунă, анчах уншăн кăмăлсăрланма сăлтав пулман, Николай çавсавах йăваш, ырă кăмăллă. Анчах сывпуллашу, темшĕн-çке, çав тери сӳрĕк, сивлек пулчĕ. Çав кун Маруç пичĕ тăрăх пуçласа куççуль шăпăртатса анчĕ.

Çакăнтан вара Николай Иванч ку ялта урăх пулман, çырусем те яман. Мĕнле пулма пултарнă-ши ĕнтĕ вăл?

Пĕр хутĕнче урокра директор хĕрĕ Светлана çумма пырса ларчĕ. Вăл питĕ шукăль çӳретчĕ, пит-куçĕнчен духи шăрши кăна кĕретчĕ, хăй те ытарма çук чиперччĕ. Анчах вĕренес енчен Светлана пултарсах каймастчĕ, пуринчен ытла алгебра задачисене шутлама пĕлместчĕ. Çавăнпа, юнашар ларнă май, вăл час-часах Николайран ыйтатчĕ, каярахпа вара задачăсене Николай хăех шутласа паратчĕ. Çапла иртрĕç чылай кунсем... Пĕр каçхине Светлана Николая пĕрле театра кайма сĕнчĕ. Тепĕр эрнерен—кинона кайма билетсем илчĕ, унтан тухсан кăшт та пулин ăсатса яма ыйтрĕ. Паллах ĕнтĕ, хирĕçлеме кăмăл çитереймерĕ Николай. Çапла, çыхăну сисĕнмесĕрех шалалла кĕрсе пычĕ, çуллахи каникул пуçлансан вара, Николай яла каяс тенĕ вăхăтрах, Светлана ăна илĕртӳллĕ сĕнӳ пачĕ.

Канмалли çурт. Юнашарах Атăл, ылтăн пек хăйăр. Хĕвелĕ ытарма çук пĕçертсе пăхать. Тулли кăкăрлă, илемлĕ пилĕклĕ Светлана вылять: хăйăрпа та пырса сапать, шывра та хăй хыççăн хăвалаттарать. Кайран илемлĕн çурăлса ларнă чечексем татма вăрмана чĕннетчĕ...

Çапла сахал-и, нумай-и тăсăлнă—ăна вăл астумасть. Тепĕр тесен, астума кирлех те мар, мĕншĕн тесен мăшăрланас ыйтăва вĕсем нихăшĕ те тапратман. Кайран, сайра-хутра çывăх юлташсем хушшинчи уçă калаçусенче кăна, вăл çак юрату çинчен астуса, çĕнтерӳ тунă пек, мăнкăмăллăн каласа паркаланă.

Институтран вĕренсе тухсан, Николай Иванч авланнă. Анчах чун юратнипе мар, вăхăт çитнипе тата çиелтен кăшт кăмăла кайнипе кăна.

Паллах, çирĕп çемье пулма пултарайман унăн. Часах унчен пĕр-пĕри илнĕ е çырнă çырусем, хисеплесе панă сăнӳкерчĕксем тупăнма пуçланă, кайран вара харкашусем пуçланнă. Çук, нумай пурăнайман арăмĕпе Николай Иванч, уйрăлма лекнĕ. Хăшĕ ытларах

айăплă уншăн,—ăна вăл хăй те татса калаймасть.

Çулсем иртсен, кăшт «ăс кĕре пуç-ласан» тин вара Николай Иванч хăй ĕретне кĕме тытăннă. Ниçта та çӳре-мен, ăслăлăх ĕçне кăна парăннă. Мал-танах çапла тунă пулсан, тен, вăл халь тивĕçлĕ пулнă ята тахçанах илнĕ пулĕ-ччĕ, анчах ăна тавăрма çук. Мĕн чухлĕ хаклă вăхăта харама яман-ши! Ухмах пулнă çав, ухмах!..

III.

Хирелле тухакан çул юппипе кайсан, кăшт çӳлерех хăпарсанах, кăнтăр енче пĕр вăрман курăнать. Ваттисем каланă тăрăх, вăл ĕлĕк-авал пысăк вăрманах пулнă, анчах ăна ял çыннисем пĕри те астумаççĕ. Николай Иванч астăвасса унта çырла нумай пулатчĕ: хурăн çыр-ли, çĕр çырли, хурлăхан, пăчăр çырли... Пуринчен ытла хăмла çырли нумай тата шултра çитĕнетчĕ. Аванччĕ унта: хăйне евĕр уçă сывлăш, кайăксем чĕ-вĕлтететчĕç, унта-кунта пĕр-пĕрне а-у-у!.. тесе çамрăксем кăшкăрнă сасă-сем илтĕнсе каятчĕç.

Йывăр шухăша кăшт та пулин пуса-рас тесе, çак çулпа хирелле тухнă Ни-колай Иванч йывăçсем хушшинче хĕп-хĕрлĕ çупкăмсем çакăнса тăнине асăрхарĕ. Çук, ку вăрман мар, предсе-датель асăннă сад пулмалла. Самант та иртмерĕ, йывăçсем хушшипе шурă кĕпе тăхăннă хĕрарăм утса тухрĕ.

— Сывă-и, инке?—чĕнчĕ ăна Нико-лай Иванч.

— Чиперех-ха,—терĕ хĕрарăм,—хă-вăр мĕнле? Анчах паллаймарăм-ха, кам патне эсир?

Хĕрарăм чăр! пăхрĕ те... Ах! тесе ячĕ, ăшĕнчи пĕтĕм сывлăшĕпе тенĕ пек хашлатса. Унтан вăл, икĕ аллипе икĕ тăнлавне хупларĕ те, куç умĕ хуралса килчĕ пулас, сулăнса кайрĕ. Симонов ăна хăвăртрах пырса тытрĕ.

Хĕрарăм пĕрре куçне уçса пăхать, тепре хупать. Юлашкинчен, пăхрĕ-пăх-рĕ те, шăппăн кăна, чуна çӳçентерекен сасăпа:

— Никола-ай!..—терĕ,—Коля!..

— Маруç!—палласа илчĕ Симонов та.

— Коля, Николай!.. Миçе çул, миçе çул!..

Ун пуçĕ Симонов кăкăрĕ çине ӳкрĕ, вара вăл, нумай çултанпа йĕрсе кур-манскер, хурланса-и е савăнса, сасăпах йĕрсе ячĕ.

Лăплантарать ăна Симонов, кăлт-кăлт сиксе чĕтрекен хулпуççийĕсенчен çупăрлать, лăпкать...

— Ма килтĕн?—илтрĕ вăл хĕрарăм сассине.

...Акă вĕсем ĕнтĕ пĕрле, юнашарах, çума-çуммăнах утса пыраççĕ. Пĕрне-пĕри каласа памалли мĕн чухлĕччĕ-ши, аса илмелли мĕн чухлĕ? Анчах çук, пĕр сăмах та чĕлхе çине килмест.

— Курма килтĕр пулсан...

Чăн, çаплах илтрĕ Симонов: «Кил-тĕр пулсан...»

— Курма килтĕр пулсан, атя, кă-тартам. Эсир килессе пĕлнĕ пулсан, ха-лех таттармастăмччĕ те-и çырлине...

— Халĕ те нумай-çке.

— Вĕсем çĕр каçипе пиçнисем кăна çав, ĕнер пит нумайччĕ, паян хулана машина кайрĕ те, çул майăн эпир те çырла тиесе ятăмăр. Тутанса курас кăмăл пур-и?

Вара вăл, шаларах кĕрсе, пĕр йывăç-ран пĕр çупкăм, тепринчен тепĕр çуп-кăм чие çырли тата-тата пачĕ ăна. Хăй пĕрмай çырла ячĕсене калать:

— Ку—«Краса Севера», ак ку—Владимирски сорт...

Чие патĕнчен хăмла çырли йăранĕ-сем патне çитрĕç.

— Кăна ĕнтĕ пĕлмелле эсир,—терĕ Маруç,—çулçăсем айĕнче вăраххăн пиç-се пушшех те шултраланса кайнă çыр-саллă пĕр туратне хуçса.

— Çук, пĕлместĕп.

— Ара, вăл хамăр вăрманти хăмла çырли,—терĕ кулкаласа Маруç,—эсир ăна тахçан çисе пăхнă, анчах манса кайнă ĕнтĕ.

— Çук, вăл ун пек шултра пулман пек туйăнать.

— Чăн,—терĕ ăнлантарса Маруç,—вăл ун пек шултра пулман, эпир, ун пы-лакне ытараймасăр, хамăр шултралат-рăмăр.

— Ытарма çук илемлĕ сад,—терĕ Николай Иванч, Маруç çине ытарлăн пăхса.

— Ывăлăм хурланинех илтмен.

— Ывăлăм, терĕн-и?

— Ывăлăм ман хăй те агроном, колхоз председателĕ.

— Колхоз председателĕ—санăн ывă-лу-и?

Маруç халь лăпкăнрах калаçать, уçăмлăрах.

— Çапла, виççĕмĕш çул ĕнтĕ пред-седательте манăн Володя.

«Манăн» сăмаха уйрăмах уççăн ка-лать хĕрарăм.

Çак самантра Симонов хĕвелпе пи-çĕхнĕ сăн-питлĕ, хура çӳçлĕ, сулахай питĕнче çавра путăклă çамрăк çынна аса илчĕ. «Акă кам иккен вăл Влади-мир Якимов! Володя... Володя...»

— Çапла,—терĕ Маруç тарăннăн сывласа.—Тахçанах, тахçанах пулнă вăл. Санпа юлашки хут сывпуллашнă хыççăн сакăр уйăхранах ывăл çурат-рăм. Малашне мĕнле пулнине хăвăнтан ыйтмалла та, çук ĕнтĕ, кирлĕ мар...—Вăл çывăхри сак çине пырса ларчĕ.

— Кирлĕ мар?—хыпăнса ӳкрĕ Симо-нов.—Эпĕ ăна куртăм, халĕ çеç, сехет каярах кăна!

Хĕрарăм ун çине чăр! пăхса илчĕ.

— Йывăрччĕ мана. Ӳстертĕм. Ун çине пăхсан, сана курнăн туйăнатчĕ...

Маруç пĕр самантлăха чарăнчĕ те хăй ыйтма пуçларĕ:

— Хăвăр халь ăçтарах, мĕнлерех пурăнатăр?

— Нумай вăхăт Горькире пурăн-тăм,—терĕ Симонов,—халĕ — Шупаш-карта.

— Арăму сывах-и, ачусем миçе?

— Çук манăн никам та...

— Уйрăлтăр-им?—пĕлнĕ пекех ыйт-рĕ Маруç.

— Çапларах пулса тухрĕ. Халь ĕнтĕ манса та кайнă.

Маруç, пĕр вăхăт чылайччен шухăша кайса, ун куçĕнчен пăхса ларчĕ.

— Аван мар, пит аван мар,—терĕ Маруç, кăшт аяккарах сиксе.

— Мĕн аван мар?

— Иккĕмĕш хут, тен, ытларах та-и... Аван мар тунă эсир. Пăрахмалла вăл йăлана.

Симонов, ответ тупса калаймасăр, пĕр самант ним чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан сасартăк хăрах чĕркуççипе курăк çине чĕркуçленсе ларчĕ те, Маруçăн икĕ ал-лине те хăйĕн вĕри аллисемпе çупăрла-са, хăвăрт-хăвăрт калама пуçларĕ:

— Маруç, чунăм, пăрахнă эп вăл йăлана, тахçанах пăрахнă. Тархасшăн, калама ирĕк парсамăрччĕ!

— Кăмăлăр пулсан, калăр.

— Маруç! Ниушлĕ эсир унтанпа урăх никампа та тĕл пулман, никама та юратман, никам çинчен те шухăш-ламан?

— Çук, никампа та, никам çинчен те. Чи юратнă çыннăм манăн—Нико-лай, Николай пулнă.

— Эпĕ те никам çинчен те шухăш-ламан, никама та юратман... Енен мана!

— Ененетĕп.

— Чăнах та ĕненетĕн-и?

— Чăнах, эсир никама та юратман.

— Маруç, чунăм, ывăлăмăр ячĕпе, Володя ячĕпе калатăп...

— Ах...—терĕ вата сăн çапнă, анчах халĕ те хĕр чухнехи сăнне çухатман хĕрарăм. Унтан вăл йăл! кулчĕ.—Ни-ушлĕ эс ăна палласа илтĕн-ши?

— Палларăм, чунăм, палларăм,—пĕтĕм чун хавалĕпе çĕкленсе калать Си-монов.—Сăнĕ-пичĕ те, çавра путăкĕ те, кăмăлĕ те йăлтах... йăлтах санăн... Çӳçĕ кăна...

— Хура, санăн,— ун сăмахне пӳлчĕ Маруç.

— Чим, эсĕ ăна халĕ те ман пирки каламан-и?

— Çук, каламан.

— Тен, тен, халь ĕнтĕ каçарăн мана?..

— Çук, Николай Иванч...

— Мĕн çук?

— Çук, эсĕ ун чухнехи Коля мар. Вăл тап-тасахчĕ, анчах эсир...

— Эпех вĕт, эпех!—каллех йăпатма тытăнчĕ Симонов.

— Çук, Николай Иванч, татах кала-тăп сире, эсир эпĕ юратнă Коля мар.

Анчах Симонов хăйĕн хĕрӳ сăмахĕ-сене калама ĕлкĕреймерĕ, çывăхрах ют сасă илтĕнчĕ:

— Марья Васильевна, Якимова юл-таш!

Маруç ура çине сиксе тăчĕ.

Тӳпере самолет курăнчĕ.

Симонов çине тăрсах ыйтнипе, само-лет ял çийĕн виçĕ хутчен çаврăнчĕ. Тем пекех, куççуль тухиччenех тинкер-се пăхрĕ Симонов çĕрелле, анчах унта, аялта, сип-симĕс тĕспе витĕннĕ ял кăна кăштах палăрать. Кăвак сăрланă икĕ чӳречеллĕ пӳрт те, тахçан иккĕн çӳренĕ сукмак та—палăрмасть. Симо-нов тепĕр хут çаврăнса илесшĕн пулса кăшкăрчĕ, анчах малти кабинăра ларса пыракан пилот ăна илтмерĕ пулас. Илтсен те... Ял çийĕн темиçе хут çав-рăнсан та, çав сукмака Симонов тин шыраса тупайрас çук.



Клавдия Исаева, Вера Максимова, Алефтина Костина тата Африкан Охотин студентсем тырă сăвăрнă çĕрте ĕçлеççĕ.

Титова.— Рационсене те пĕлсе хатĕрлемелле.

Поля Титова ирхине кăна мар, кăнтăрла та, каç кӳлĕм те, каçхине те хăй ĕнисем патĕнче. Вăл пур ĕçпе те интересленет, пур çĕре те çитсе курма, пурне те пĕлме тăрăшать.

Пĕлтĕр, кĕркунне, Поля кашни ĕнерен тăватă пин литртан кая мар сĕт суса илме сăмах панă. Кăçалхи августăн пĕрремĕшĕ тĕлне Титова виçĕ пин çурă литра яхăн суса илнĕ.



— Симĕс конвейер пире нумай пулăшать,—час-часах ăнлантарать Поля практикăна пынă студенткăсене. — Эпир апатсене вăхăтра хатĕрлемесен—сăмах çил çине çеç каять.

Пулас специалистсем вĕренӳпе опыт хуçалăхĕнче институтра вĕреннĕ теорие ĕçпе çыхăнтарса пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх те, пахча çимĕç те, тырпул та вĕсене хумхантараççĕ.

Кунта кăçал пахча çимĕçсенчен арбуз питĕ ăнса пулчĕ.

Кăнтăрти ăшă çанталăка юратакан арбуз Чăваш республикинче те ӳсме пултарнине ялхуçалăх ăстисем тахçанах кăтартса панăччĕ. Арбуз—арбузах ĕнтĕ. Тĕсĕ те пур, тути те. Çапах та студентсем кăнтăрти арбузсенчен те тутлăрах арбуз ӳстерес тесе нумай вăй хунă. Вĕсене кунти агроном та пайтах пулăшнă. Зина Никифоровăпа Маруся Петрова опытлă участока агрономпа пĕрле тăтăшах сăнаса тăраççĕ. Агроном вĕсене институтра илнĕ пĕлĕве çирĕплетме пулăшать.

Ялхуçалăх институтĕнчи чылай студентсемпе преподавательсем каникулсене кайнă пулсан та, Иван Андреевич Рыжов, зоотехниксем хатĕрлекен факультет деканĕ, вĕренӳпе опыт хуçалăхне пымасăр чăтаймасть. Студентсем ăна чи çывăх тăван пек кĕтсе илеççĕ. Нумаях пулмасть Иван Андреевича Совет правительстви Ленин орденĕ парса наградăланă. Çак савăнăçлă хыпара пĕлсен, студентсем ăна тӳрех сырса илчĕç, ырă сывлăх сунчĕç, ăшшăн саламларĕç. Юратнă декана награда пани студентсемшĕн темрен те паха пулчĕ: хăйсем те правительство наградине илнĕ пек туйрĕç.



Геннадий Чибарев ĕç хыççăн уçă сывлăшра кĕнеке вулать.

Зина Никифоровăпа Маруся Петрова арбуз пулса çитнине тĕрĕслеççĕ.

Каçхине вара, ĕç хыççăн, çамрăксен савăнăçĕ çĕнĕрен пуçланать. Каçхи тутлă апат хыççăн, студентсем кунĕпе ĕçлесе ĕшеннине пачах манса каяççĕ. Пĕрисем волейболла выляççĕ, теприсем футбол хăвалаççĕ. Шашкăпа шахмат та, хуткупăс та çамрăксене илĕртет. Геннадий Чибарев, çамрăклах литературăна юратаканскер, кĕнекерен уйрălаймасть. Вăл каçхи апат тума ĕлкĕрет кăна, çерем çине тухса выртать те ĕнер вулама тытăннă кĕнекене уçать. Тĕттĕм пуличчен чылаях вулама ĕлкĕрет студент. Кĕнекери геройсем ăна ĕçре те, вĕренӳре те хавхалантарса пыраççĕ.

...Каллех тулли уйăх тӳпене ярăнса хăпарать, каллех уçланкăра пирвайхи автанчченех ташă-юрă кĕвви янăраса тăрать. Студентсем кунта канаççĕ те, ĕçлеççĕ те, вĕренеççĕ те...

Çав вăхăтра, вĕренӳпе опыт хуçалăхĕнче иккĕмĕш курсри студентсем практикăра пурăннă чухне, кăçал вăтам шкултан вĕренсе тухнисем ялхуçалăх институтне кĕме васкаççĕ. Кăçал институтран диплом илсе кайнисем выраннĕ çĕнĕрен килнĕ çамрăксем специальность илме, ялхуçалăх ăстисем пулма тăрăшаççĕ. Шупашкарти ялхуçалăх институтне хамăр республикăри çамрăксем кăна мар, тăван республикăсенчен те нумай çын вĕренме килнĕ.

Дирекцинче пĕр купа заявлени выртать, вĕсем хушшинче Улатăрпа Кувакино районĕсенчен, Арзамас облаçĕнчен, Сĕнтĕрпе Муркаш районĕсенчен е Мари республикинчен ярса панă заявленисем курăнаççĕ. Ку анчах-и, Мускав облаçĕнчисем те хăйсене ялхуçалăх институтне вĕренме илме ыйтаççĕ. Партин сентябрьти пленумĕн решенийĕсем хыççăн ялхуçалăх специалисчĕсем пулма тăрăшакан çамрăксен йышĕ уйрăмах ӳсрĕ. Кăçал института çĕнĕрен 150 çамрăка вĕренме илнĕ.

...Аудиторисенче занятисем пыраççĕ, пулас специалистсем наука кăтартнă пек ĕçлеме вĕренеççĕ.



Антонин Александров, Владимир Николаев, Виталий Костин студентсем ĕç хыççăн çăвăнса тасалаççĕ.

Улатăр районĕнчен вĕренме килнĕ Михаил Гулянкинпа Арзамас облаçĕнчи Гокаево ялĕнчен килнĕ София Казакова (сылтăмри) Александр Валерианович Плетнев профессорпа институт садĕнче тĕл пулчĕç.



## Ю Р Ă

Николай ЕВСТАФЬЕВ

Ашă çумăр шăпăртатрĕ,
Тăнкăртатрĕ пӳрт тăрри.
Çичĕ тĕслĕн йăлтăртатрĕ
Асамат-кĕпер тĕрри.

Асамат аса илтерчĕ
Сан чечеклĕ тутăрна,
Сар хĕвел аса илтерчĕ
Санăн ăшă куллуна.

Улăхра, кавир пек капăр,
Сарăлса выртать çаран.
Ут çулма эпир каятпăр
Нӳрлĕ çул тăрăх çарран.

Ешĕл улăх асилтерчĕ
Санăн пурçăн кĕпӳне,
Ухлем курăк асилтерчĕ
Санăн капăр çивĕтне.

Çумăр хыççăн—уяртсассăн,
Типĕтсен çил çарана,
Çавасем янранă сасă
Илем кӳчĕ таврана.

Çут тӳпе аса илтерчĕ
Сан сенкер куçусене,
Шăпчăксем аса илтерчĕç
Сан манми юррусене.

Ĕç çинче те, тусăм, эсĕ
Асăмрах яра куна.
Каçпала, ĕçрен килсессĕн,
Тĕл пуласчĕ ман сана.

Ĕç çинче мала тухсассăн—
Тĕл пулма та намăс мар,
Пĕр-пĕрне чунтан
савсассăн—
Чуптума та çылăх мар!



# ÇАМРĂК КĂМĂЛ

## Улăхра

Михаил ВОЛКОВ

Тин çeç килчĕ кăвак çутă,
Курăксем те сывлăмра.
Паçăрах çулаççĕ утă
Сар хĕрсем мăн улăхра.

Çитрĕ каччă та çулмашкăн,
Ярăнса машинипе.
— Вăхăт,—терĕ,—пăрахмашкăн
Еçлеме çавасемпе.

— Питĕ ир тухатăн эсĕ,
Канмаллаччĕ ытларах.—
Чиперех-çке хĕретеççĕ
Пикесем айăпсăра.

«Юрĕ,—шухăшларĕ каччă,—
Тавăрам-ха эп сире.
Чĕрĕсем тек ан вăркаччăр,
Ан якатăр чĕлхĕре».

Васкамасăр та типтерлĕн
Лартрĕ те «çависене»,
«Çивĕчрех!»—тесе тивретрĕ
Ташлакан лашисене.

Сасă кайрĕ... Вĕчĕрхенчĕç
Чĕрисем хĕрупраççен.
Кашниннех пакус вĕçленчĕ
Çĕн машина иртнĕрен.

...Ялалла хĕрсем уттарчĕç
Çĕклесе çависене.
Ăшшăн кулчĕ çамрăк каччă,
Алă сулчĕ вĕсене.

---

Геннадий ЛИСИН

* * *

Килетĕп эп тăван яла.
Çиçсе выртать каçхи тĕнче.
Клуб çийĕн вĕлкĕшет ялав,
Пас укаланнă ун çинче.

Таçта янратрĕç таврана:
«Ай-хай, ачамăр та маттур...»
Кĕрте касса вĕçет çуна,
Пĕркенчĕк пек çĕкленчĕ юр.

Каччи таяннă хĕр çумне...
Чăкăртатса çeç юлчĕ сас.
Çĕн çын! Вăл хăйĕн тантăшне
Асăрхамарĕ те пулас...

Вăйя çӳренĕ туссемпе,
Юлман эп ташă картинчен...
Çуна йĕрри чугун çул пек
Ялтрарĕ уйăх çуттинче.

Киле çитсен каллех аннем,
Тен, кин пирки сăмах пуçлать.
Туятăп: çамрăк чун-чĕрем
Пускил хĕрнех савма хушать.

---

## Икĕ сăвă

Федор ТИХОНОВ

* * *

Хĕвел пек ачасем çуралĕç пирĕн,
Çĕршывшăн пулĕç усăллă çынсем.
Хавасланса вĕсемшĕн каçăн-ирĕн
Телейлĕн тапĕç пирĕн чĕресем.

Ун чух, пĕлетĕп, вăхăт улăштарĕ
Чие çырли пек санăн пит-куçна.
Анчах хĕрӳллĕ юрату кăварĕ
Çаплах вăй парĕ ватăлми чуна.

* * *

Çĕмĕрт çеçки пек юр çăвать.
Мулкач сикет те йĕр тăвать.
Ял çумĕнчи вăрман-ката
Асилтерет тек сан ята.

Паян эс, тусăмçăм, инçе.—
Çӳрен Мускав урамĕнче.
Хăçан эс вĕренсе пĕтерĕн,
Хăçан ман тунсăха сӳнтерĕн?

Унта çӳретĕп йĕлтĕрпе,
Хыçра вĕçет шап-шур кĕрпе.
Тӳлек уçланкăна сăнатăп:
Сан пĕлтĕрхи йĕре шыратăп.

Çĕмĕрт çеçки пек юр çăвать.
Мулкач сикет те йĕр тăвать.
Ял çумĕнчи вăрман-ката
Асилтерет тек сан ята.

---

Варкăшать çил. Сывлăш уçă.
Панулми çĕре ӳкет.
Çĕн сад çуммĕн юланутçă
Ерипен кăна килет.

Мăшăр куçĕ—йăлтăр сулăм,
Сарă çӳçĕ вĕлкĕшет.
Ах, мĕн пулчĕ: çамрăк чунăм
Ирĕлет пек, тем сисет.

Ман тĕле çитсен йăл! кулчĕ,
Чарчĕ шухă лашине.

## Малтанхи юрату

Мария ВОЛКОВА

«Ырă хĕр,—тет,—кăмăл туччĕ,
Памăн-ши пĕр улмине?»

«Лайăх каччăшăн шел мар»,—теп,
Шур улма сĕнеп ăна.

Вĕрлĕк урлă лăпкăн: «Çук,—тет,—
Теприне эс пар мана?»

«Юрĕ»,—терĕм, икĕ хĕрлĕ
Улма патăм суйласа.
«Тавтапуç, пикеçĕм»—терĕ
Каччă, ман куçран пăхса.

Кăшт хавас пек, кăшт салху пек,
Тем çитмест те пек чуна.
«Мĕн-ши ку?» теп. «Юрату» тет,
Вăтанса чĕре мана.

## Савниçĕм, эс ăçта?

Юрий ПЕТРОВ

Нихçанхинчен те кăмăл уçă!
Садра каллех шап-шур улма,
Сар лĕпĕш пек саралнă çулçă
Каллех вĕçсе ӳкет умма.

Пĕрне-пĕри ытараймасăр
Эпир лараттăмăр ирччен.
Калаттăн эс пĕр пытармасăр:
«Кĕтсем мана çитес кĕрччен».

Кашни ирех сада тухатăп,—
Вăл хĕрлĕ, сарă та кĕрен.
Кунта эп сансăр тунсăхлатăп:
Савниçĕм, мантăн-им кĕре?

## Сĕрен кĕперĕ

Михаил ЛЬВОВ

Сасартăк çумăр чарăнчĕ.
Шăнкăртатать валак.
Сĕрен кĕперĕ карăнчĕ
Сăрт урлă Çавала:

Кĕрен те чакăр, кăн-кăвак,
Пин тĕслĕн ӳпĕнет.
Калаççĕ чăвашсем: «шыва
Туртать вăл тӳпене».

Ача курать те çав сăна
Чупать ун еннелле;
Çак сăрт çине тăрсассăнах
Алла вăл кĕмелле.

Ача чупать, анчах кĕпер
Тек тарнăн туйăнать.
Çапла асамлă пĕккипе
Шав илĕртет ăна.



# Хура куҫҫем

*Калав*

Иван ГРИГОРЬЕВ

Алексей агрегатӗнче ӗҫлессине пӗлсен, Кӗтерук малтан шутсӑрах савӑнчӗ. Пултаруллӑ комбайнерпа пӗр самоходка ҫинче пуласси уншӑн темрен те паха. Алексей ют ҫынах мар вӑл, пӗр ял каччи. Тӑван ялтан аякра ӗҫлемелле пулнӑшӑн ҫеҫ Кӗтерук кӑштах кӑмӑлсӑрланчӗ, хӑй ҫапах та хирӗҫ ним те каламарӗ.

Комбайн маршручӗпе паллашсан, Алексей хӑй самоходкипе колхоз хирне тухса кайрӗ. Ҫанталӑк юлашки кунсенче япӑх пулчӗ: е вӗтӗ ҫумӑр пӗрӗхсе иртрӗ, е тӳсме ҫук шӑрӑх тӑчӗ; аслатийӗ те каҫ-каҫ хытӑ кӗмсӗртетрӗ.

Вӗсем эрнене яхӑн ӗҫсӗр ларчӗҫ.

Алексей агрегачӗ малтанхи кунах ыттисенчен лайӑх ӗҫлерӗ. Каҫхине вара вӗсем ҫинчен «боевой листокра» та ҫырса кӑларчӗҫ. Алексей хӑй савӑннине питех палӑртмарӗ, Кӗтерук вара ҫӗрӗпех канлӗ ҫывӑраймарӗ, темиҫе хутчен те будкӑран тухса, ыраш пучахӗсене тыта-тыта пӑхрӗ. «Уйӑх ҫути пур, сывлӑм ӳкмен пулсан, ҫӗрле те вырма пулатчӗ»,— шухӑшларӗ вӑл.

Кӗтерук хӑйне ыттисенчен телейлӗрех пек туйрӗ. Чӗринчи хавaслӑ шухӑш-туйӑмӗсем ҫинчен пӗр-пӗр ҫывӑх тусне пӗлтерес килчӗ унӑн, анчах Алексейпе калаҫма хӑю ҫитерейменӗ, ҫитменнине тата поварпа учетчицӑна та питех шанса каймарӗ вӑл.

...Тӳпене хӗвел ярӑнса хӑпарать ҫеҫ—хирте сывлӑм типет. Ун пек чух Кӗтерукӑн кӑмӑлӗ уҫӑлать. Вӑл вӑрттӑн-вӑрттӑн каччӑна пӑха-пӑха:

Пирӗн бригада ӗҫе тухсан,
Ес юррийӗ янрасан...—

тесе кӗвӗлеме пуҫлать. Ун сасси самоходка моторӗн кӗрлевне те хупласа хурать. Хӗр сасси илемлӗ, вӑл чӗре варринчен шӑранса тухать. Кам пӗлет, каччӑ чӗрине хускатасшӑнах бригада ӗҫе тухни ҫинчен юрӑ шӑрататъ-тӗр Кӗтерук?..

Ес юррийӗ янрасан...
Авӑтать куккук,
Янӑрать вӑрман...

— Эсӗ куккук сассине илтетӗн-и вара?—ыйтать каччӑ куларах.—Аҫтарах авӑтаҫҫӗ вӗсем?

Самантлӑха иккӗшӗ те шӑпланаҫҫӗ. Хӗр вӑтаннине каччӑ сисет, ҫавна пулах-и вӑл шӳтлерехххӗн:

Чӳречене уҫса, йӑл-йӑл кулса
Кӑчӑк туртса илчӗ хура куҫ...—

тесе хурать. Ку Кӗтерука татах та ытларах иментерет, питне ирхи шуҫӑм пек хӗрлӗ тӗс ҫапать, кӑштах аяккалла пӑрӑнса, вӑл таҫта-таҫта тӑсӑлакан хирсем ҫине тинкерсе пӑхать.

Нумай ӗҫлеймерӗҫ вӗсем ҫак кун, ҫулпа пӗр мотоцикл вӗҫтерсе пынине курчӗҫ. «Вера Ивановна килет»,—тӳрех палласа илчӗ Алексей.

— Эсӗ мансӑрах ӗҫле-ха, эпӗ Вера Ивановнӑпа ытти комбайнерсем патне ҫитсе килем,— терӗ те Алексей, самоходкине чармасӑрах машина ҫинчен сиксе анчӗ, райкомол секретарьне хирӗҫ чупрӗ. Вӗсем пӗр-пӗрне алӑ тытнине ҫеҫ курса юлчӗ Кӗтерук: хир кӗтессинче ҫаврӑнса, малалла кайрӗ хӗр.

Пӗччен юлсан темле шӑрӑх пулнӑн туйӑнчӗ хӗре. Кӗтерук комбинезон ҫаннипе питне шӑлса илчӗ, штурвал кустӑрмине ҫирӗппрех тытрӗ те газне хушрӗ.

Алексее комсомол секретарьне суйласан, вӑл райкомола час-часах кӗрсе тухни Кӗтерука малтанах ним чухлӗ те кӳрентерместчӗ. «Еҫсӗрех ҫӳремест пуль ӗнтӗ»,—шухӑшлатчӗ хӗр, хӑй ӑшӗнчи вӑрттӑн туйӑмӗсене каччӑран пытарса. Анчах Кӗтерук кун иртмессерен пӑшӑрханма пуҫларӗ. Канӑҫне ҫухатрӗ вӑл, иккӗленчӗ. «Мӗн каласан та, ахалтен мар ку,—терӗ вӑл паян та, Алексей райкомол секретарьне хавассӑн кӗтсе илнине асӑрхаса.—Вера Ивановна ҫул ҫинче курӑнсанах, унӑн куҫӗсем вут пек ҫунма пуҫларӗҫ».

Кӗтерук каллех йӑпӑртлӑха хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхрӗ. Алексейпе Вера Ивановна хирти ҫул ҫинче тусан ҫӗклесе хӑварчӗҫ. Хӗр савӑнӑҫӗ, ирхи сывлӑм типнӗ евӗрлӗ, хӑвӑрт сӗвӗрӗлчӗ. «Ан тив, пултӑрах,—тарӑхмаллипех тарӑхса шухӑшларӗ хӗр.—Мана мӗн? Тепӗр тесен—мӗнех вара... Уншӑн ҫунса чуна ыраттарма... темех мар-ха вӑл...»

Ҫапах та, Кӗтерукшӑн пулсан, Алексей пек каччӑ ялта урӑх ҫук. Йӗкӗтӗн ҫӑл пек тарӑн та сенкер куҫӗсем ытарайми хитре. «Пӗрре пӑхсан, чӗрене ирӗлтерет, тепре пӑхсан, чуна илет», теҫҫӗ ял хӗрӗсем. Ҫапла калани Кӗтерука шутсӑрах савӑнтаратчӗ. Каччӑн куҫхаршийӗсем те Кӗтерука ҫав тери килӗшеҫҫӗ, вӗсем каччӑн вӑрттӑн туйӑмӗсене те, унӑн ырӑ кӑмӑлне те ялти хӗрсенчен пытарса хунӑ пек. Тутисем хулӑн пулсан та, Кӗтерука курсан, вӗсем яланах кӑмӑллӑн кулаҫҫӗ.

Кӗтерук хӑй те ялти чипер хӗрсенчен пӗри. Анчах сӑмах сарма юратакан хӑшпӗр хӗрарӑмсем ун пирки сахал мар сӳпӗлтетеҫҫӗ. Халӑх тем те калаҫать, халӑх чӗлхине карта тытаймӑн. «Кӗтерне пек хӗрсен хулара ҫеҫ ярӑнса ҫӳремелле»,—тесе йӗкӗлтеҫҫӗ пӗрисем. «Ун пек сӑн-питпе тусан ӑшӗнче чакаланмалла мар, сцена ҫинче кӑна юрламалла, халӑха сӑнӗпе тӗлӗнтермелле.»—теҫҫӗ теприсем. «Колхозра ҫеҫ хитре вӑл, хула ҫыннисем хушшинче ҫутӑ сӑнри хуратут пекех»,—юриех хӗре кӳрентересшӗн пулнӑн калаҫҫӗ йӗплӗрех чӗлхеллисем. Анчах Кӗтерук вӗсене ҫиленмест, йӑл кулать те ирттерсе ярать.

Хӗр ҫаксене аса илет те комбинезон кӗсйинчен ҫавра тӗкӗр кӑларать. Ана хирӗҫ куҫкӗски ҫинчен сӑмала пек хура куҫсем пӑхаҫҫӗ. Тӗм хура ҫӳҫӗсене ҫивӗтлесе, пуҫӗ тавра ҫавӑрса хунӑ. Пӗчӗк пичӗ-куҫӗ хӗре татах та ҫамрӑкрах кӑтартать, ӑна никам та вунсаккӑр тултарса вунтӑххӑра кайнӑ, тесе калас ҫук. Тӑпӑл-тӑпӑл ҫавра кӑкӑрне хулӑн пиртен ҫӗленӗ комбинезон пытарса тӑрать. Ҫинҫе пилӗкне Кӗтерук салтак пиҫиххийӗпе ҫавӑрса ҫыхнӑ. Ахӑртнех ку Алексей пиҫиххийӗ пулмалла.

Кӗтерук кӑштах тусанпа вараланнӑ сӑнне куҫкӗски ҫинче курчӗ те алтутрипе питне шӑлкаларӗ, кайран пӗчӗкҫеҫ тӗкӗрне васкаса пытарчӗ. Те именчӗ вӑл хӑй сӑнӗнчен, те юташӑнчӗ— пӗлме ҫук.

Пӗрре Кӗтерук Алексейпе пӗрле клубран таврӑнчӗ. Каччӑ ӑна киле ҫи-

тичченех ӑсатрӗ. Халиччен каччӑпа хултан-хул тытса утман хӗр Алексейрен вӑтанчӗ, унпа юнашар утнине ҫынсем курсан ялта сӑмах сарӑласран та хӑрарӗ. Апла пулсан та, вӑл йӗкӗте нимех те шарламарӗ, ӑна кӳрентерес темерӗ хӗр.

— Эсӗ кӑҫал килтех пурӑнасшӑн-и?—ыйтрӗ Алексей, Кӗтеруксен тӗлне ҫитсен.

— Ӑҫта каяс манӑн? Ялта ӗҫлеме те ҫынсем кирлӗ вӗт,—тавӑрчӗ хӗр.

— Атя, иксӗмӗр эмтэса каятпӑр...

— Мӗн курман эпӗ унта? Машина таврашне пӗлместӗп, служащи пулас килмест манӑн.

— Кӗҫех трактористсен курсӗ уҫӑлмалла теҫҫӗ...

Ҫак каҫхине хӗрпе каччӑ Кӗтеруксен пӳрчӗ умӗнчи пӗчӗк сак ҫинче нумаййчен ларчӗҫ. Сӑмах-юмахӑн вӗҫӗ-хӗрри те пулмарӗ. Хӗр сивӗпе ҫӳҫенме пуҫланине туйсан, Алексей ӑна шинельпе пӗркерӗ.

— Эсӗ ҫиленмерӗн пулӗ те?—тесе ыйтрӗ хӗр уйрӑлас умӗн.

— Мӗншӗн?—ӑнланмарӗ Алексей.

— Эсӗ шӑнса пӑсӑлма пултаратӑн вӗт... Шинелӳ ҫӳхе тата хӑвӑн...

— Ав мӗн пирки эсӗ?—кулса ячӗ Алексей.—Эпӗ чирлесрен хӑратӑн-им вара?

— А-хӑ...

— Эх, эсӗ те ҫав,—хӗре ачашшӑн ҫупӑрласа кулса ячӗ каччӑ.

Вӗсем иккӗшӗ те ура ҫине пӗр харӑс тӑчӗҫ. Ҫав вӑхӑтра, юри тенӗ пекех, Алексейӗн шинель тӑхи Кӗтерук пальтинчен ҫакланчӗ.

Хӗрпе каччӑ тӑхана иккӗшӗ те пӗрле вӗҫертесшӗн пулчӗҫ. Те сарӑмсӑр, те юриех—Алексей хӗр аллине чӑмӑртарӗ, ӑна хӑй кӑкӑрӗ ҫумне пӑчӑртаса тытрӗ. Самантлӑха икӗ мӑшӑр куҫ тӗлех пулчӗҫ.

Кӗтерук именсе пуҫне пӗкрӗ, каччӑн вӗри тути питне сӗртӗннине туйрӗ вӑл. Ҫак кунран вара вӗсен пӳрчӗ умӗнчен васкамасӑр утса иртекен каччӑна хӗр тек-текех вӑрттӑн сӑнарӗ, йӗкӗт вӗсен еннелле ҫаврӑнса пӑхмасӑр иртнине асӑрхасан, кулянса ассӑн сывларӗ, хыпӑнса ҫунакан чӗрине пусарма тӑрӑшрӗ.

Хӗле кӗрсен, Алексей МТС-а ӗҫлеме кайрӗ. Ҫара кайиччен вӑл районта чи маттур комбайнер пулнӑ, тесе калатчӗҫ.

Вӑл МТС-ра ӗҫлеме пуҫласан, тӑван ялне час-часах килсе ҫӳрерӗ, халичченхи пекех Кӗтеруксен умӗнчен васкамасӑр утса иртрӗ, кӗркуннехи пекех хӗр чӳречисем ҫине куҫ илмесӗр пӑхрӗ. Ҫавӑн чухне Кӗтерук килте чӑтса тӑраймарӗ, клуба васкарӗ. Йӗкӗт те хӑйне кӗтнине пӗлсен, хӗр шутсӑрах хӗпӗртерӗ. Ун пек чухне вӗсем пӗрпӗринчен уйрӑлайми пуплерӗҫ, каччӑран уйрӑлса килне кӗресси килмерӗ.

Пӗррехинче, агрокружок занятийӗ вӑхӑтӗнче, Алексей клуба Вера Ивановнӑпа пӗрле пырса кӗчӗ. Вӗсем иккӗшӗ те районтан халь ҫеҫ таврӑннӑ пулас, хӑйсене шап-шур пас тытнӑ. Хӗрпе каччӑ малалла иртрӗҫ те пушӑ тенкел ҫине пырса ларчӗҫ. Икӗ ҫамрӑк темшӗн хавасланнине Кӗтерук тӳрех асӑрхарӗ, ӳнӑн пичӗ вут пекех пӗҫерме пуҫларӗ.

Кӗтерук Вера Ивановнӑна чылайранпа пӗлет. Иртнӗ ҫул Вера Ивановна ялти шкулта вӗрентетчӗ. Чипер хӗр, лайӑх учительница, тетчӗҫ ӑна ял ҫынисем. Вӑл ҫырӑ ҫӳҫне ҫивӗтлеччӗ те вӗҫӗсене сенкер хӑю яратчӗ. Ҫулла вара, вӑрӑм ҫивӗтне юриех кӑтартасшӑн пулнӑ евӗр, ҫара пуҫӑн ҫӳретчӗ, хӗлле хитре шӗлепке тӑхӑнатчӗ е шуппка ҫӑм тутӑр ҫыхатчӗ. Учительница каникулсем вӑхӑтӗнче, ҫулла кӑна мар, ҫуркунне те, хӗлле те колхозри ӗҫсенчен хӑраса тӑмастчӗ, ерӗҫнӗ вӑхӑтра ҫынсемпе пӗрле ӗҫе васкатчӗ. Ял каччисем ӑна пурте тенӗ пекех куҫ хывнӑччӗ, анчах Вера Ивановна вӗсене пачах асӑрхаман пек туйӑнатчӗ.

Пӗлтӗр Вера Ивановнӑна райкомол секретарьне суйларӗҫ. Анчах вӑл Кӗтеруксен ялне унчченхи пекех час-час пырса ҫӳретчӗ, каҫа юлсан, Алексейсем патӗнче ҫӗр выртатчӗ. Ялта ӗҫленӗ чухне те вӑл Алексейсем патӗнче пурӑннӑччӗ.

Алексей амӑшӗ ҫын ҫинче ӑна мухтамасӑр чӑтаймастчӗ, ашшӗ те учительницӑна хӑйсен килӗнчи ҫын выраннех хуратчӗ. «Вера Ивановна пирӗн Алексейпе пӗр сӑнлах, пиччӗшӗпе йӑмӑкӗ пекех»,—тесе каланине Кӗтерук хӑй те темиҫе те илтнӗччӗ. Алексей Вера Ивановнӑна качча илет, текен сӑмах тухнӑччӗ ялта. Малтанах хӗр ҫакна ӗненменччӗ, анчах халь ҫак сас-хура йӑлтах тӗрӗс пулнӑн туйӑнчӗ ӑна.

Заняти пӗтсенех, Кӗтерук клубран васкаса тухрӗ, ҫын куриччен килне ҫитсе ӳкесшӗн пулчӗ. Анчах ӑна правлени чӗнсе кӗртрӗҫ.

Правленире, председательсӗр пуҫне, Алексейпе Вера Ивановна ҫеҫчӗ. Вӗсем халь кӑна Кӗтерук ҫинчен калаҫнӑ курӑнать. Хӗр кӗрсен, Алексей пӳлӗннӗ пек пулчӗ те райкомол секретарьне хирӗҫ сӗтел умне пырса ларчӗ. Вера Ивановна Кӗтерука механизаторсен шкулне вӗренме ярасси ҫинчен сӑмах хускатрӗ.

—Эпӗ халь те вӗренетӗп-ҫке,—терӗ Кӗтерук, райкомол секретарьне куҫӗнчен пӑхма вӑтанса.

— Агрокружокра вӗренни лайӑх-ха вӑл,—терӗ Вера Ивановна ҫав тери йӑваш сасӑпа. Вера Ивановна хӑйӗн ҫивӗч куҫӗсемпе, хӗр шухӑшне витӗрех курас пек, ӑшшӑн тинкерсе пӑхрӗ.—Кӑҫал пирӗн комбайнсем чылай килеҫҫӗ, анчах вӗсем ҫинче ӗҫлекенсем сахал. Колхозран сана вӗренме ярасшӑн.

— Пултараймастӑп пуль эпӗ?—терӗ иккӗленерех Кӗтерук.

— Районтан пӗтӗмпе ҫирӗм хӗр ытла каяҫҫӗ.

— Темле-ҫке... Анне пӗччен юлать те...

— Аннӳне пулӑшӑпӑр. Кӑмӑл пулсан—ыран райкомола пыр, кирлӗ хучӗсене туса парӑпӑр.

...Хӗвел чылай ҫӳле хӑпарчӗ, анчах Алексей ҫав-ҫавах таврӑнмарӗ. Асаилӳсенчен хӑтӑлас тесе, Кӗтерук самоходка хыҫҫӑн юлакан улӑма пӑхапӑха пычӗ, бункерти тырра ывӑҫипе сӑвӑра-сӑвӑра илчӗ.

Кайран кӗтмен ҫӗртен комбайна чарма лекрӗ. Самоходка хаччи путене йӑвине аркатса тӑкнӑ, вӑл ҫеҫ те мар...

Кӗтерук аллине сулчӗ те, шывланнӑ куҫӗсене шӑлса, васкамасӑр будка еннелле утрӗ.

Мотоцикл-коляска пӗр вӑхӑт шоссепе вӗҫтерсе пычӗ. Хирти стан патне ҫитесси нумай та юлманччӗ, мотоцикл чарӑнчӗ. Унтан иккӗн анчӗҫ те будка еннелле пӑхма пуҫларӗҫ.

— Кунтан мотоциклпа иртейместпӗр пулӗ?—каччӑ еннелле ҫаврӑнчӗ райкомол секретарӗ.

— Пускил лайӑх пулсан, ҫерем ҫинче те ҫуна шӑвать,—шурӑ та тикӗс шӑлӗсене кӑтартса, йӑл кулса илчӗ Алексей.

— Апла пулсан, кайӑпӑр... Анчах мӗншӗн хирте пӗр сас-хура та ҫук?—йӗри-тавра пӑхкаларӗ Вера Ивановна.—Кӗтерук апата кайман пулӗ-ҫке.

— Халь иртерех-ха,—аллинчи сехетне пӑхса илчӗ Алексей.—Тен, хирӗн тепӗр вӗҫӗнче пулӗ...

— Мӗнле ӗҫлет сан помощнику? Килтен аякра тесе ӳпкелешмест-и?

— Илтсех кайман.

Алексей ҫул ҫинчи тусанран хӑвӑрт ҫӑвӑнса тасалчӗ те будкӑна кӗме тӑчӗ. Вера Ивановнӑна вӑл аллине тӑсса пачӗ, лешӗ ӑшшӑн кулса, каччӑ аллине ҫавӑрса тытрӗ, вара тӳрех ҫӳлти пусма ҫине пусса, физкультурница пек, ҫӑмӑллӑн сиксе хӑпарчӗ.

— Кунта эпир дачӑри пек пурӑнатпӑр, килнӗ чухне кӗрсе курӑр ӗнтӗ,—терӗ Алексей.

Ҫав вӑхӑтра чаршав хыҫӗнче такам сасси илтӗнчӗ.

— Чим-ха, кам макӑрать сирӗн кунта?—чаршав еннелле пуҫӗпе сӗлтрӗ райкомол секретарӗ.

Алексей ҫурма сӑмахранах пӳлӗнчӗ. Чӑнах та чаршав хыҫӗнче такӑшӗ ӗсӗклесех макӑрать иккен.

— Кам унта?—ыйтрӗ Алексей.

Ӗсӗклени тӳрех чарӑнчӗ. Хирӗҫ чӗнекен-тӑвакан пулмарӗ. Вера Ивановна чаршава асӑрханса уҫрӗ те Алексее кӑчӑк туртрӗ.

Шурӑ ҫивиттипе витнӗ кровать ҫинче чечеклӗ платье тӑхӑннӑ хӗр урисене хуҫлатса выртать. Вӑл пуҫне кӑпӑшка минтер ӑшне чикнӗ. Хӗрӗн хулпуҫҫийӗсем хушӑран чӗтренсе илеҫҫӗ. Тӗм хура ҫӳҫӗ арпашӑнса кайнӑ, питне шурӑ алтутрипе хупӑрласа тытнӑ.

— Кӗтерук, мӗн пулнӑ сана?

Хӗр ответ памарӗ.

— Кӗтерук, лӑплан-ха эсӗ, кам кӳрентерчӗ сана?—хулпуҫҫинчен тытса тӑратасшӑн пулчӗ ӑна Вера Ивановна, анчах лешӗ ун аллине сирсе ячӗ те каллех минтер ҫине ӳпӗнчӗ.

— Кӗтерук, йӗркеллӗ пул-ха эсӗ, пӗчӗк ача мар вӗт,—чӗнчӗ каллех Вера Ивановна.—Эпӗ юриех сана курас тесе килтӗм.

Вера Ивановна сӑмахӗсем Кӗтерука ним чухлӗ те лӑплантармарӗҫ, ҫунакан кӑвайт ҫине бензин сапнӑ пекех пулчӗҫ вӗсем. Хӗр ҫав самантрах тӑрса ларчӗ те райкомол секретарьне макӑрса хӗрелнӗ куҫӗсемпе тӗлӗнсе пӑхрӗ.

— Мĕн курмалли пултăр мана?— кăшкăрнă пекех каларĕ Кĕтерук.

— Мĕншĕн ĕçре мар-ха эсĕ, мĕншĕн куççуль юхтарсах макăратăн?—ним тума пĕлменнипе ыйтрĕ Алексей.

— Путене йăвине комбайнпа таптаса аркатрăм, акă мĕншĕн макăратăп эпĕ,—те чăнласах, те тăрăхласа каларĕ хĕр, каччăна куç хӳрипе пăхса илсе.

— Эсĕ тем калаçатăн, ним те ăнланмастăп...

Çак самантра хĕрĕн çав тери çилĕ килчĕ, анчах вăл хăйне хăй тытса чарчĕ те, никам çине те пăхмасăр хушса хучĕ:

— Чалăш транспортер ĕçлемест... Пăсăлнă вăл, шăтнă... Тырă юхать. Эсир иксĕр... мотоциклпа ярăнса çӳретĕр,—терĕ те Кĕтерук, аллине сулса, будкăран виркĕнсе тухрĕ. Алексей ун хыççăн ыткăнчĕ, лайăхрах ыйтса пĕлесшĕн пулчĕ, анчах хĕр итлеменнине кура комбайн патнелле чупрĕ. «Акă сана ăмăрту,—шухăшларĕ вăл,—тупнă мухтанмалли. Çак çемçешке хĕрсемпе ĕçлесе пĕтерейĕмĕн, намăс курни кăна... Вĕсемпе районта та чи кая тăрса юлăн... Хам патăма мĕн тума илмелле пулчĕ-ха ăна? Пукане вăл, комбайнер помощникĕ мар»,—сăлтавсăрах хĕре хăтăрса тăкрĕ Алексей. Анчах çав самантрах Кĕтерука хĕрхенсе кайрĕ, ăна пĕр-пĕр ăшă сăмах каласа йăпатас килчĕ.

Кĕтерук çакна пĕлмерĕ. Унăн чунĕ кӳтсе çитрĕ. Комбайн пăсăлни, Вера Ивановна сăмахĕсем хĕр кăмăлне хуçрĕç. Вăл сукмакпа таçта чупса кайрĕ те часах ыраш хушшинче курăнми пулчĕ.

Самоходка транспортерне хĕвел аннă тĕле тӳрлетсе пĕтерчĕç. Тепĕр кунне Кĕтерук каллех комбайнпа ĕçлеме пуçларĕ. Комбайн ĕçе тытăнсан, Алексейпе Вера Ивановнăна çиленни те, ирхи хĕвелпе типнĕ сывлăм пекех, хăвăрт иртсе кайрĕ.

...Будка çумĕнчи каска çинче Кĕтерук пĕчченӗх ларать.

Каçхи тĕнче шăппăн-шăппăн тĕлĕрет.

> Çӳл тӳпере çич çăлтăр,
> Çиччĕшĕ те çут çăлтăр.
> Пирĕн бригадăра çичĕ хĕр,
> Çиччĕшĕ те сарă хĕр...—

каçхи шăплăха хуçкатса таçта юрлать пĕри.

«Çапла çав, саррисене çеç кăмăллатăр эсир,—тарăхса шухăшлать хĕр, хăйĕн çивĕччĕсене пăчăртаса тытса.—Хурисем çине çаврăнса та пăхмастăр...»

Те каç пулнă-пулманах вăйлă сывлăм ӳкнипе, те çӳхе платье çеç тăхăннипе шăмшак çӳçенет. Кунĕпе ĕçлесе ывăннă хыççăн сывăрас та килет, анчах будкăра паçăртанпах иккĕн калаçса лараççĕ. Мĕн калаçни илтĕнмест, Кĕтерук хăй те вĕсене итлесшĕнех пулмарĕ, будкăна кĕрсе те чăрмантарас мар терĕ. Пирвайхи юрату çапла асаплă та телейсĕр пулнишĕн пăшăрханса ларчĕ вăл. Пĕрне пĕри юратакансен хушшине Вера Ивановнăн мĕншĕн кĕмеллеха? Çапах та мĕн çинчен калаçаççĕши вĕсем?

— Эсир сывăрма яла каятăр-и?— илтрĕ Кĕтерук Алексей сассине.



— Çук, кунтах юлатăп е тӳрех райкомола каятăп,—терĕ Вера Ивановна.—Мотоциклпа çур сехетрен райцентрта пулатăп. Кунта ĕç пĕтернĕпе пĕрех.

— Пирĕн патра та ырăн тупма пулать, комбайнерсенчен хăшпĕрисем çывăрма яла каяççĕ. Çĕрле çула тухма та ансатах мар.

Каччă сассинче темле тунсăх та çав тери ачаш туйăмсем пуррине сиссе илчĕ Кĕтерук. Вăл сиксе тăчĕ, темиçе утăмранах темрен таканчĕ. Шыв витри кĕмсĕртетсе аяккалла кусса кайрĕ. Будкăран Вера Ивановна тухрĕ.

— Мĕн пулчĕ, Кĕтерук?—ыйтрĕ вăл.

— Витресем пăрахса тултарнă та, ура пусма та ырăн çук,—терĕ хĕр, ним пулман пекех хăйне лăпкăнрах тытма тăрăшса.

— Иксĕмĕр пĕрле çывăратпăр-и кĕçĕр?—хĕре алран тытрĕ райкомол секретарĕ.

«Мĕншĕн манпа?»—тесе ыйтасшăнччĕ пике, чĕлхи çаврăнмарĕ.

Кĕтерук райкомол секретарĕ валли ырăн сарса хатĕрлерĕ. Алексей вĕсене ырă каç сунчĕ те будкăран тухса кайрĕ.

Кĕтерук тӳрех пуçĕ çийĕнченех утиялĕпе витĕнсе выртрĕ. Вера Ивановна платьине хывса пĕртен-пĕр хыçлă пукан çине çакрĕ, сĕтел çинчи лампăна вĕрсе сӳнтерчĕ.

Пĕр вăхăт икĕ хĕр шăппăн выртрĕç. Кашниех харпăр хăй тĕллĕн шухăша кайрĕç пуль вĕсем.

— Эсĕ Алексее çав териех юрататăн-и?—кĕтмен çĕртен ыйтрĕ Кĕтерук.

— Кам юратмĕ ăна?—ытарлăн сăмах хушрĕ Вера Ивановна.

— Хам та çавна каламастăп-и?.. Ĕçчен, районта паллă çын... Тен Казахстана та хăй комбайнĕпех ĕçлеме кайĕ.

— Эсĕ каяс теместĕн-и? Сан ырăнта пулсан, хам та кайнă пулăттăм.

— Кам чарать, халь çĕнĕ çĕре хĕрсем те нумай каяççĕ вĕт,—тĕртсе илчĕ Кĕтерук.

— Ху ĕçленĕ комбайнпа Казахстана тырă вырма каясси пысăк чыс вăл,— терĕ çав хушăра Вера Ивановна.

Кĕтерук хăй те сисмерĕ, райкомол секеретарĕпе ăшшăн калаçма пуçларĕ. Вăхăт чылаях пулчĕ пулас, таçта автансем авăтни те илтĕнчĕ. Юлашкинчен вĕсем иккĕшĕ те шăпăрт пулчĕç. Пĕр вăхăт будкăра лăпкăн сывлани çеç илтĕнсе тăчĕ. Анчах Кĕтерук çаплах çывăрса каяймарĕ, пĕр аякки çинчен теприн çине çаврăнкаласа выртрĕ.

— Итле-ха, Кĕтерук, атя пĕрле вырататпăр,—терĕ Вера Ивановна, вара хĕр сăмах хушиччен унпа юнашар пырса ларчĕ. Вĕсем татах темĕнччен пăшăлтатрĕç, текех хыттăн калаçмарĕç хĕрсем. Икĕ хĕр калаçуне никам та илтмерĕ.

Çакăн хыççăн Вера Ивановна кун сиктерсех бригадăна килсе çӳреме пуçларĕ.

...Чугун çул станцийĕ еннелле самоходкăсем кĕрлесе пыраççĕ. Малти комбайн çинче пысăк мар хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Ку—ăмăртура мала тухнă Алексей агрегачĕ. Комбайн штурвалĕн кустăрми умĕнче хура çӳçлĕ, йĕпкĕн хура куçлă хĕр пĕчченӗх ларса пырать.

Кĕтерука пĕччен пыма ытла та кичем. Алексей райкомола кĕрсе юлчĕ. Вера Ивановна та комбайнерсемпе пĕрле çĕнĕ çĕре пырать пулас.

Паян вĕсем Казахстана тухса каяççĕ. Алексейпе райкомол секретарĕ халь те станцие çитеймени хĕре каллех çилентерме пуçларĕ. Комбайнсене те тахçанах платформăсем çине вырнаçтарса лартнă, кĕçех пассажир поезчĕ те килмелле.

Алексейпе Вера Ивановна митинг пуçланас умĕн тин çитрĕç. Митинг васкавлăн иртрĕ. Комсомолецсем пĕрпĕрне сывлăх сунса ăсатрĕç, Казахстанра çĕнĕ ӳсĕмсем тума сĕнчĕç, парнесем парса тултарчĕç.

Районтан чылай комбайнерсем Казахстана каяççĕ. Вĕсенчен Алексейпе Кĕтерук тата темиçе çамрăк хăйсен самоходкисемпе çула тухма тивĕçлĕ пулчĕç. «Вера Ивановна пымасть-ши?»—темиçе хутчен те хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Кĕтерук, райкомол секретарĕ çинчен куçне илмесĕр.

Алексей Вера Ивановнăпа перрон çинче сывпуллашса уйрăлчĕ. Кĕтерук вĕсене вагон чӳречинчен сăнаса тăчĕ. Комбайнер хĕр аллине çав тери нумай вăхăт тытса тăнăн туйăнчĕ.

Акă поезд майĕпен тапранчĕ. Алексей райкомол секретарьне алă сулчĕ те вагон пусми çине сиксе хăпарчĕ.

Вагона кĕрсен, Алексей Кĕтерукпа юнашар пырса ларчĕ.

Сенкер тутăрлă пĕр хĕр такама тем кăшкăрса каланине Кĕтерук чӳречерен курса юлчĕ. Вагонри хĕрпе каччă, калаçса татăлнă пекех, кантăкран кармашса пăхма пуçларĕç.

— Санăн сенкер куçусем Казахстана хăçан пыраççĕ?—каччăна куçран тинкерсе пăхрĕ хĕр.

Алексей малтанах хĕр сăмахĕсене ăнланса илеймерĕ пулмалла.

— Кам пирки калатăн эсĕ?—ыйтрĕ вăл станци курăнми пулсан.

— Пĕлместĕн пулать ĕнтĕ?—кулам пекки турĕ Кĕтерук.— Вера Ивановна сан патна час пыратăп терĕ-и?—юриех тăрăхланă пек каларĕ Кĕтерук.

# М. Ю. ЛЕРМОНТОВ

«Аслӑ поэт хӑй ҫинчен, хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлӗсем ҫинчен каланӑ чух пӗтӗм этемлӗх ҫинчен калать, мӗншӗн тесен, этемлӗх мӗнле пурӑнать—ҫавсем пурте унӑн чӗрипе ӑс-тӑнӗнче пур»,— тесе ҫырнӑ В. Г. Белинский вырӑссен аслӑ поэчӗн Михаил Юрьевич Лермонтовӑн сӑввисене пӑхса тухнӑ май.

Пушкин хыҫҫӑн вырӑссен демократилле поэзийӗн аслӑ ялавне Лермонтов тивӗҫлипех хӑй аллине илнӗ. Вӑл хӑйӗн ҫулӑмлӑ таланчӗпе вырӑс литературине хӑватлӑн малалла аталантарнӑ, ӑна татах та ҫӳлерех пусӑма ҫӗклеме пулӑшнӑ.

Эпир, социализм саманинче пурӑнакан ҫынсем, коммунизмӑн хӗвеллӗ ҫуртне тӑвакансем, Лермонтов произведенийӗсене паян та чӗререн кӑмӑлласа вулатпӑр. Мӗн пӑлхантарать, мӗн ҫӗклентерет пирӗн кӑмӑла ҫав произведенисене вуланӑ чух? Чи малтан—аслӑ поэт халӑх ирӗклӗхӗшӗн, унӑн малашнехи ҫутӑ пурнӑҫӗшӗн пӗтӗм чун хавалӗпе хыпӑнса ҫунни. Пусмӑрлӑхпа чуралӑх саманинчен поэт пирӗн ҫутӑ самана патнелле утнине эпир унӑн сӑвви-поэмисене вуланӑ чухне уҫҫӑн туйса тӑратпӑр.

Тӑван ҫӗршывпа халӑх кун-ҫулӗ ҫинчен Лермонтов, Пушкин пекех, пӗр канӑҫ пӗлмесӗр шухӑшланӑ. Унӑн хӑватлӑ пултарулӑхӗ вырӑс халӑхӗн аслӑ пултарулӑхӗнчен вӑй илсе ҫӑлкуҫланса тухнӑ. Вӑл вырӑс халӑх юррисемпе такмакӗсене, юмахӗсемпе халлапӗсене юратнӑ, хӑйӗн чӗлхине халӑхӑн чӗрӗ те илемлӗ чӗлхипе пуянлатнӑ. Хӑйӗн ҫулӑмлӑ пултарулӑхӗпе вара халӑха каялла парне кӳнӗ, халӑхӑн культура пуянлӑхне ӳстернӗ, вырӑс поэзине тӗнче литературин ҫулӗ ҫине тухма пулӑшнӑ.

Йывӑр саманара пурӑннӑ Лермонтов. Вӑл, 1814 ҫулхи октябрӗн 15-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе) ҫуралса, вунпӗр ҫула ҫитнӗ тӗле патша тытӑмӗ декабристсен пӑлхавне хаяррӑн пусарса лартнӑ. Российӑра 1-мӗш Николай патша вӑхӑчӗ—реакцилле тискер вӑхӑт пуҫланса кайнӑ. Халӑх хушшинчи кирек мӗнле ирӗк шухӑша та патша тарҫисем ним шеллемесӗр тапта-тапта пусарнӑ. Халӑхшӑн, малта пыракан вырӑс ҫыннисемшӗн сывлама та сывлӑш ҫук пек туйӑннӑ. Ҫак асаплӑ тапхӑрта ҫырма пуҫланӑ ӗнтӗ Лермонтов хӑйӗн сӑвви-юррисене. Вӑл, Белинский каларӗш, «этем ӑраскалӗпе тивӗҫлӗхӗ ҫинчен» пӗтӗм чунчӗрипе асапланса шухӑшланӑ. Вӑл Тӑван ҫӗршыва, халӑха юратнӑ, анчах вӗсем пусмӑрта пӑчӑхса пурӑнни унӑн чунне питӗ шалтан ыраттарнӑ, кӑмӑлне хурлантарнӑ. Патша тытӑмне хирӗҫ ун чӗринче хаяр ҫилӗ вӗресе тӑнӑ, патша кил-ҫурчӗ таврашӗнчи «кӑвак мундирлӗ» чунсӑр ҫынсене вӑл «тимӗр сӑвӑпа» питленӗ. Патша йыттисем аслӑ Пушкина вӗлернӗ хыҫҫӑн Лермонтов, ҫав чуниллисене питлесе, «Поэт вилӗмӗ» ятлӑ сӑвӑ ҫырнӑ. Унта вӑл «трон умӗнчи киревсӗр ушкӑна» хаяррӑн ылханнӑ.

Паллах, ҫав сӑвӑ ун чухне пичетленсе тухма пултарайман, ӑна ҫынсем пӗр-пӗринчен ҫыра-ҫыра илнӗ, ҫапла май вӑл пиншер экземплярӑн саланнӑ. Такӑшӗ ҫав сӑвӑ ҫине «революци тума йыхӑрни» тесе ҫырса хунӑ та патша патне ярса панӑ. Лермонтова вара малтан арестленӗ, унтан—пуҫӗпех пӗттӗр тесе—Кавказри вӑрҫа янӑ. Кунта вӑл ссылкӑри декабристсемпе тӗл пулнӑ, вӗсенчен пӗринпе—А. И. Одоевский поэтпа—сывӑххӑн туслашнӑ. Кавказра пурӑннӑ чухне вӑл «Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юррине» ҫырса пӗтернӗ, «Мцыри» поэмипе «Пирӗн вӑхӑтри герой» романӗ валли материалсем хатӗрленӗ.

Ҫак ссылкӑра М. Ю. Лермонтов нумаях пурӑнман. Пуян кукамӑшӗ Арсеньева тӑрӑшнипе тата В. А. Жуковский пулӑшнипе Петербурга таврӑннӑ. Ҫак вӑхӑтра вӑл питех те нумай ҫырнӑ. «Отечественные записки» журналта унӑн «Поэт», «Русалка», «Шухӑш», «Терек парнисем», «А. И. Одоевские асӑнса», «Сывлӑш карапӗ» тата ытти нумай сӑввисемпе «Пирӗн вӑхӑтри герой» романӑн сыпӑкӗсем пичетленсе тухнӑ. Лермонтов паллӑ поэт пулса тӑнӑ.

Анчах поэта патша таврашӗнчи ҫынсем канӑҫ паман. Тӑшмансем ӑна Франци посланникӗн ывӑлӗпе Барантпа хирӗҫтерсе янӑ, Лермонтовӑн, ҫав вӑхӑтри йӗркесем тӑрӑх, ирӗксӗрех дуэле тухма тивнӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн поэта татах арестленӗ те тепӗр хут Кавказа—ҫапӑҫакан ҫара ӑсатнӑ. Тӑшмансем ҫулӑм чӗреллӗ поэта мӗнле те пулин пӗтерес тесе тӑрӑшнӑ. Татах дуэль. 1841 ҫулхи июлӗн 15-мӗшӗнче тӑшман пули М. Ю. Лермонтов кун-ҫулне улталан татнӑ.

Питӗ ҫамрӑкла тапма чарӑннӑ поэтӑн хӗрӳллӗ чӗри. Анчах вӑл ҫырса хӑварнӑ произведенисенчи вут-ҫулӑма нимӗнле тӑшман та сӳнтерейменӗ, сӳнтерес те ҫук.

Вырӑс литературин историйӗнче Лермонтов творчестви питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл, Белинский каларӗш,—«пирӗн обществӑн историлле аталанӑвӗнчи пачах та ҫӗнӗ сыпӑк». Унӑн произведенийӗсенче XIX-мӗш ӗмӗрӗн 30-мӗш ҫулӗсенчи малта пыракан вырӑс ҫыннисен шухӑш-кӑмӑлӗсем туллин те уҫҫӑн палӑрса тӑраҫҫӗ. Тискер реакци саманинче Лермонтов политикӑлла пусмӑра хирӗҫ хӑюллӑн ҫырнӑ, крепӑсла-самодержавилле йӗркесене питленӗ, ҫав йӗркесене хирӗҫ кӗрешме чӗннӗ. Добролюбов каларӗш, вӑл «халӑхра ҫеҫ ҫӑлӑнӑҫ курнӑ». Историлле ҫӗнӗ тапхӑрта Лермонтов хӑйӗн творчестипе декабристсен ӗҫне малалла туса пынӑ, 60-мӗш ҫулсенчи революцилле демократсем валли ҫул хатӗрленӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ аслӑ революционер-демократсем Чернышевскипе Добролюбов Лермонтовӑн поэзине пӗтӗм чун-чӗререн юратнӑ, вырӑс литературипе общество шухӑшне малалла аталантарас ӗҫре Лермонтов творчестви пысӑк вырӑн йышӑннине палӑртнӑ.

Вырӑссен каярахри писателӗсем Лермонтовран нумай вӗреннӗ. Лермонтов лирикинче обществӑлла-политикӑлла шухӑшсем поэтӑн хӑйӗн шухӑшӗсемпе таччӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫак ҫул вӑл, Пушкинран пуҫланнӑскер, Лермонтов урлӑ, Некрасовӑн гражданла лирики патне пырать.

Лермонтов хӑйӗн «Пирӗн вӑхӑтри герой» романӗпе Тургеневпа Л. Толстой романӗсем валли ҫул хывнӑ. «Тамань» авторӗнчен Чехов кӗске калавсем ҫырма вӗреннӗ.

Вырӑс писателӗсем кӑна мар, ҫӗршыври ытти халӑхсен писателӗсем те Лермонтовран сахал мар вӗреннӗ, халӗ те вӗренеҫҫӗ.

Эпир пӗлетпӗр—пирӗн Константин Иванов пултарулӑхне хавхалантарса яраканӗсенчен пӗри, Пушкин хыҫҫӑн, Лермонтов пулнӑ. Вӑл Лермонтовран шухӑш ҫивӗчлӗхне, сӑвӑ ӑсталӑхне вӗреннӗ. «Нарспи» авторӗ вырӑссен аслӑ поэчӗн «Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юррине», «Парӑс», «Тӗрме ҫынни», «Хумсемпе ҫынсем», «Пурнӑҫ курки», «Тусен тӑррисем», «Чул ту», «Пирӗшти» сӑввисене епле ӑста та илемлӗ куҫарнинчен эпир паян кун та тӗлӗнетпӗр, хамӑр поэтӑмӑршӑн, ун ӑсталӑхӗшӗн хӗпӗртетпӗр. Вӗсене пирӗн чӑваш халӑхӗ аллӑ ҫула яхӑн ӗнтӗ хӑйӗн тӑван чӗлхипе савӑнса вулать.

М. Ю. Лермонтов сӑввисене хальхи поэтсем те чылай куҫарнӑ. Вӗсенчен уйрӑмах Яков Ухсай тата Иван Ивник куҫарнӑ «Мцыри» поэмӑна, Стихван Шавлы куҫарнӑ «Шухӑш», «Поэт», «Кинжал», «Ыйткалакан» сӑвӑсене палӑртмалла.

Ҫавӑн пекех Лермонтовӑн «Пирӗн вӑхӑтри герой» ятлӑ чӑвашла куҫарнӑ романӗ те пирӗн тӑван литературӑн ылтӑн фондне кӗчӗ.

Аслӑ вырӑс поэчӗн творчестви пире тӑван ҫӗршывпа халӑха юратма, хамӑр ҫӗршывӑн чӑн-чӑн патриочӗсем пулма, халӑх ӗҫӗшӗн, унӑн телейӗ те ҫутӑ малашлӑхӗшӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешме, тӑван литература ӗҫне мӗнпур чун-чӗререн туса пыма вӗрентет.

М. Ю. Лермонтов ҫуралнӑранпа 140 ҫул ҫитнине пирӗн ҫӗршыври мӗнпур халӑхсем чысласа палӑртрӗҫ.

---

## М. Ю. ЛЕРМОНТОВ

***

Мускав! Мускав!.. ывӑлу пек сана
Чӑн вырӑс чунӑмпа ҫунса саватӑп!
Саватӑп авалхи таса сӑнна,
Савап мӑнаҫлӑ Кремль-улӑпа та.
Ҫук, кӑлӑхах сӑхланчӗ ют хӑна,—
Ана никам та ҫакӑнта чӗнменччӗ,—
Санпа вӑйне виҫсе пӑхма сӗмленчӗ;
Сана, чӑн аслӑ вырӑс паттӑрне,
Шут тытрӗ вӑл улталӑн пӗтерме.
Чӗтрентӗн эс, анчах вӑл ӳкрӗ шавлӑн!
Ҫаплах эс чӗрӗ, ӗмӗрех мухтавлӑ.

***

Эс чӗрӗ!.. Сан кашни-пӗр чуланта—
Пур иртнӗ ӑрусен халал-тивлечӗ.
Эп башня хӳттинче, ыр сулхӑнта,
Ларattӑмччӗ, кӗрхи хӗвел ҫиҫетчӗ
Хӳме ҫинчи мӑкланнӑ вырӑнта.
Карниз айне пытаннӑ йӑваран ав
Вӗҫсе тухаҫҫӗ чӗкеҫсем вӑр-варрӑн,
Асӑрхамаҫҫӗ ҫӗр ҫинчи ҫынна.
Анчах вӗсем ман ҫулӑмлӑ чуна
Хӑйсен пурнӑҫӗпе ӑмсантараҫҫӗ,
Ирӗклӗхе хӗрӳллӗн шантараҫҫӗ.

**А. Эсхель** куҫарнӑ.

*ПИСАТЕЛЬСЕН ПĔТĔМ СОЮЗРИ ИККĔМĔШ СЪЕЗЧĔ УМĔН*

# ЧĂВАШ СОВЕТ ЛИТЕРАТУРИНЧИ КРИТИКА ШАЙĔ ÇИНЧЕН

## *Пĕрремĕш статья*

Пирĕн илемлĕ литературăри критика çинчен яланах: вăл вăйсăр, çавăнпа та писательсене пулăшаймасть, çул кăтартса параймасть, теççĕ. Çак сăмахсене вăрççăчен те калатчĕç, халĕ те калаççĕ.

Пирĕн литература критики чăнахах та çавăн пек вăйсăр-ши? Вăйсăр пулсан, вăл мĕнрен килет-ши? Ăна мĕнле вăйлатмалла?

Чи малтан çакна калас пулать: илемлĕ литература пулмасан, литература критики те пулмасть; анчах илемлĕ литература яланах литература критикинчен малтанрах пуçланса каять; илемлĕ литература аталанма тытăнсан, вара литература критики те аталанма пуçлать; литература критики уралanса çитсен, литературăн ытти жанрĕсене пулăшма тытăнать, унăн витĕмĕ (влиянийĕ) те ÿсет. Илемлĕ литературăна пулăшма вăй çитерекен критика, паллах, пĕр çул, икĕ çул, пилĕк çул хушшинче... аталанса çитме пултараймасть, мĕншĕн тесен çак вăхăт литературăшăн та, критикăшăн та сахал,—вĕсем иккĕшĕ те хунав пек çеç пулма пултараççĕ. Анчах пирĕн писательсем литературăра пилĕк çул кăна мар, вунă çул, çирĕм çул, вăтăр çул ĕçлеççĕ ĕнтĕ.

Чăвашсен революциччен литературинче Константин Иванов пулнă. Вăл хăйĕн таланчĕпе пурне те тĕлĕнтернĕ. Çавăнпа та вăл пирĕн вăхăтри саманана çитрĕ, хальхи поэтсемпе пĕрле малалла утать. Çапла ĕнтĕ, çакă вăл чăваш поэзийĕн паха традицийĕ сывă пулни çинчен калать. Ку традицие хальхи поэтсем, çĕнĕ саманара тарăнлатса, сарса, пуянлатса пыраççĕ. Эпир ку тĕлĕшпе телейлĕ. Анчах критика тĕлĕшпе вара пирĕн ун пек традици çук, тесен те йăнăш пулмĕ. Критика, тĕрĕссипе каласан, совет саманинче çеç аталанма тытăнчĕ. Çак енчен пăхсан, вăл ытла та çамрăк-ха, унăн сасси те витĕмлех мар-ха. Çапах та вăл телейлĕ литература критики, мĕншĕн тесен вăл ирĕклĕ вăхăтра, ирĕклĕ çĕршывра ÿсет, ăна пурте пулăшаççĕ, пурте ырă сунаççĕ, хавасланатараççĕ. Ăна партипе халăх хăват парса тăрать, унăн никĕсĕ—марксизм-ленинизм философийĕ.

Совет çĕршывĕнче литература ĕçĕ пĕтĕм халăх ĕçĕ, парти ĕçĕ пулса тăчĕ; совет литератури халăх пурнăçĕпе, халăх интересĕпе, государство интересĕпе пурăнать; унăн урăх интерессем çук, тет парти. Çак сăмахсенче пĕтĕм совет литературин, унăн уйрăм жанрĕсен—прозăн, поэзин, драматургин, критикăн задачисене палăртса панă. Чăваш писателĕсем те çак задачăсене ăнланаççĕ, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн чунчĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ. Анчах пĕрисем лайăхрах, теприсем начартарах ĕçлеççĕ. Пытармăпăр: вăйсăртарах ĕçлекенсем шутне, чи малтан, критиксем кĕреççĕ. Вĕсен пĕр енчен (кăна эпир каларăмăр ĕнтĕ)—хамăрăн нацилле литературăра, чăваш литературинче çаплах-ха пуян традици, аллăшар çул хушши çирĕпленсе пынă традици, критика сăмахĕн традицийĕ çукпа пĕрех; тепĕр енчен—вăл аслă вырăс литературин классикла критикин традицийĕсене çителĕклĕ вĕренсе çитмен; виççĕмĕшĕнчен—унăн теори тĕлĕшĕнчи пĕтĕмĕшле шайĕ калама çук пĕчĕккĕ, питех те ансăр. Критиксем нумайăшĕ пурнăçа çителĕклĕ пĕлмеççĕ, иртнĕ пурнăçа та, хальхи пурнăçа та кирлĕ таран тĕпчесе вĕренмеççĕ. Хăшĕсем Белинский, Чернышевский, Добролюбов ячĕсене асăнкалаççĕ, анчах вĕсен кĕнекисене, Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин произведенийĕсене сахалтарах вулаççĕ, çине тăрсах, тĕплĕн вĕренмен. Çавăнпа та ун пек критиксем хăш чухне япăх произведенисене ырлаççĕ, лайăххисене хурлаççĕ. Теприсен ĕçĕнче çакăн пек те пулкалать: ир çинче вĕсем пĕр шухăшпа, каçпа тепĕр шухăшпа пурăнаççĕ. Пĕр талăка та пулин çитмен шухăшпа критик пулма çуккине вĕсем чухласа илеймеççĕ.

Пирĕн чылай критиксем, шел те ĕнтĕ, пурнăçра, литературăра çĕннине, малта пыраканнине курсах каймаççĕ, çавăн пекех тата вĕсем киввине, юрăхсăррине асăрхамаççĕ. Критиксен задачи—çĕннине пулăшасси, çĕннишĕн кĕрешесси, вĕсен задачи—киввине, юрăхсăррине питлесси, ăна хирĕç пĕтĕм вăйпа кĕрешесси, анчах вĕсем çĕннине те, киввине те курмаççĕ пулсан, хăйсен задачине мĕнле майпа пурнăçа кĕртсе пыччăр-ха? Мĕнле майпа литература произведенийĕсем çинчен татăклă сăмах калатчăр-ха? Мĕнле майпа писательсене пулăшчăр-ха? Мĕнле майпа халăх хушшине тĕрĕс шухăш сарччăр-ха?..

Литература критикин пĕрремĕш тивĕçĕ—пурнăçа тĕрĕс кăтартса паракан произведенисемшĕн, чăннипех те паха, илемлĕ произведенисемшĕн ырми-канми кĕрешесси, совет литературишĕн ют шухăшсемпе «теорисене» çапса аркатасси, литературăн, эстетикăн марксистла-ленинла теорине пропагандăласси, ăна малалла аталантарасси пулса тăрать.

Пирĕн чăваш совет литературинчи критика хăйĕн задачине мĕнле пурнăçа кĕртсе пырать-ха?

Юлашки çулсем хушшинче вăл мĕнле ĕçленине, мĕнле аталаннине илсе пăхсан, эпир тÿрех çакăн пек калама пултаратпăр: пирĕн литература критики çителĕксĕр ĕçлет, вăраххăн аталанать, литературăн ытти жанрĕсене çитсе пыраймасть. Çакна «Ялав» журналта, «Тăван Атăл» альманахра, хаçатсенче пичетленнĕ статьясенчи вуншар та çирĕмшер тĕслĕхрен курма пулать.

Иртнĕ тапхăрта пирĕн литературăра ытларах сăвăсемпе поэмăсем çыратчĕç, урăхла каласан, поэзи пысăкрах вырăн йышăнса тăратчĕ. Çавăнпа та критиксем те ытларах поэзи ыйтăвĕсем, сăвăсемпе поэмăсем çинчен çыратчĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн пысăк произведенисем çырнă прозаиксем, поэтсем, драматургсем пур. Литературăри жанрсем пурте аталанса çитрĕç, темелле. Поэзи вăрманĕ лайăх ÿсет, проза вăрманĕ те кашлать: унта паттăр юмансем те, хитре хурăнсем те, хурамапа çăкасем те, чăрăшпа хырсем те пур. Пысăк вăрманта тĕрлĕ йывăç—тĕрлĕ çемĕ, тĕрлĕ юрă... Социализмла литература—вăл пуян литература, нумай писательсен, тĕрлĕ талантсен ĕçĕ.

Çакна май литература критикин ĕçĕ те нумайланчĕ, унăн умне тарăнрах, пысăкрах задачăсем тухса тăчĕç. Унăн халĕ поэмăсем çинчен, романсемпе повеçсем, драмăсем çинчен çырмалла, писательсен творчестви уйрăмлăхĕсене кăтартса памалла, тĕпчемелле, вĕренмелле. хак памалла, витĕмлĕрех çырмалла.

Юлашки вăхăтра пирĕн проза çинчен темиçе пысăк статья пичетленсе тухрĕ.

... «Тăван Атăл» альманахăн 42-мĕш кĕнекинче 1952 çулта В. Канюковăн «Д. В. Исаев (Авраль) произведенийĕсенчи проблемăсем» ятлă статьи тухрĕ. Ку статья Д. Исаев творчестви çинчен çырнă пысăкрах статьясенчен пĕри тесе калас пулать. Унта автор, тĕпрен илсен, икĕ проблема пирки сăмах хускатать: пĕри—социализмла экономикăшăн пынă кĕрешÿре çĕнĕ çын ÿссе аталанни; çак ыйтăва пирĕн литературăра Д. Исаев чăнах та пуринчен малтан сăнласа кăтартнă; ку проблема, автор шучĕпе, Исаевăн пур произведенийĕсенче те палăрса тăрать, вăл Исаев Мĕтри творчествин чи паха енĕ (136 стр.); тепĕр проблеми—уйрăм çынпа общество хушшинчи çыхăну.

Критик, малалла, Д. Исаев произведенийĕсенче большевик сăнарĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине тĕпчет. «Вĕсем хастар чĕреллĕ, çирĕп кăмăллă çынсем»—çакăн пек вĕсен сăнарĕсем.

В. Канюков статьи, çиелтентерех çырнă пулин те, усăллă статья: автор çав асăннă «проблемăсене» тĕпчеме тăрăшнине, вĕсене творчествăлла çутатса парасшăн пулнине эпир уççăнах куратпăр.

Д. Исаев, калавсемсĕр пуçне, критикăлла статьясем те нумай çырнă. Анчах вăл мĕнле критик пулнине Канюков тĕпчемен, пĕрик сăмах каланипех ирттерсе янă. Д. Исаевăн хăшпĕр ыйтусем тĕлĕшпе йăнăшсем те пулнă, анчах çак хастар критик-коммунист чăваш литературишĕн паха ĕç тунă, чăваш литературин историне ырă ятпа кĕрсе юлнă.

Пирĕн талантлă прозаиксенчен пĕри, чăваш литературинче Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн палăрнă писатель Александр Артемьев, пĕр-ик çул каярах, хăшпĕр çамрăк писательсен калавĕсене тишкерсе тухса, «Калавсем çинчен» ятлă статья çырчĕ («Ялав», 12-мĕш №, 1952 ç.). Паха статья. Ăна пысăк интереспа вулатăн. Унăн чĕлхи те лайăх, илемлĕ. Автор унта типлăх (типичность) ыйтăвне лартать, ăна ăнлантарса пама тăрăшать. Пуринчен ытла ку ыйтăва вăл В. Садай калавĕсене пăхса тухнă май хускатать (статьяра кунсăр пуçне тата А. Эсхель, П. Львов, Н. Мартынов, В. Бурнаевский калавĕсене пăхса тухнă). Анчах, пирĕн шутпа, çак ыйтăва вăл тĕплĕн çутатса парайман.

Акă Артемьев юлташ статьинчи хăшпĕр йĕркесем:

«Ăнланмалла, уçăмлă, кĕске çырма, пĕчĕк калаврах пысăк шухăша кăтартма, совет çыннисен **типлă енĕсене суйласа илме тăрăшни** — Садай произведенийĕсен чи паха енĕ».

«В. Садай пирĕн çынсен чи характерлă, **типлă енĕсене тĕрĕс илсе кăтартнă».**

«В. Садай çырса кăтартнă çынсем пурте — колхозниксем, пĕр пек социаллă, класлă условисенче ĕçлесе пурăнакан çынсен типлă йышĕнчен илнĕ представительсем. Писателĕн пĕр средари представительсенех тĕрлĕрен сăнарлă, кашни çынна хăйне евĕрлĕ, пĕр ăна çеç тивĕçлĕ енĕсене кăтартса памалла, çав хушăрах вĕсене **пурне те пĕрлештерсе тăракан тĕп паллине, вĕсен типлă сăнарне сыхласа хăвармалла**. В. Садай калавĕсенчи персонажсенче çав **типлă сăнар тени** уççăнах курăнать, çавăнпа эпир кашни персонаж урлă автор мĕн каласшăн пулнине тÿрех ăнланатпăр» (курсив пур çĕрте те пирĕн.—**В. Д.**).

Çак вăрăм цитатăсенчен чи малтан акă мĕн курăнать: В. Садай калавĕсем ытла та паха калавсем имĕш. Анчах Артемьев юлташ вĕсене кăлăхах ырламанши? Урăхла пулсан, мĕншĕн-ха вăл, малалла, çав калавсенех хурласа пăрахнă? В. Садай калавĕсенчи геройсене «пĕр типлă енĕ пĕтĕçтерсе тăрать, анчах вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме ытла та йывăр, вĕсен пĕрин те индивидуальнăй сăнлăхĕ çук: пурте пĕр калăпран тухнă пек, пĕр пĕтĕм сăнарлă. Персонажăн çынсен пысăк ушкăнĕшĕн характерлă сăнлăхĕ кăна пулсан, унăн индивидуальнăй сăнлăхĕ пачах çук пулсан—вăл вара художествăлла тулли образ мар, схема кăна».

Çапла ĕнтĕ, Артемьев юлташ В. Садайăн калавĕсене, юлашкинчен, хăех тиркесе тăкрĕ, типлăх ыйтăвне «яврĕ-явpĕ» те çавăнтах «сÿтсе пăрахрĕ».

Малалла автор, П. Львовăн «Кулине кинеми» ятлă калавне пăхса тухса, каллех типлăх ыйтăвне каларса тăрать. Кунта вăл Г. М. Маленков юлташăн сăмахне илсе калать:

«...Типично не только то, что наиболее часто встречается, но то, что с наибольшей полнотой и заостренностью выражает сущность данной социальной силы» (сăмах май, ку вырăна чăвашла çакăн пек куçарнăччĕ: «... Питĕ час-час тĕл пулаканнине çеç мар типичнă тесе шутламалла, пĕр-пĕр социаллă вăйăн тупсăмне мĕн туллинрех те çивĕчрех палăртать, çавă типичнă пулать»).[1]

Автор вывочĕ: «Калава партин XIX съезчĕ хыççăн пичетленĕ пулин те, авторпа редколлеги членĕсем çакна шута илмен».

Чăнах та, мĕншĕн шута илменши ăна вĕсем? Артемьев юлташăн статьине те партин XIX съезчĕ хыççăн пичетленĕ, анчах вĕсем, ку чухне те, çав сăмахсене темшĕн шута илмен. Пирĕн шутпа «авторпа редколлеги членĕсен» калава пичетленĕ чухне те, статьяна пичетленĕ чухне те вĕсене шута илмелле пулнă. Мĕншĕн тесен «Калавсем çинчен» статьяра типлăх ыйтăвне Артемьев юлташ

[1] Г. М. Маленков. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен партин XIX съездне туса панă отчетлă доклад. чăвашла издани, 1952 ç., 70 стр.

асăннă çеç, ăнлантарса нараймаи, вырăнĕ-вырăнĕпе аяккипе иртсе кайнă, тĕрĕсех çырайман.

Чăнах та, «В. Садай пирĕн сынсен чи характерлă, типлă енĕсене тĕрĕс илсе кăтартнă» тенине мĕнле ăнланмалла-ха? «Вĕсене пурне те пĕрлештерсе тăракан тĕп паллă...» тенине тата мĕнле ăнланмалла-ши? «Типлă сăнарсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме ытла та йывăр» тенине тĕрĕсрех ăнланса илесчĕ!

Тип—вăл тĕрлĕ çынсен характерлă паллисене, типлă енĕсене пĕр çĕре пухса пĕрлештерни пулать, тейĕç. Анчах вĕсене мĕнле «пухса пĕрлештермелле-ха»? Аçта пухса пĕрлештермелле?.. Тата ыт. те, тата ытти те.

Типлăх ыйтăвĕ—вăл эстетика ыйтăвĕсенчен пĕри, вăл—философи тĕлĕшпе лартнă ыйту.

В. И. Ленин çырнă «К вопросу о диалектике» ятлă произведенире çакăн пек вырăн пур: «Общее существует лишь в отдельном, через отдельное. Всякое отдельное есть (так или иначе) общее. Всякое общее есть (частичка или сторона или сущность) отдельного»[1].

Çак пуплевсенчи шухăша чăвашла çакăн пекрех каласа пама пулĕччĕ: пĕтĕмĕшли уйрăмминче çеç, уйрăммине пула (уйрăмми урлă) çеç пурăнать. Кашни уйрăмми, кашни уйрăм япала (кирек мĕнле пулсан та) пĕтĕмĕшли пулса тăрать. Кашни пĕтĕмĕшли уйрăммин (пайĕ е енĕ е тупсăмĕ) пулать.

Кунта пĕтĕмĕшле явленипе уйрăм явлени хушшинчи, уйрăм явленипе пĕтĕмĕшле явлени хушшинчи диалектикăлла çыхăну çинчен, диалектикăлла хутшăну çинчен сăмах пырать. Урăхла каласан, кунта уйрăм явлени пĕтĕмĕшлине, явлени тупсăмне палăртакан форма пулни курăнать.

Искусствăпа литературăри типлăх ыйтăвне илес пулсан çакăн пек калама пулать: типлăх (типическое)—вăл пĕтĕмĕшли, чи характерли, пулать, пĕр-паллă явление, явленисен суммине, çынсен пĕр-паллă ушкăнне, пĕр-паллă класа тивĕçли пулать, историлле явленин е процесăн тупсăмне, ăшчиккине палăртса тăраканни пулать. Çапла вара, тип туни, типизацилени—вăл чăн-пурнăçа (действительноçа), пĕтĕмĕшле явление уйрăм, конкретлă, индивидуаллă формăра пĕтĕмлетсе пани, историлле явленин чи паллă, чи характерлă енĕсене уйрăм, конкретлă, индивидуаллă формăра пĕтĕмлетсе пани пулса тăрать. Çапла ĕнтĕ, искусствăра пĕтĕмĕшлине, сăнарлине, типлине (типическое) уйрăмминче кăтартса параççĕ, вăл шăпах уйрăмминче пĕтĕçсе тăрать. Аса илер-ха, çакна май М. Ю. Лермонтовăн «Пирĕн вăхăтри герой» ятлă романĕн умсăмахĕнчи сăмахсене. «Ырă çынсем,—тет М. Ю. Лермонтов,—Пирĕн Вăхăтри Герой—вăл чăнах та портрет, анчах вăл пĕр çын портречĕ кăна мар: вăл хамăр вăхăтри пĕтĕм ăрăвăн çитменлĕхĕсене пĕтĕçтерекен, вĕсен аталанăвне кăтартакан портрет». Куратăр-и, кунта çав вăхăтри герой портретĕнче (пĕр çын портретĕнче) темиçе çын, пĕтĕм ăру портречĕ пĕрлешсе тăрать.

М. Горький питех те тĕрĕс каланă: «... Литератор, хăй паллакан пĕр лавкка хуçине, чиновнике, рабочие сăнласа парсан, пĕр çынăн тĕплĕрех фотоÿкерчĕкне çеç тума пултарать, анчах та вăл фотографи çеç пулать, унăн социалла воспитани паракан пĕлтерĕшĕ пулмасть, вăл пирĕн пĕлĕве çын тĕлĕшпе, пурнăç тĕлĕшпе сарма, тарăнлатма пире нимех те паманпа пĕрех.

Анчах писатель кашни 20—50, кашни çĕр лавкка хуçин, чиновникĕн, рабочин чи характерлăрах паллисене пухса пĕрлештерсен, вĕсен йăлисене, хăйсене мĕнле тыткаланине, вĕсен туйăмĕсене, ĕненĕвĕсене, мĕнле калаçнисене тата ыттине те пухса пĕр лавкка хуçинче, пĕр чиновникре, пĕр рабочире пĕрлештерсен, писатель вара çак меслетпе «тип» тăвать,—çакă вăл искусство пулать».

Тепĕр тĕслĕх чăваш литературинчен илер. С. В. Эльгерĕн «Хĕнхур айĕнче» поэминчи чухăн хресченсем патша влаçĕпе помещиксен пусмăрне тÿсеймесĕр вăрмана тараççĕ. Паллах, çавăн пек тарнисем ун чухне нумай пулнă, анчах ку вăл тарни çеç! Типлă явлени мар, унăн тупсăмĕ, тĕп туртăмĕ вăрмана тарса пытанасси пулман, вăрмана тарса кĕрешÿ çулĕ çине тăрасси пулнă. Çав вăхăтра çапла майпа кĕрешÿ çулĕ çине тухни вара шăпах пĕтĕмĕшле, типлă явлени пулса тăрать, ку вăл уйрăм, конкретлă явленире, Чаккапа пĕрле хресченсем вăрмана тарса кĕрешÿ çулĕ çине тăнинче палăрать; ку вăл çав пĕтĕмĕшле, типлă явленин конкретлă форми, унăн палăрăмĕ. Чакка—тип, ăна пĕтĕмлетсе тунă, типизациленĕ; Чаккара çĕршер хресчен палли, çĕршер хресчен сăнĕ, анчах çав вăхăтрах вăл уйрăм çын, конкретлă хресчен; вăл пĕтĕм чухăн хресченсен сăнарĕ, чухăн хресченсен паттăрлăхне кăтартса паракан пĕтĕмĕшле сăнар, анчах çав вăхăтрах вăл—вĕсен уйрăм сăнарĕ, вĕсен типĕ.

Çак енчен илсе пăхсан, В. Садай калавĕсенчи геройсем, тÿрех калас пулать, пулса çитмен, туса çитереймен сăнарсем çеç. Çавăнпа ĕнтĕ А. Артемьевăн шухăшĕсем «явнă çĕртех сÿтĕлсе кайнинчен» ним тĕлĕнмелли те çук. Типлăх ыйтăвне, паллах, начар калавсемпе, сăнласа çитереймен геройсемпе çутатса пама çук. Шăпах ĕнтĕ çакна сиссе, А. Артемьев, юлашкинчен, типлăх ыйтăвĕнчен пăрăнса каять те В. Садай калавĕсенчи геройсем «пурте пĕр калăпран тухнă пек» тесе хурать. Çапла вара, вăл малтарах мухтанисем, типлăх ыйтăвĕ çинчен каланисем, вырăнсăр пулса тăраççĕ, ахалех пĕтсе лараççĕ.

Типизацисĕр, типлăхсăр, тĕрĕссипе каласан, искусство пулмасть, искусство вăйĕ сăнлăхра (образра), унăн вăйĕ типизацире.

Типизаци—вăл явленисене идея тĕлĕшпе принципла хаклани, пĕр йышши шухăшсене хÿтĕлени, тепĕр йышши шухăшсене хирĕç кĕрешни пулать. Çавăнпа ĕнтĕ типичность ыйтăвĕ яланах политикăлла ыйту пулса тăрать.

Проза ыйтăвĕсем çинчен юлашки çулсенче çырнă статьясем пирки, литература критикин шайĕ пирки сăмах хускатнă май В. Алагерăн «Шурча тавврашĕнче» романа тишкерекен статьине асăнмасăр иртме çук. Ку статья та, ыттисемпе танлаштарсан, чĕлхе тĕлĕшпе те, произведение тĕпчес тĕлĕшпе те, лайăх статьясен шутне кĕрет. Автор чăваш литературине, чăваш историне пĕлет. Вăл хăйĕн сăмахĕсене, хăйĕн шухăшĕсене ахаль çеç каласа каймасть,—вĕсене мĕнле те пулин ыйтăва татса парас, мĕнле те пулин тезиса çирĕплетсе парас тесе калать. Произведенин лайăх енĕсене е çитменлĕхĕсене кăтартас тесе, вăл произведенирен тĕрлĕ тĕслĕхсем илет, вĕсене тишкерет, «шĕкĕлчет», хак парать. Акă, сăмахран, критик «Шурча тавврашĕнче» романăн пĕр йăнăш шухăшне мĕнле критиклет. «Шурча тавврашĕнче» романра, тет автор, эпир Хветĕр Уяр çут тĕнче аталанăвĕн законĕсене ăнланмасăр йăнăш патне пырса тухнине те курма пултаратпăр». Критик вара романăн çак вырăнне, Мариç пĕтни çинчен калаканскере, илсе кăтартать: «Çапла иртет çамрăк ĕмĕр—хĕр ĕмĕрĕ. Уншăн çут тĕнче ишĕлсе анать, хĕвел хупланать. Анчах чĕрĕ юлакансемшĕн нимĕн те улшăнмасть. Хуть те эсĕ çурăлса кай, макăрса вил, çĕр çул, пин çул каяллахи пекех, хĕвелĕ те хăй вăхăтĕнче тухать, çил те вĕрет, тулта та çав-çавах сивĕ, тĕттĕм...» (208 стр.).

Вулакансем хăйсемех кураççĕ: йăнăш шухăшлă вырăн ку. Анчах çакăн пек чухне критикăн цитата илнипех çырлахма юрамасть. Вулакансене çав йăнăш мĕнре пулнине кăтартса парас пулать. В. Алагер çак вырăна критиклет, çав йăнăша тишкерсе тухать. «Тÿрех калăпăр,—тет вăл,—марксистла диалектикăна хирĕç пыракан «теори» ку, метафизикла теори. Марксистла диалектика çак буржуалла теорие тахçанах çапса аркатнине эпир пурте лайăх пĕлсе тăратпăр. Марксизм вĕрентĕвĕ чи тĕрĕс вĕрентÿ иккенне халь ĕнтĕ эпир чăн-пурнăçра та яр уççăн куратпăр».

Чăнах та, «чĕрĕ юлакансемшĕн нимĕн те улшăнмасть», пурте «çĕр çул, пин çул каяллахи пекех...» юлать тени мĕнле теори-ха вăл? Çакă вăл ĕмĕрех пыракан, нихçан та улшăнман, вырăнтан вырăна кăна куçакан «пурнăç пуçламăшĕсем» çинчен калакан реакцилле теори пекрех «теори». Ăна буржуалла самана пуçланиччченех шутласа кăларнă, вăл тахçанавал («пин çул каяллах») пулнă, унăн авторĕсем, чăннипе каласан, буржуалла философи ĕмĕрĕ пуçланиччченех, чи авалхи ĕмĕрсенчех пурăннă, ăна авалхи философсен пĕр ушкăнĕ, пифагориецсем тенĕскерсем, шухăшласа кăларнă. Çав теорие ĕнтĕ чăнах та тахçанах çапса аркатнă, тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе хунă. Çапах та унăн халĕ те хутран-ситрен сисĕнкелекен палăрăмĕсене хирĕç, кирек мĕнле реакцилле теорие те хирĕç кĕрешнĕ пекех, хаяр кĕрешмелле.

В. Алагер тепĕр çĕрте «Шурча тавврашĕнче» романран çак вырăна илет: «Пуян та эсĕ, çĕршыв, чухăн та, аслă та эсĕ, хĕсĕк те, вышкайсăр вăйлă та эсĕ, вăйсăр та. Пуян, мĕншĕн тесен санăн пуласлăху çутă, ывăлу-хĕрÿсем вăйлă...»

Ку вырăна тишкерсе, критик çакăн пек каласа хурать: «Çуралнă çĕршыв пирки, вăхăтне шута илсен, çапла калани тĕрĕс. Ун пирки хăй вăхăтĕнче вырăссен аслă поэчĕ Н. А. Некрасов та çапла каланăччĕ. Анчах Н. А. Некрасов поэзийĕнче эпир çуралнă çĕршывăн чăннипех вăйлă ывăл-хĕрĕсене куратпăр. Хветĕр Уяр романĕнче... çукрах вĕсем». Апла пулсан, писателĕн çав сăмахĕсем çине, «вăхăтне шута илсе», пăхар-ха.

Н. А. Некрасов хăйĕн «Кому на Руси жить хорошо» ятлă поэминче иртнĕ ĕмĕрсенчи Россия çинчен:

Ты и убогая,
Ты и обильная,
Ты и могучая,
Ты и бессильная,
Матушка—Русь!—

тесе çырать. Ку сăмахсем—чăннипех те генилле сăмахсем. Вăл сăмахсемпе В. И. Ленинпа И. В. Сталин та революциччченхи Русь çинчен каланă чухне пĕрре кăна мар усă курнă.

Вăхăчĕ пирки сăмах пуçларăмăр пулсан, эпир акă мĕн куратпăр: Н. А. Некрасов хăйĕн поэмине 1863—1877 çулсенче çырнă; Хветĕр Уяр хăйĕн «Шурча тавврашĕнче» ятлă романне 1953 çулта çырса пĕтерсе пичетлесе кăларнă.

«Хăш вăхăтне шута илмелле» кунта?

«Кому на Руси жить хорошо» поэмăра Некрасов çав сăмахсене хăй вăхăтĕнчи Русь çинчен, унăн çĕршер çулхи историне асра тытса, каланă. «Шурча тавврашĕнче» романра хăçанхи Русь(?) çинчен сăмах пырать (тĕрĕссипе: Русь çинчен-и е Чăваш çĕршывĕ çинчен çеç-и?—Ку уçăмлă мар).

«Шурча тавврашĕнче» романра 1830—1840 çулсенчи Чăваш çĕршывне кăтартса панă. Çапла вара: «Пуян та эсĕ, чухăн та эсĕ...» тенĕ сăмахсене роман авторĕ Некрасовран «малтан каланă» пек тухать, анчах ăна, чăннипе илсен, çитмĕл ултă çул кайран, 1953 çулта çеç, каланă. Апла пулсан, роман авторĕ (ун хыççăн критик та) Некрасов сăмахĕсене, патша саманинчи пĕтĕм вырăс çĕршывĕ, государстви пирки каланăскерсене, чăваш çĕрĕ тĕлĕшпе тĕлли-паллисĕр, механистла каланине кăна куратпăр.

Роман авторĕн çав йĕркесене Русь пирки калама та, Чăваш çĕршывĕ пирки калама та нимле сăлтав та çук. Мĕншĕн тесен, чăннипе калас-тăк, «Шурча тавврашĕнче» романра пĕтĕм Русь çинчен çырман, Руçăн пĕр кĕтесĕ çинчен, шăпах Чăваш çĕршывĕ çинчен çырнă. Апла пулсан, вăл çав сăмахсене вĕсем мĕне пĕлтернине тавçăрса илмесĕр çырса хунă.

Н. А. Некрасов çырнă йĕркесен чăн-чăн историлле пĕлтерĕшне, социалла тупсăмне И. В. Сталинăн çак сăмахĕсем ăнлантарса параççĕ:

«Кивĕ Российăн историйĕ, сăмах май каласан, Российăна кая юлнăшăн пĕрмаях хĕненинче пулнă. Хĕненĕ монгол ханĕсем. Хĕненĕ туркă бекĕсем. Хĕненĕ швед феодалĕсем. Хĕненĕ Польшăпа Литва панĕсем. Хĕненĕ Англипе Франци капиталисчĕсем. Хĕненĕ Япони баронĕсем. Пурте хĕненĕ, кая юлнăшăн хĕненĕ. Çар ĕçĕнче кая юлнăшăн, культура ĕçĕнче кая юлнăшăн, государство ĕçĕнче кая юлнăшăн, промышленность ĕçĕнче кая юлнăшăн, ялхуçалăх ĕçĕнче кая юлнăшăн хĕненĕ. Хĕненĕ, мĕншĕн тесен çакă вăл тупăшлă пулнă, хирĕç тавăрмасăрах иртсе кайнă. Астăватăр-и революциччченхи поэт сăмахĕсене. «Эсĕ чухăн та, эсĕ пуян та, эсĕ хăватлă та, эсĕ вăйсăр та, аннеçĕм Русь». Çак ватă поэтăн сăмахĕсене аван вĕренсе илнĕ çав госпо-

[1] В. И. Ленин. Философские тетради. Издательство ЦК ВКП(б). 1934 ç., 327 стр.

дасем. Вĕсем çапла кала-кала хĕнене: «эсĕ пуян»—апла пулсан, сан шутран пуйма пулать. Вĕсем çапла кала-кала хĕнене: «эсĕ чухăн, эсĕ вăйсăр»—апла пулсан сана, хамăра хирĕç тавăрасран хăрамасăрах, хĕнесе çаратма пулать. Çавăн пек ĕнтĕ эксплуататорсен законĕ—кая юлнисене тата вăйсăррисене хĕнемелле. Капитализмăн кашкăрла законĕ. Эсĕ кая юлтăн, эсĕ вăйсăр—апла пулсан, эсĕ айăплă, апла пулсан, сана хĕнесе чура туса хума юрать. Эсĕ хăватлă—апла пулсан, эсĕ айăпсăр, апла пулсан, санран сыхланас пулать».[1]

Çапла, «Шурча таврашĕнче» романра Н. А. Некрасов сăмахĕсемпе усă курни, «вăхăтне шута илсен», нихăш енчен те вырăнлă мар, мĕншĕн тесен Чăваш çĕршывне аслă вырăс государствинчен уйăрса хăйне уйрăм «государство» пек туса кăтартни тĕрĕс мар. Чăваш çĕрĕ яланах вырăс государстви варринче пулнă. Н. А. Некрасов сăмахĕсенче, эпир ĕнтĕ куртăмăр, икĕ йышши тăшмансем çинчен, тулашрипе шалти тăшмансем çинчен, сăмах пырать (çакна эпир уйрăмах И. В. Сталин ăнлантарса панинчен куратпăр). Н. А. Некрасов сăмахĕсен историлле пĕлтерĕшне ансăрлатса урăхла ăнланни йăнăш.

Çапла ĕнтĕ, критикăн историе те, философие те, литературăна та, политикăна та пĕлес пулать,—унсăрăн хăш чухне тĕрĕс тени те тĕрĕс мар пулать.

В. Алагер статьи «Шурча таврашĕнче» романа писательсен союзĕнче сўтсе явнă хыççăн тухрĕ. Романа сўтсе явнă чухне хăшпĕр юлташсем, историлле роман çинчен сăмах хускатса, историлле роман мĕн иккенне палăртса пама тăрăшса пăхнăччĕ. В. Алагер, çав ыйтуран пăрăнса кайса, тĕрĕс туман, ăна пĕтĕçтерсе памаллах пулнă. Мĕншĕн тесен чăваш литературинче истори материалĕсем тăрăх çырнă произведенисем сахал мар. Сăмахран, С. В. Эльгер произведенийĕсем пурте тенĕпе пĕрех чăваш халăхĕн историйĕнчи пĕр-пĕр тапхăрпа çыхăнса тăраççĕ. Историлле романсемпе повеçсем çырас тĕлĕшпе тата А. Талвир, К. Турхан ĕçлет. Анчах мĕнле романа историлле роман теççĕ?—çакна эпир тĕп-тĕрĕс каласа паман-ха. Истори темипе çыракан писатель хăйĕн произведенийĕнче лартакан задачăсем—питех те ответлă задачăсем. Историлле произведенире пĕр-пеллă саманан (эпохăн) йăлисене çеç кăтартни çителĕксĕр, писателĕн çав саманана тĕплĕ пĕлсе çитмелле, унчухнехи тĕп социаллă вăйсене ăнланса илмелле, халăх вăй-хăвачĕн çăлкуçне кăтартса памалла, халăхăн нацилле характерĕ çав саманара мĕнле палăрса тăнине сăнласа кăтартмалла.

Французсен прогрессивлă писателĕ Анатоль Франс каланă тăрăх, романри тĕп проблемăна саманана тĕрĕс ăнланса илсе татса панă пулсан,—эпир историлле роман куратпăр; авторăн çав самана материал кăна пулса тăрать пулсан, çав самана вырăнне çăмăллăнах урăх самана илме пулать пулсан,—ун пек роман историлле роман мар.

Çак жанра, пирĕн шутпа, критиксен малашне вĕренсе, тĕпчесе тухмалла, историлле романсем çыракан писательсем историксен, тĕпчевçĕсен, историе пĕлекен критиксен сăмахне илтесшĕн, вĕсен шухăшĕсене пĕлесшĕн.

В. Алагер, «Шурча таврашĕнче» авторĕн ăсталăхĕ пирки сăмах хускатнă май, пĕр çĕрте: «автор ăсталăхĕ пирки иккĕленмĕпĕр», тесе калать, анчах вăл малалла темшĕн хăех иккĕленсе çырма тытăнать. Юлашкинчен вара, хăшпĕр çитменлĕхсене кăтартса панă хыççăн, акă мĕн каласа хурать: «Çавăнпа эпир Хветĕр Уяр чăваш совет литературинче «ăста прозаик, пысăк маçтăр» тенĕ сăмаха каялла илме те пултаратпăр», тет. Мĕншĕн çапла выляса каламалла, мĕншĕн пĕрре ярса пуссанах шухăшсене улăштармалла? Алагер кунта хăйпе хăй тавлашать. Кун пек «дискусси» роман авторне кирлĕ мар, вăл йĕкĕлтеме çеç пултарать. Авторшăн произведенин паха енĕсене, чăн-чăн çитменлĕхсене кăтартса пани «ăста» е «маçтăр», «ăста мар» е «маçтăр мар» теннчен пин хут усăллăрах. Пĕр писателĕн произведенийĕнчи çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани теприсемшĕн те усăллă. Анчах çитменлĕхсемпе йăнăшсене тĕрĕс кăтартса пама, вĕсем мĕн пирки сиксе тухнине, мĕнрен килнине ăнлантарса пама, писателе пулăшма наука çулĕпе, марксизм-ленинизм çулĕпе пыракан критика çеç пултарать.

Пирĕн критика — принципла критика пулмалла, унăн сасси витĕмлĕ, авторитетлă сасă пулмалла.

Литература критикин тĕп задачи—илемлĕ литература умне парти лартнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешесси, совет литературине малалла аталанса чечекленме активлă пулăшасси, киревсĕр шухăшсене, ют «теорисене» хирĕç ним шеллемесĕр кĕрешесси пулса тăрать.

**В. ДОЛГОВ.**

[1] И. В. Сталин. Ленинизм ыйтăвĕсем. Чăвашла изд., 1940 ç., 317—318 стр.

*Вулакансен çырăвĕсем*

# „ЭСĔ ПЫСĂК ĔНТĔ“

Александр Кăлканăн кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă «Эсĕ пысăк ĕнтĕ» ятлă сăвăсен сборникĕ пичетленсе тухрĕ.

Кĕнеке «Эсĕ пысăк ĕнтĕ» сăвăпа уçăлать. Унăн содержанийĕ çапла: ача, ирхине ирех тăрса, çăвăнать, тумланать, сада тухса чупать. Вăл пысăк ĕнтĕ, кĕçех шкула каять, çавăнпа та кĕркунне çитессе кĕтет.

**«Сан çине пăхса, чĕкеçĕм,**
**Аслă Ленин йăл кулать.**
**Ун пекех хастарлă пул эс,**
**Ленин хушнă пек вĕрен.**
**Сан валли вăл телей çулĕ**
**Уçса панă ĕмĕре»—**

**тесе вĕçлет А. Кăлкан сăвва. Кунта автор ачасене Ленин хушнă пек вĕренме, Тăван çĕршывшăн усăллă çын пулма, ĕмĕрех Ленин çулĕпе пыма чĕнет.**

Кĕнекери сăвăсем пысăках мар, анчах нумайăшĕ сюжетлă. Çăмăллăн вуланаççĕ, вĕсен кашнийĕнех çамрăк геройсем пур. Çавăнпа та вĕсене хаваслансах вулас килет.

Поэт уйрăмах ачасем шыва кĕни, вăрмана çырлана кайни, вăйăсем выляни, пулла çўрени çинчен илемлĕ çырать.

Акă «Пулăра» сăвăра Ванюкпа Санюк пулла каяççĕ. **Вĕсен, пулă тытма вĕренейменскерсен, малтанах ĕçĕ ăнмасть. «Сăрттан-тăсланкă» вĕсен пĕр вăлтине сĕтĕрсе каять. Ванюк тепĕр вăлтине шыва ярать. Туртать—туртса кăлараймасть. Вара:**

**«Икĕ пулăçă пĕр харăс**
**Ярса тытрĕç хулăран.**
**Пулă мар, хăва тымарĕ**
**Сикрĕ-тухрĕ ак шывран.**

— Улталарĕ чее пулă!
Вăл тымар тавра юри
Çиппине чăлхатнă пулнă;
Мăшкăл-çке ку çав тери!

Ачасем пĕр-пĕрне йăпатма тăрăшаççĕ. «Тепрехинче çавах лектерĕн»—тет Ванюка Санюк. Вĕсем çамрăк-ха: пур ĕçе те вĕренĕç.

Паллах, ачасем валли лайăх произведени çырас тесен, ачасене чунтан-чĕререн юратмалла, вĕсен психологине, ĕмĕчĕсене пĕлмелле. А. Кăлкан ку ыйтусене асра тытнă. Унăн сăввисем ачасен шухăшкăмăлĕпе, çунатлă ĕмĕчĕсемпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Акă, тĕслĕхрен, «Комбайн» сăвва илер. Уй-хирте комбайн ĕçлет. Унăн рульне Урине комсомолка тытса пырать. Пĕчĕк хĕрача ўссе çитсен хăйĕн аппăшĕ—Урине комсомолка пек комбайнер пулма ĕмĕтленет. Пурнăçра яланах çавăн пек: ачасем аслăраххисенчен вĕренсе пыраççĕ, вĕсем пек пулма ĕмĕтленеççĕ.

«Çунашка» сăвăра ача çĕмĕрĕлнĕ çунашкине аппăшĕ пулăшмасăрах юсать. Ку ăна пысăк савăнăç кўрет. Вăл малашне «пур ĕçе те çавнашкал хам тăвасчĕ», тет.

«Сталинград», «Ман пиччĕ», «Аслă Атăл» тата ытти сăвăсенче те эпир ачасен тавракурăмĕ ўссе пынине, вĕсем пурнăçра пысăккисемпе тан пыма тăрăшнине куратпăр. Ачасем Сталинград мĕнле хула иккенне, унта ГЭС тунине пĕлеççĕ. Е тата пĕчĕк ача, пиччĕшĕ шкултан «пиллĕк» паллă илсе килсен, чунтан савăнать. «Паттăр Яшша» сăвăра пĕчĕк Яшша чăнчăн паттăрла ĕç тăвать: поезда крушени пуласран çăлать.

Çак пĕчĕк çырура эпир ытти сăвăсем пирки сăмах хускатмăпăр. Тўрех те ачасем калас пулать: вĕсене те ачасем юратса вулаççĕ, пăхмасăр калама вĕренеççĕ. Сборникри сăвăсем пурнăçа, ĕçчен халăха, Тăван çĕршыва юратма вĕрентеççĕ.

Ача-пăчасем ку кĕнекене хапăл туса йышăнĕç. Вĕсем поэта малашне те çакăн пек паха сăвăсем çырма ырă сунаççĕ.

**Михаил ИЛЬИН.**

# „ÇУЛТАН ПĂРĂНСАН“

**«Ялав» журналăн 6-мĕш номерĕнче В. Алендейĕн «Çултан пăрăнсан» ятлă калавĕ пичетленсе тухрĕ.**

Ку калава вулама та, ăнланма та çăмăл. Анчах, тўрех калас пулать, калавăн çитменлĕхĕсем те чылай. Тĕслĕхрен: кам ĕнентĕрха икĕ ача ашшĕ пулнă вăйпитти Çинахвун çĕр хута вăйă каччисенчен тарса çўренине? Вăл. Варвари патне кайса, «çулран пăрăнчĕ» пулсан, вăтанать-ши çамрăксен куç умне курăнма? Вăтансан, Униççе карчăк пек хĕрарăмсен хаяр чĕлхисенчен хăраса, Варвари патне урăх çўремен те пулĕччĕ. Варвари арçын кăмăлне çавăрма пултарни калаврa курăнмасть. Çавăнпа та Çинахвун ун патне киле кĕнине ĕненме йывăр.

В. Алендей Варвари йышши хĕрарăмсене питлеме шутланă. Анчах вăл хăйĕн умне лартнă тĕллеве пурнăçлайман. Варварие айăплас вырăнне Çинахвун ытларах айăплă пулса тухнă.

Юлашкинчен пире, вулакансене, автор калава васкаса та ĕненмелле мар вĕçлени тĕлĕнтерет. Çинахвун Варвари патĕнчен мĕнле майпа уйрăлса килнине тата вĕсем мĕнле пурăннине те В. Алендей кăтартмасть. Тен, Варвари патне Çинахвун пĕрре çеç кайнă? Килтен кайса, çемйине пăрахса пурăннă Çинахвуна арăмĕ пĕр сăмах та каламасть, шарламасăрах йышăнать. «Çулран пăрăнмастăп урăх»,—тет Çинахвун арăмне. Анчах Çинахвуна пирĕн ĕненес килмест.

Калавсене тарăнрах шухăшлă, ĕненмелле çырма ыйтатпăр.

**Ольга Савандеева,**
**Анастасия Константинова,**
**Надежда Владимирова.**

# ЧĔЛĔМ КАВĔРЛИ КАЛАВĔСЕНЧЕН

## ÇУЛ ÇИНЧИ МЫСКАРАСЕМ

Эпĕ, пенсионер пулсан та, ĕççĕр пурăнма пултараймастăп. Кинĕмпе ывăлăм мана текех ĕçе кĕртесшĕн марччĕ те, эпĕ, вăйпитти пуçăмпа, вĕсен сăмахне хăлхана та чикмерĕм. Тăвата хутлă Пичет çуртне пытăм та хам ĕç ширани çинчен пĕлтертĕм.

— «Ялав» редакцинче комендант çук,—терĕ мана куçлăхлă çын,—коменданта кĕме килĕшместĕн-и?

Эпĕ халиччен йывăç каскаласа пурăннă пулсан та, журнал кăларнă çĕрте пулма тĕл килнĕшĕн тем пекех савăнтăм, çийĕнчех ĕçе кĕме килĕшрĕм. Тепĕр кунне редактор мана хăй патне чĕнсе илчĕ те çапла каларĕ:

— Пирĕн чÿрече кантăкĕсем йĕркеллех мар, куратăн пуль, татăк-кĕсĕксем кĕрте-кĕрте лартнă... Ним илемĕ те çук.

— Кантăкне ăна тупма пулĕ-ха, хуçалăх таварĕсем сутакан магазина каятăп та...

— Çук,—терĕ редактор, ман сăмаха пÿлсе.—Шупашкарта халь эсĕ тăр кăнтăрла хунарпа шырасан та кантăк тупаймастăн. Пĕрпĕр района каймăн-и?

Шухăшларăм-шухăшларăм та, аяккарахах—Етĕрнене каяс терĕм. Вăл Горькипе Шупашкар çулĕ çинче, унта кантăк пулмаллах.

Вара эпĕ çав кунах Етĕрнене каякан çул çине тухрăм та «сасăлама» пуçларăм. Пĕр машина иртсе кайрĕ, тепри... лартасшăнах мар пулас, чарăнмаççĕ. Акă, енчен-енне тайăлкаласа, пĕр грузовик çывхарать. Кузов çинче çын туллиех, пĕр çирĕммĕн те пулĕ. Алă тăратрăм—чарăнчĕ. Шоферĕ кабинăран пуçне кăларчĕ те: «Ăçталла?»—терĕ. «Етĕрнене»,—терĕм эпĕ. Вăл вара, ватă хур пек, мăйне кузов еннелле пăрчĕ те: «Ваççа, ларт!»—терĕ

Хайхи эпĕ, тăварне-мĕнне пăхмасăрах, хăвăртрах ларма васкарăм. Ларма-и кунта! Аран-аран хĕсĕнкелесе ура çинчех тăрса пытăм. Пĕр çухрăма яхăн кайсан, леш хайхи шоферĕ машинăна чарчĕ те, пасăрхи пекех кабинăран пуçне кăларса, кăшкăрчĕ:

— Ваççа, укçа пуçтар!

Хайхи, Ваççа текенни, укçа «пуçтарма» тытăнчĕ. Хăй те, шоферĕ те кăшт хĕрĕнкĕрех пулас, кăшкăра-кăшкăрах калаçаççĕ, укçине те, хăйсене кура мар, ытларах сăптăрасшăн. Çапла, тавлаша-тавлашах ĕçе майлаштаркаларăмăр та çула тапрантăмăр.

Чăнах та, шоферĕ ÿсĕртерех пулас çав, машинăна енчен-енне ывăтать кăна. Пассажирсем хăранипе ахлатса çеç пыраççĕ. Анчах Ваççа текенни пире чунтанах лăплантарма тăрăшать:

— Мĕн чĕтресе пыратăр? Ан хăрăр, машина халĕ кăна ремонтран тухнă, икĕ эрне юсарăмăр, икĕ пин ытла укçа пĕтертĕмĕр. Так-штă, шивă-тва çитетпĕр.

Мĕн тăвăн ĕнтĕ, тÿсес пулать. Етĕрнене çитеспе чул сарнă çул сулахай еннелле пăрăнса кĕрет: юпа çине «Советское» тесе çырса çапнă. Пирĕн машина çав çул çине пăрăнса кĕчĕ те каллех чарăнчĕ. Кабинăран тухнă шофер Ваççана команда пачĕ:

— Антар!

Пассажирсем шавлама пуçларĕç. Ваççа текенни каллех пире лăплантарать:

— Халь пурте анăр та, çакăнта пĕр çур сехет кĕтсе ларăр. Эпир столовăйне кĕрсе тухатпăр та сире малалла лартса каятпăр.

Ним тума та çук, антăмăр. Пĕр виççĕн-тăваттăн (шоферăн тусĕсем пулĕ) анмарĕç. Хайхи машина вĕçтере пачĕ райцентралла.

«Ман хамăн та райцентр магазинĕсене кĕрсе пăхас мар-и?»—шухăшласа илтĕм ăшăмра. Шутланă—тунă. Уттара патăм Советскине. Манпа пĕрле тата тепĕр юлташ пычĕ.

Çитессе çитрĕмĕр райцентра, анчах кăлăхах: магазинсем хупă—кăнтăр апат вăхăчĕ.

— Эпир те çисе тухмăпăр-и?—терĕ ман юлташ, столовăй тĕлне çитсен.—Пирĕн машина кунтах тăрать.

Кĕтĕмĕр. Вырнаçса лартăмăр, меню çине пăхатпăр.

— Мĕн çиетпĕр?—ыйтать манăн юлташ.

Менюра темиçе тĕрлĕ апат пур—хулари ресторанпа танлаштарма та пулать. Анчах турилккери купăста шÿрпине çиме тытăнсан—тĕлĕнсех кайрăмăр: шÿрпи сивĕнсе кайнă, шывак, тăварне те яман. Эпĕ турилккене сĕтел варринерех тĕртсе лартрăм, типĕ çăкăр чăмлама тытăнтăм. Юлташ та пĕр-икĕ кашăк сыпнă хыççăнах çиме пăрахрĕ:

— Столовăйне çын нумай çÿренипе иртĕнеççĕ пуль, хуранĕнчи яшки чакнине курса пĕрер витре шыв хушнă пулмалла,—тесе вăл официанткăна чĕнсе илчĕ.

— Куна çиме çук, рассольник парăр.

Официантка ăна хĕрхенчĕ пулмалла, ассăн сывласа илчĕ те пире акă мĕн пĕлтерчĕ:

— Рассольник ĕнер пĕçерни, ăна пушшех çиме çук.

— Апла пулсан, повара кунта чĕнĕр-ха.

Поварĕ, темиçе хут чĕнтерсен те, пирĕн пата тухмарĕ. Çак ним тутă каламан шывак яшкана эпир ăна хăйне çиме сĕнесшĕнччĕ те—пулаймарĕ. Менюра «тушоное мясо», тесе çырнă, какайне те Бобров повар чÿпĕк пек ним тутисĕр туса пачĕ. Тĕлĕнмелле! Ку вăхăтра мĕн тери паха продуктсем пур: ашĕ те, çăвĕ те, кĕрпи-макаронĕ те, купăсти-хăярĕ те!.. Бобров повар пеккисем ÿркеннипех столовăйсенче тутлă апат пĕçермеççĕ! Тарăхнипе эпир жалоба кĕнеки пама ыйтрăмăр—малашне апат-çимĕçе «О вкусной и здоровой пище» кĕнеке тăрăх пĕçерме хистесе хăварас терĕмĕр.

Официантка пире, лăпланма сĕнсе, çапла каларĕ:

— Пустуя хăтланатăр, жалоба кĕнекине никам та вуламасть.

Çапла вара, апат çиесси пулмарĕ. Юлташпа иксĕмĕр çимен апатшăнах укçа тÿлесе тухрăмăр та райцентрти магазинсем тăрăх çÿрерĕмĕр. Анчах маншăн кунта усă пулмарĕ—кантăк çук.

Çÿресе-çÿресе сехет те иртрĕ пулĕ, пирĕн шоферпа унăн компанийĕ «заправкăран» тин тухрĕç. Ку хутĕнче шофер чылаях «хунă» пулмалла, чĕлхи кăна мар, ури те палăрмаллах çыхланать. Эпир, шиклене-шиклене, çул хĕррине васкарăмăр.

...Шикленни тĕрĕсех пулчĕ иккен. Нумай та каймарăмăр, пирĕн машина яра пачĕ канав урлă хирелле, аран-аран чарăнчĕ—«тормоз пăсăлнă» иккен. «Юсанă» машинăна юсаса çур сехет ытла тăмалла пулчĕ.

Лартăмăр, каллех каятпăр. Сасартăк; хăлтăр-халтăр! хăртхарт! тутарчĕ машина. Стоп! Каллех юсамалла. Те втулка, те темле гайка тухса ÿкнĕ—кĕçех ÿпĕнеттĕмĕр пĕр çырмана. Усăр шоферпа унăн компанийĕ каллех юсама тытăнчĕç. Çĕрле пулса çитрĕ.

Çакăн пек мыскарасем курма тиврĕ пуçласа командировкăна кайсан.

Çапла вара, ÿсĕрсене пула çĕр хутах çуран танккама лекрĕ.

Юлашкинчен çакна калас килет. Вулакансем, эсир мĕнле шутлатăр, çав кахал поварпа ÿсĕр шофер пирĕн пурнăçăн ÿттирĕ çинчи çăпансем мар-и? Ун пек çăпансем сирĕн таврара та тĕл пулаççĕ-и, тен? Вĕсене çине тăрсах пĕтермелле. Çырса пĕлтерĕр. Манăн адрес çапла пулать: Шупашкар, Пичет çурчĕ, «Ялав» журнал редакцийĕн комендантне Чĕлĕм Кавĕрлине.




Критикĕ хăй мар, черкке сăмах илсен...

# Çăтăрçăсем

## *Юптару*

Александр КĂЛКАН

Шăши патне склада,
Тем пысăкăш портфель йăтса,
Йĕкехӳре кĕрет пырса:
— Эп, тусăм, сан пата.
Анчах самантлăха кăна.
— Килех, хисеплĕ ыр хăна,
Килех, ирт кунталла.
Кăмăл тусам:
Сума суса,
Çисе пăхсамччĕ çак пыла.
— Э-э, çу-ук!
Ĕçпе çӳренĕ чух—
Саккун хушмасть пире;
Тусcем те, ют та—пурпĕрех!
— Ĕçпе?
— Ĕçпе çав. Сан çинчен
Хутсем пыраççĕ пур енчен...
— Пĕлеп. Кушакпала
Юссем ĕнтĕ, паллах:
Ним канăç çук халь вĕсенчен.
Юрать-ха эсĕ хӳтĕлен.
Эс çи-ха, çи пылне...
— Эс хăваннех!
Пыл мĕн вăл? Пыл тесе,
Лараймăп капкăна лексе.
Усси те ун аш чухлĕ çук.
Е, калăпăр, сар çу...
— Эй, тусăм,—алла ал çăвать—
Хĕрхенĕп-ши ашпа çăва?
Пар портфельне,
Хурса ярам кăштах.—
«Хăна» нăш туртрĕ сăмсине,
Тӳрлетрĕ куçлăхне;
Вăл пулчĕ халь пăштах.
— Юрать... Эппин, сана
Куçарăпăр çĕн вырăна.
(Унчен хама сирпĕтмесен
Питех аванччĕ!)
Ну, сывă пул,—текелесе
Йĕкехӳре килне ăсанчĕ.



*Етĕрне районĕнчи Етĕрне ялĕнче ачасен çурчĕ пур. Çак çуртра пурăнакан пионерсем кăçал сул хĕррипе 70 çăка лартрĕç. Кӳршĕ ялçынни Петров Николай ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ те пĕр каçра 40 çăкана хуçса тăкнă.*



***Петров**: Вăрмана каймасăрах вутек çаппи тупрăм.*



*— Эсĕ мĕншĕн аннене пулăшма тухмастăн?*
*— Манăн урока хатĕрленмелле.*

*— Эсĕ мĕншĕн урока хатĕрленмен?*
*— Килте аннене пулăшмалла пулчĕ.*

Страницăри ӳкерчĕксене М. Жолотов художник турĕ.

ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ПЕРРЕМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз бригадирĕ А. Перепелкин.

ХУПЛАШКĂН ТАВАТТĂМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхозри Александра Северова, Нина Кульманова, Агния Автономова, Дария Карсанова Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинчен таврăннă хыççăн.

ЯЛАВ № 10 (106)
ОКТЯБРЬ—1954

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА СОВЕТСКИХ ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

Редколлегия: М. Романов (отв. редактор), В. Алагер, А. Артемьев, В. Долгов, И. Тукташ, Я. Ухсай, С. Шавлы.

Рукописи не возвращаются.

Тех. оформление И. Григорьева.

НТ 00077. Подписано к печати 19-Х-54 г. Объём 6,165 п. л. Заказ 2554. Тираж 4750 экз. Цена 2 руб.

Адрес редакции: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 1. Телеф. № 8—36.
Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

